К 84.09(=Чув)
К 66
Ч-44367

Гаврил КОРЕНЬКОВ



# СУЙЛАСА ИЛНИСЕМ

Национальная библиотека ЧР
4-044367

Эй, мăнтарăн пурнăçăм!
Усă курман сывлăшăм!
Шухăшласа пăх-ха эс:
Чей çырли пек мар-и эс?..

Чăт, тӳс, мĕскĕн чей çырли!
Çырлаллă пул... çын валли.
Эс те, чунăм, тĕреклен,
Усă кӳме ан ӳркен.

*Г.Кореньков*

ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ
ГУМАНИТАРНЫХ НАУК

# ГАВРИЛ КОРЕНЬКОВ

# ИЗБРАННОЕ

Стихи
Сказки
Поэмы

Чебоксары
2010

К84.09(=Чув)
К66

ЧӐВАШ ПАТШАЛӐХ ГУМАНИТАРИ
ӐСЛӐЛӐХӖСЕН ИНСТИТУЧӖ

# ГАВРИЛ
# КОРЕНЬКОВ

# СУЙЛАСА ИЛНИСЕМ

Сӑвӑсем
Юмахсем
Поэмӑсем

Шупашкар
2010

УДК 321.512.111
ББК 84 (2 Рос=Чув) 6-51 -52 я 444.2
К 66
84.09(=Чув)6-52

*Пичете Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн Ăслăлăх канашĕ çирĕплетнĕ*

Редакци ушкăнĕ:
***Г.А. Дегтярев, В.А. Ендеров, В.Г. Родионов, А.П. Хусанкай, Ю.В. Яковлев***

Рецензент: ***Ю.М. Артемьев***

Пухса йĕркелекенĕ, ум сăмахĕпе ăнлантарăвĕсене çыраканĕ ***Г.Ф. Юмарт***

**ГАВРИЛ КОРЕНЬКОВ. СУЙЛАСА ИЛНИСЕМ**: сăвăсем, юмахсем, поэмăсем. — Шупашкар: ЧПГĂИ, 2010. — 188 с.

Гаврил Кореньков (1884—1949) çырнисем уйрăм кĕнекен малтанхи хут пичетленеççĕ. Кĕнекене поэтăн сăввисемпе поэмисене, сăвăланă юмахĕсене пĕтĕмпе тенĕ пекех кĕртнĕ.

Проверено 8 СЕН 2017

Ч-44367

ISBN 978—5—87677—148—3

© Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2010

Национальная библиотека Чувашской Республики





## РЕДАКЦИРЕН

Гаврил Кореньковăн 1901—1926 çулсенче çырнă илемлĕ литература хайлавĕсемпе куçарăвĕсем малтанхи хут уйрăм кĕнекен пичетленсе тухаççĕ. Халиччен вĕсем тĕрлĕрен хаçат-журналта, вĕренӳпе ăслăлăх кĕнекисенче çапăннă. Автор хăй çырнисене пичете сĕнме васкаман. Патша саманинче кĕнеке таврашне харпăр хăй шучĕпе кăларма тивнĕ. 1919 çулта поэт хăйĕн икĕ пысăк хайлавне кĕнеке хальлĕн пичетлеме шут тытнă, анчах алçыру çухалнипе ку ĕç ăнăççăр вĕçленнĕ. Ун хыççăн сăвăç хăй çырнисене пухса кăларма пуçăнни паллă мар. Алçырусем тĕрлĕ çын аллине лексе сапаланни те çак ĕçе чăрмантарма пултарнă. Çитменнине, ун чухне интимлă лирика пысăк хисепре пулман. Шкул пуçлăхĕнче ĕçленĕ май Кореньковăн çĕнĕ сăвăсем çырма вăхăчĕ те юлмасть, унăн вĕренӳ кĕнекисем хатĕрлес ĕçе те хутшăнма тивет. 1959 çулта Макар Хури поэтăн алă айне лекнĕ хайлавĕсемпе куçарăвĕсене уйрăм кĕнекелĕх пухса хатĕрленĕ, анчах ăна та хапăл туса çул паман. Поэт ал çырăвĕсен пысăк пайĕ Киров облаçĕнче пурăннă Г.И. Комиссаров (Вантер) аллинче 1968 çулччenех упраннă (автор вĕсене 1920 çулсенчех pană). Ун хыççăн вĕсем Н.Г. Краснов аллине лекнĕ, халĕ Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивĕнче упранаççĕ. Кореньковăн хăй килĕнче юлнă алçырăвĕсене те унта 1980 çулта тин илсе пынă. Вĕсем тăрăх XX ĕмĕр пуçламăшĕнче поэт çĕр ытла сăвă, пилĕк поэмăпа сăвăланă ултă юмах çырса хăварни, вăл хăй вăхăтĕнче чи нумай та лайăх çыракансенчен пĕри пулни курăнать. Унăн пултарулăхĕ шухăшкăмăл енчен те пуян, илемлĕх тĕлĕшĕнчен те паха, хăйне евĕр. Çавăнпа та тăван поэзире хисеплĕ вырăн йышăнма тивĕçлĕ. Сăвăç куçару ĕçне те хастар хутшăннă.

Ку кӑларӑма Кореньковӑн сӑввисемпе поэмисене, сӑвӑланӑ юмахӗсемпе куҫарӑвӗсене пӗтӗмпе тенӗ пекех кӗртнӗ. Кӗртмесӗр хӑварнисен шучӗ нумай мар, унта хӑйне валли кӑна тесе ҫырнӑ хӑш-пӗр сӑввисене асӑнмалла. Поэмисемпе юмахӗсенче те намӑсла ӗҫсене натурализмла ҫырса кӑтартнисем тӗл пулаҫҫӗ, ун пек вырӑнсене кӗнекере кӗскетсе панӑ, тӑваткӑл хӑлӑпсем (скобкӑсем) хушшине илсе кӑтартнӑ. Кореньковӑн хӑш-пӗр ал ҫырӑвӗсем тӗрлӗ ҫӗрте, уйрӑм ҫынсенче упранса тӑни те паллӑ. Хальлӗхе вӗсемпе паллашма тӳр килмерӗ. Вӗсен йышӗнче ку кӗнекене кӗрейменнисем те пулма пултараҫҫӗ.

Кӗнекери текстсене жанрне кура тата хӑҫан ҫырнине шута илсе вырнаҫтарнӑ. Хӑш-пӗр хайлавсене хӑҫан ҫырнине алҫырура палӑртман, вӗсен вӑхӑтне тӑваткӑл хӑлӑпсем хушшинче ҫывхартса кӑтартнӑ. И.А. Крылов юптарӑвӗсене куҫарас ӗҫе Кореньков 1901 ҫултан тытӑнса 1928 ҫулччченех туса пынӑ, пӗрре куҫарса хунине кайран ҫӗнӗрен те куҫарнӑ, чылай чухне вӑхӑтне кӑтартса хӑварман, кунта вӗсене хӑҫан пичетленсе тухнине кура палӑртнӑ.

«Хушӑм» пайне Г.И. Комиссаровӑн «Г.А. Кореньков как поэт» статйине, вак-тӗвек тӗрлӗ материалсене тата асилӳсене кӗртнӗ. Вӗсем ҫыравҫӑ кун-ҫулӗпе пултарулӑхне лайӑхрах пӗлме пулӑшаҫҫӗ. Ӑнлантарусенче кашни хайлав мӗнле текст тӑрӑх пичетленнине кӑтартнӑ, хӑш-пӗрин малтанхи тӗслӗхӗсем ҫинчен пӗлтернӗ.

Автор хӑйӗн чылай ал ҫырӑвне 1901—1917 ҫулсенче тӑван ялта калаҫу чӗлхипе ҫырнӑ, ун чухнехи литература чӗлхине пӑхӑнман. Совет саманинче ҫырнӑ тата пичетленнӗ юптарусенче литература чӗлхине пӑхӑннӑ. Ҫыравҫӑ хӑй еткерне ятарласа пичете хатӗрлесе хӑварман, чӗлхине пӗрпеклетсе тухман. Алҫырури пекех хӑварни йывӑрлӑх кӳресрен кунта ӑна литература чӗлхипе килӗштерсе тӳрлетсе панӑ. Ку вӑл уйрӑмах фонетика диалектизмӗсене пырса тивет, лексика диалектизмӗсене ҫаплах хӑварнӑ («кунӗ-ҫӗрӗ», «ӳлмерен», «хыткам», «ӳттирна» т. ыт. те), кун йышши сӑмахсенчен хӑшӗ-пӗри рифма-састаш тӑвассипе те ҫыхӑннӑ. 1918 ҫулччченхи текстсене хӑҫан ҫырнине кивӗ стильпех кӑтартнӑ, ҫӗннипе ылмаштарман.

## МАЛТИ РЕТРИ СĂВĂÇ

ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш поэзийĕ «пĕтĕм сасăпа» калаçма тытăнать. Ăна вăй илме сăвăçсем чылайăн тăрăшаççĕ, тăван халăх сасси пулса Атăлçи халăхĕсен йышĕнче танлăн сăмах илеççĕ. Ун чухнехи хамăрăн чи паллă поэтăмăрсен — Тарас Кириллов, Константин Иванов, Николай Шупуççынни тата ыттисен ретĕнче Гаврил Коренькова та куратпăр. Анчах та çакă вăл юлашки тапхăрта кăна çапла курăнса кайрĕ. Унăн лайăххах та пĕлтерĕшлĕрех хайлавĕсем тинтерех çеç тĕрлĕ хаçат-журналсемпе кĕнекесенче пичетленчĕç. Тăван сăмахлăх кун-çулне тĕпчекенсем акă мĕн палăртрĕç: Г. Кореньков хăй çырнă сăвăсен, юмахсемпе поэмăсен тата куçарăвĕсен ăсталăхĕпе те, пĕлтерĕшĕпе те, шучĕпе те хăй вăхăтĕнче малти ретре пулнине ĕнентерчĕç. Чăваш сăвăçин пултарулăхĕ хамăр поэзине кӳршĕ халăхсен литературипе танлаштарса ырă ят илме те пуян еткер хăварнă. Чи малтан кунта, паллах, çыравçă хускатнă ыйтусен çивĕчлĕхĕпе ăсталăх хăйне евĕрлĕхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ахальтен мар тĕнчере палăрнă чăваш халăх поэчĕ Геннадий Айхи Г. Кореньков çырнисене хакласа çапла пĕлтерчĕ: «Каринкке Кавĕрлин поэзийĕ, унăн хăйне евĕрлĕхĕ, пирĕн куç умĕнче тенĕ пекех, халĕ çеç тĕлĕнтерсе, куçа шартса уçăлать. Чăннипех **парадокслă** поэзи! Каринкке — пирĕн лирикăри **пĕрремĕш модернçă**; пурнăçри çӳлтипе аялти шайсене чăрсăррăн, артистла хӳхĕмлĕхпе пĕрлештерсе, калама юраман япаласенчен ирĕклĕн, шӳтлĕ çăмăллăхпа чăн-чăн поэзи паллисем туса пирĕн поэзие вăл, тен, паянлăхăн паллисене те кĕртет! — тĕлĕнмелле, çакна тума тытăннин çĕрçуллăхне те палăртмалла пулать ĕнтĕ часах...» — терĕ[1].

[1] Г.Ф. Юмартăн килти архивĕ.

Г. Кореньков ытларах лирикăра тарăн йĕр хăварнă, унăн пысăкрах калăплă хайлавĕсем те халăхăмăр шăпипе илемлĕ шухăшлавĕ çинчен шухăша яраççĕ. Сăвăç пултарулăхĕ пирĕн пурнăçа ейӳ пек сарăлса кĕрет, ăна тĕплĕ хакласси — малашнехи ĕç. Кунта унăн кун-çулĕпе ĕçне-хĕлне пĕтĕмĕшле çапла пахаласа калама пултаратпăр.

* * *

Гаврил Алексеевич Кореньков (Каринкке Кавĕрли) 1884 çулхи мартăн 24-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе апрелĕн 5-мĕшĕнче) Чăваш Республикин Куславкка районĕнчи Кивĕ Тĕрлемесре çуралнă. Ялти пуçламăш шкулта пĕлӳ илнĕ хыççăн пулас поэт Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренет. Хăйĕн ĕмĕрне вăл тăван шкулта ĕçлесе ирттернĕ. 1949 çулхи мартăн 16-мĕшĕнче вилнĕ. Çамрăк ăрăва вĕрентсе ӳстерес тĕлĕшпе нумай çул хушши ĕçленĕшĕн ăна «РСФСР тава тивĕçлĕ учителĕ» хисеплĕ ят панă, Ленин орденĕпе чысланă.

Кореньков 1901—1916 çулсенче тăван поэзире чи нумай вăй хунă çынсенчен пĕри иккен: вăл çак тапхăрта çĕр ытла сăвă, пилĕк поэма татаултă сăвăланă юмах çырса хăварнă, вырăсларан та самай куçарнă. 1906—1907 çулсенче унăн икĕ сăвви тата вăл чăвашла куçарнă И. Крыловăн пилĕк юптарăвĕ «Хыпар» хаçатра пичетленеççĕ. Совет тапхăрĕнче вырăс юптаруçин хайлавĕсем пысăкрах ярăмсемпе «Шурăмпуç» тата «Ĕçлекенсен сасси» журналсенче, «Баснĕсем» кĕнекере (1944) тухнă. Шкул кĕнекисемпе тĕрлĕрен хрестомати-антологире чăваш поэчĕн «Хыпарта» кун курнă сăввисемпе куçарăвĕсем пичетленсе пыркаланă. 1922 çулта тепĕр сăвă çеç («Чей çырли») «Канаш» хаçатра çапăннă, авторне унта Каринкке Кавĕрли тесе кăтартнă (1906 çулхи алçырусенче Карикке Кавĕрли тесе кăтартни те пур). Çак вăхăталлах «Çутталла» кĕнекере унăн хăш-пĕр çĕнĕ куçарăвĕсем пичетленеççĕ.

Çиелтен пăхсан Кореньков кун-çулĕ лăпкăн иртнĕ пек курăнать. Анчах унăн терт-нуша та чылай тӳсме тивнĕ. Ачалăхра та, ватлăхра та йывăр чирлесе ирттерет. Ĕлĕк ашшĕ земство членĕ пулнăран тата хăй парти ретĕнче тăманран Коренькова пайтах сăмах тивнĕ, ăна хăй вăхăтĕнче репрессилеме те тăнă.

Сăвăçăн çырас хăнăхăвĕ, шухăш-кăмălĕ епле туптаннă-ха? Чи малтан кунта ăс парса пыни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пулас сăвăçăн ашшĕ Алексей Иванович Кореньков таврари паллă çын пулнă, земствăра нумай вăй хунă (сăмахран Кивĕ Тĕрлемесрен

Куславккана каякан ҫула вӑл тутарнӑ, чул сартарнӑ). Юман Мӗтри те ӑна «1905-мӗш ҫул» кӗнекере халӑх ӗҫне хастар хутшӑннӑ ҫын тесе асӑнать. Кавӗрлене вулама шӑпах ашшӗ вӗрентнӗ, ҫавӑнпа тавҫӑруллӑ ачана тӳрех пуҫламӑш шкулӑн иккӗмӗш класне йышӑнаҫҫӗ. Анчах кунта унӑн пысӑк йывӑрлӑх тӳссе ирттерме тивет: иккӗмӗш ҫулхине шкулти вӗрентекен нумай вӑхӑт чирлет, тепӗр ҫулхине хӑй ҫур ҫул хушши ӳпке чирӗпе аптӑрать. Ҫакна пула кунта Кавӗрле кирлӗ чухлӗ пӗлӳ илеймест.

Пулас поэтӑн ашшӗ пӗчӗклех — вун икӗ ҫултах — ялтан аякка ҫӳресе укҫа тупма хӑнӑхнӑ, ҫапла уксах ашшӗне хуҫалӑхра пулӑшса пынӑ. Пристаньре шыв тӑкакан матрос пулса ӗҫленӗ тапхӑрта, 1891—1892 ҫулсенче, вӑл Кавӗрлене те хӑй патне илсе каять. Вӗсем ҫулла Куславккара, хӗлле Тури Услонра пурӑнаҫҫӗ. Ҫак тапхӑр пӗчӗк ача асӗнче тарӑн йӗр хӑварать, тӗнчери тӗрлӗрен кӗнчелене курма хӑнӑхтарать. Хӑрушӑ выҫлӑха пула вилнӗ ҫынсем Атӑл ҫыранӗнче йышлӑ выртнине, холерӑпа чирлесе вилесрен хӑтарас тесе ашшӗ ӑна апат умӗн пӑрӑҫ эрехне черккепе ӗҫтернине Кавӗрле уйрӑмах лайӑх астуса юлать. Ҫакӑн пек самантсем сӑвӑҫа пурнӑҫ ҫине хӑюллӑрах, ҫивӗччӗнрех пӑхма вӗрентнӗ. Вӑл пӗчӗклех вырӑс чӗлхине хӑнӑха пуҫланӑ пулас. Ҫын хуйхи-суйхине ҫывӑхрах илсе ӗҫлесси те Кореньковӑн ҫавӑн чухнех аталаннӑ-тӑр.

Ӑс-хакӑлӑн тӗп пуянлӑхне Кореньков ҫапах та 1895—1903 ҫулсенче, Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗрентнӗ чухне, туяннӑ. Малтанхи икӗ вӗренӳ ҫулне унӑн кунти хӗр ачасен шкулӗнче ирттерме тивет, вара 1897 ҫулта тин арҫын ачасен класне куҫать. Хӗр ачасемпе пӗрле хатӗрленӳ класӗнче вӗренни ӑна пуҫламӑш шкулта илеймен пӗлӗве туянма пулӑшать, ҫавӑнпа та малашне вӑл лайӑх вӗренекенсен йышне кӗрет. Чӑваш ачисен аслӑ шкулӗнче литературӑпа музыка каҫӗсем тӑтӑш ирттернӗ. Ҫамрӑк Кавӗрле унта хутшӑнма юратать. Хӑй вӗреннӗ юлашки тапхӑрта кунта спектакльсем лартасси йӑлана кӗрет. Шкулти ҫывӑх тусӗ, кайран паллӑ тӗпчевҫӗ, культурӑпа ҫут ӗҫ ӗҫченӗ пулнӑ Гурий Комиссаров (Вантер) аса илнӗ тӑрӑх, ҫав спектакльсене Кореньков та хутшӑннӑ, вӑл пуҫарнипех 1901 ҫулта ҫамрӑк сӑвӑҫсен ушкӑнӗ («Компания юных пиитов») йӗркеленет, Кавӗрле литература вулавӗсем ирттерет, пӗр вӑхӑт алӑпа ҫырса журнал кӑлараҫҫӗ[2]. Ҫак хавхалану Пушкин вӗреннӗ

---

[2] ЧПГӐИ ӐА уйр., 391 упр. ед., 137—138 с.

лицейри пурнăçран тĕслĕх илнипе çĕкленнĕ. Кореньков малтан вырăсла сăвăсем çырса пăхать (шел, вĕсенчен хальлĕхе пĕри те тупăнман). Комиссаров, Чĕмпĕрте вĕреннĕ чухнех тĕрлĕ енчен пултарулăх кăтартма ĕлкĕрнĕскер, çав тапхăртах чăваш поэзиĕнче тĕрлĕ жанр тĕслĕхĕсене аталантарма тĕллев тытать, вырăспа тĕнче классикине нумай вулать, халăх сăмахлăхне пухать. Ăна курса Кореньков та ăмăртмалла литература ĕçĕнче хăй вăйне тĕрĕслесе пăхма тытăнать. Вырăс литературине кунта аслă шкулсенче пĕлӳ илнĕ пултаруллă çынсем вĕрентнĕ. Вĕсен çак ĕç-хĕлне, ун пĕлтерĕшне анлăн кăтартса паман-ха. Анчах Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çӳллĕ шайри пĕлӳ паракан шкул (хăйне евĕр университет) пулса тăни иккĕлентермест ĕнтĕ. Ахальтен мар кунта пĕлӳ илнĕ çамрăксем XX ĕмĕр пуçламăшĕнче халăх пурнăçĕнче палăраççĕ. Кореньковăн çуначĕсем те шăпах çак шкулта тĕрекленнĕ. Çакна пĕлсе тăни унăн пултарулăхне тĕплĕнрех ăнкарма пулăшать. Хальлĕхе çакăн çинчен пĕтĕмĕшле кăна калама тивет, сăвăç хăй ун çинчен сахал çырса хăварнă. Хăйĕн поэзири ĕçĕ-хĕлĕ епле пуçланни çинчен Кореньков çапла аса илет: «Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ чухне Пушкина, Лермонтова, Крылова каçса кайса вулаттăм, хам та сăвăсем çыркалаттăм (малтан — вырăсла, кайран вара — чăвашла). Ун чухне чăваш литератури аталанса ĕлкĕрменччĕ, çавăнпа та мана сăвăсем çырма çăмăлах марччĕ»[3]. Малалла поэт сăвă виçине тупма хĕн пулни çинчен пĕлтерет. Вăл силлабо-тоникăпа кĕвĕлеме хăтланса пăхать, анчах юлашкинчен халăхра анлă сарăлнă юрă виçине — çичĕ сыпăклăха суйласа илет. Хăй каланă тăрăх, вăл юрă-такмакăн çак виçинче (çичĕ сыпăклă силлабикăра) икĕ сыпăклă икĕ стопа тата виçĕ сыпăклă пĕр стопа палăрнине асăрхать те çавна пăхăнма тăрăшать. Поэт хăйĕн мĕнпур хайлавне тенĕ пек çакна шута илсе çырнă, вырăс поэзине те çав виçепех куçарать (ăна пăхăнман тĕслĕх питĕ сахал). Тăван халăх поэзийĕнчен вăл сăвă виçине кăна мар, юмах сюжечĕсене, сăнарĕсене те илет, халăх кулăшĕн мелĕсене те хăнăхать.

Ăсталăх идеалĕсем уншăн А. Пушкинпа И. Крылов пулни уççăнах курăнать. Ахальтен мар вăл вĕсене автобиографире те асăнать. Чăваш ятне çĕклекен ăста сăвăç Кореньковшăн Пушкин пек пулмалла: «Мĕншĕн пирĕн чăвашран Пушкин пекки пит сахал?» — тесе пăшăрханать вăл. Вырăссен аслă поэтне

[3] Автобиографи. ЧПГĂИ ĂА, V, 821, 4651 инв. №.

уйрăмах юратнă пирки вăл унăн поэзине чăвашла куçарать. Çакăнпа пĕрлех ĕмĕр тăршшĕпех тенĕ пекех Крылов юптарăвĕсене тапхăр-тапхăр куçарса çĕнетет. Кореньков чунĕнче (вăл çырнисенче те) лирик тата сатирик кăмăлĕ çураçуллă пĕрлешнĕ, çакă асăннă классиксенчен вĕренсе пынинчен те, хăйне çут çанталăк пӳрнинчен те килнĕ. Кун пек пахалăх тăван поэзире питĕ сахал тĕл пулать. Кореньков вырăс сăвăçисен чĕлхипе шухăшлавне, мелне те çамрăклах хăнăхать, ахальтен мар уçăмлă та яка, сăнарлă та пиçĕ чĕлхепе çырать. Тепĕр чухне çакă питĕ çăмăллăн, выля-кула пулса пынăнах туйăнать. Унăн сăлтавĕсем татах та пулĕ, анчах Пушкинпа Крылов витĕмĕ ун поэзийĕнче таçтан та сисĕнет. Тулаш енчен сăвăç Крылов пек лăпкă та шухăшлă, чунĕнче вара Пушкин хĕрӳлĕхĕ тапса тăрать. Унăн пĕтĕмĕшле тавра курăмĕнче те çак асăннă аслă поэтсенчен витерĕннĕ çынлăх (гуманизм) чун тăвăлса çитсен те, тем пек хĕрсе кайсан та касма çĕкленĕ хĕçе татăклă самантра çĕрелле усать, ӳкĕт-тархаслу çине шанать. Хай Лермонтов тенĕрен, ку поэтран чăваш сăвăçи лирикăра чуна йӳле ярса çырма хăнăхнă. Сăвăсен адресачĕсене тăтăш кăтартни те, вырăс классикĕсен сăнарĕсене тата ытти мелĕсене кĕртни те çакăнпа çыхăннă.

Кореньковăн архивĕнче Тарас Шевченко çырнă сăвăсен пуххи упраннă, ку пĕчĕк кĕнеке 1901 çулта вырăсла тухнă. Ăна чăваш поэчĕ кăмăла кайманранах ĕмĕрĕ тăршшĕпе алă айĕнче тытса тăман ĕнтĕ. Сăвă хывăм енчен, сăнарлăхпа илемлĕх мелĕсем тĕлĕшĕнчен икĕ халăх сăвăçисен пултарулăхĕнче тӳрех куçа тăрăнакан пĕрпеклĕхсем курăнмаççĕ. Чăваш йĕкĕтне украин поэчĕ тăван халăхăн хуйхи-суйхи çинчен йывăр шухăша кайса çырнисем хавхалантарнă, ырă тĕслĕх вырăнне шутланнă теме май пур (сăмахран, хăйпе хăй, Турăпа, вулаканпа калаçса, шухăшласа çырнисем иккĕшĕн те пĕр евĕрлĕ).

Чăваш поэчĕ хура халăха çывăх, ăнланмалла мелсемпе калаçма тăрăшать. Çакна вăл И.Я. Яковлевăн вĕрентӳ ĕçĕнче тĕпе хунă йăла-йĕркерен йышăнса пырать. Ахальтен мар вăл çичĕ сыпăклă силлабика виçине тĕпрен тиркемест, вырăсларан куçарнă чух та унпа тăтăш усă курать. Халăхăмăр юмах-халапĕсене сăвăласа çырни те, ваттисен сăмахĕсене кĕртни те çавнах çирĕплетет. Çакна та палăртмалла: уйрăм тĕслĕхсенче Кореньков силлабо-тоника виçисемпе çырса пăхнă, ку ĕçе вăл Çеçпĕлччен пикеннĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, сăвăç тăван поэзишĕн çичĕ сыпăклă силлабика вырăнлă тесе шутланă, ун кĕвĕлĕхне пуянлатма тăрăшнă.

Кореньков çырнисенчен чылайăшĕ 1903—1960 çулсенче Хусанта тата Киров облаçĕнче пурăннă Комиссаров аллинче упраннă, килти архивĕнче питĕ сахалăшĕ тăрса юлнă. Комиссаров хăй патĕнчи хутсене 1968 çулта Н.Г. Краснова — поэтăн хурăнташне — парса янă. Халĕ вĕсем Чăваш гуманитари институтчĕн архивĕнче упранаççĕ.

М.Я. Сироткин революцичченхи чăваш литературин историне çырнă чух Кореньковăн пичетре тухман вунна яхăн сăввипе тата вĕçлеймен поэмипе паллашма ĕлкĕрнĕ. Тĕпчевçĕ ку автора чăвашсен малтанхи демократ-поэчĕсенчен пĕри тесе асăнать[4]. Вăл çакна та асăрханă: хăй вăхăтĕнче пичетленме майсем хĕсĕкрен сăвăçăн литература ĕçĕнчен пăрăнма тивнĕ. Чăнах та, патша саманинче кĕнеке кăларма хĕн пулнă. 1919 çулта Кореньков хăйĕн хăш-пĕр хайлавне уйрăм кĕнекен кăларма хатĕрленĕ. Йывăр ларутăрура унăн ал çырăвне Мускава илсе кайнă чухне çухатаççĕ. Шкул ĕçне пуçĕпех кӳлĕннĕ май Кореньковăн поэзипеле ларма вăхăчĕ те сахал пулать. Çавăнпа вăл совет тапхăрĕнче темиçе сăвă çеç çыркаланă, кăшт-кашт илемлĕ куçару ĕçне тытма ĕлкĕрнĕ. 1920—1930 çулсенче вăл тĕрлĕрен пĕлĕве вĕрентме шкул кĕнекисем темиçе те пичетленĕ, хаçат-журналта статьясем чылай кăларнă. Унăн пайтах сăвви интимлă лирика шутне кĕрет. Çав шутра эротика тĕслĕхĕ те нумай. Уйрăм çыннăн кăмăл-туйăмне сăнлакан хайлавсене хăй вăхăтĕнче хисепе хуманни çакнашкал поэзие пичете сĕнме чарса тăнă. Кунта çулланнă сăвăçăн интересĕсем улшăнса пынине те шута илмелле: Пушкин калашле, «года к суровой прозе клонят». Çав сăлтавсене пула поэтăн поэзирен аяккарах тăма тивет, çавăнпах унăн поэзи еткерĕ вулакан патне халĕ тин туллин çитет.

Поэзи вăл — самана сасси теççĕ. Эппин, Кореньков хăй вăхăче çинчен мĕн каласа хăварнă-ха? Унăн гражданла хастарлăхĕ мĕнлерех? Çырав туртăмĕсем еплерех-ши?

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче хура халăх пурнăçĕ хĕсĕнсех пыни, классен хирĕçĕвĕ çивĕчленни, революци юхăмĕ чăваш хушшине сарăлни — çак çивĕч ыйтусем Кореньков пултарулăхĕнче хăйне евĕр йĕрленсе юлнă. Акă 1904—1905 çулсенче Яппун вăрçинче Раççей пысăк çухату тӳсет. Çакна поэт çийĕнчех «Хăрушла çумăр» сăвăра пĕтĕмлетсе сăнать. Унта халăхăн тертне хăрушла

---

[4] Сироткин М.Я. Очерки дореволюционной чувашской литературы. Чебоксары, 1967. С. 127.

çумӑрпа танлаштарнӑ, çак йывӑр саманана «макӑрмалли вӑхӑт» тесе ят панӑ. Ӑна поэт ун чухнехи выçлӑх фонӗнче ӳкерсе кӑтартать.

Самани те латлӑ мар,
Кунӗ(н)-çӗрӗ(н) юн юхать.
Тырри-пулли пит начар,
Вӑл та пулин хуралать...

Поэзие Кореньков 1901 çултах иленнӗ. Малтанхи «Пирӗн ял» сӑвӑра Кореньковшӑн таврари тӗнче идилли пек курӑнатьха:

Яла кӗрсен тӗлӗнен:
«Тӗлӗк мар-ши ку ман?» — тен.
Пӗтӗм кил-çурт, юмах пек,
Ешӗл çулçӑ та чечек.

Кӗçех поэтӑн куçӗ уçӑлать, пурнӑçри социаллӑ хирӗçӳсене асӑрхать: «Çапах çынсем хушшинче пӗртте аван туйӑнмасть», — тет вӑл 1903 çулта.

1901—1905 çулсенчи сӑввисем поэтӑн нумаях мар. Унӑн поэзийӗ уйрӑмах çак тапхӑр хыççӑн, 1906—1914 çулсенче, хӑват илет, çавӑнпа Коренькова революцицченхи сӑвӑç теме тивет.

Раççейре пӗрремӗш революци вӑхӑтӗнчи литературӑн тӗп темисем ӗç çыннисен тертлӗ шӑпине сӑнласа парассипе ирӗклӗхшӗн кӗрешме чӗнесси пулнӑ. Поэт хура халӑхӑн пӑлхавлӑ кӑмӑлӗ капланса килнине пайӑррӑнах кӑтартма пуçлать. Вӑл «Хыпар» хаçатпа тачӑ çыхӑну тытать, унта хӑйӗн сӑввисемпе куçарӑвӗсене пичетлет.

Сӑвӑçӑн паллӑрах туртӑмне хаçатра тухнӑ «Тӑлӑх арӑм» сӑвӑра куратпӑр («Хальхи пурнӑç» ятпа пичетленнӗ»). Унта ялти чухӑнсен хуйхи-суйхине витӗмлӗ пайрӑмсемпе сӑнланӑ: ани кӗскелсе пырать, тырри çиме çитмест, ачисем çӗтӗк тумлӑ («витӗр курнаç шӑммисем»), чухӑнсене кашниех выльӑх вырӑнне хурать, «эй, эй!» тесе çеç чӗнет. Автор «алӑк панчи шӑпӑр» шутӗнче çӳрекенсене хӳтӗлет, халӑх «çутӑлса çӗнӗ çула кӗрессе» ӗмӗтленет. Тертлӗ пурнӑç çинчен çапла калани вулакана, паллах, çӑлӑнӑç шырама хистенӗ.

Поэт ӗнтӗ пӗтӗмӗшле сӑнлӑхсемпе çырлахмасть, уйрӑм çынна, унӑн шӑпине тишкерет, вара пӗтӗмлетӳсем тӑвать. Унӑн сӑнарӗсем йышӗнче пусмӑрçӑсемпе вӗсен хӳрешкисем те курӑна

пуçлаççĕ. Акă «Ваккатланса çӳрекен» сăвăра (1908) «ялти ухмах куштанăн» сăнарĕ Николай Шелепи каярах ӳкерсе панă Ваçанкка йышши чее çынна пĕлтерет:

— Савăн,
Чире персе ывăлна
Салтак панчен çăлакан:
Халăх пĕлмен анана
Куштансемпе акакан!

Кун пек сăвăсенче поэт стилĕн пĕр вăйлă уйрăмлăхĕ сисĕнет — поэт сатирăпа хăюллăн çунтарать:

Санран сиен тухнăран
Куллен сана аслăлар;
Сан урлă хĕн курнăран
Куççулĕпе кĕл тăвар:
Дай Бог сана вăрманта
Юман çапса ӳкерме,
Дай Бог сана ватлăхра
Ачу тытса пĕçертме!

«Плешйăрана» (1909) сăвăра та поэт çĕртме пуяна çак меллех питлет, унăн чунсăрлăхне кăтартать. Тăван литературăра кун пек стиль ун чухне тин калчалана пуçланă.

Кореньковăн тепĕр курăмлă туртăмне те асăнмасăр иртме çук. Революци юхăмĕ çĕршыври пĕчĕк йышлă халăхсен ăнланулăхне хăвăрт çĕклет. Çакă вăл революцилле кĕрешӳ хĕрӳлĕхĕнчен кăна мар, литературăпа искусство çĕнĕрен çĕнĕ ыйтусем хускатнинчен те курăнать. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ хĕрĕх çул тултарнă май Ивановпа Шупуççынни халăхăн иртнĕ кун-çулне кĕскен йĕрлесе тухаççĕ, Кореньков та ун пирки шухăша каять, ăна май тăван культурăна аталантарасси çинчен калаçма пуçлать. «Мĕншĕн, чăваш çыннисем, катăк пулса тăратпăр?» — тет сăвăç тăван поэзи йăваш пулнишĕн пăшăрханса. Çав вăхăтрах поэт «çырма çул çукран» талантсем «çĕрсе» кайнине те курать («Пуçра шухăш нумай та...», 1907).

Ăçтан тухнă эс, чăваш,
Кам пулнă сан аслаçу?
Кирек ăçта эс «не наш»,
Кирек ăçтах ятлаçу, —

çапла пуçланать «Чăваш» сăвă (1907). Чăваш ытти çын пекех суха тăвать, ытти çын пекех вăрçа кĕрет, çапах ăна хисеп çук. «Мĕншĕн эсĕ кăшт-пăртак шухăшласа пăхмастăн?» — тет поэт халăха, ăна «куçне уçма» чĕнет, хăйĕн аслă шкулсем, театрсем, кĕнекесем пултăр тесе тăрăшма йыхăрать:

Кала, кама шанан эс?
Е Турăран кĕтетне?
Ăнлан, Турă пит йĕмест,
Пĕлет хăйĕн пĕлĕтне.

«Мĕншĕн пирĕн маларах...» сăвăра (1907) çак шухăшах малалла тăснă: халăхран ăслă çынсем тухасса, вĕсем çул кăтартса пырасса поэт чунтан тĕмсĕлсе кĕтет:

Килтĕрччĕ хуть пĕр этем
Çӳллĕ çутă çуртипе, —
Палăрĕччĕç алăксем
Унăн лăпкă çутипе.

Кĕрешӳ йывăрлăхне сăвăç лайăх ăнланать: «Хуть те йывăртарах та, ним тума... ут малалла!» — тет. «Ут малалла!» текен йыхрав сăмахĕсем Ивановăн «Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!» тенипе пĕр шайлă. Поэтăн аслă тĕллевĕ — халăха вăранма, çĕнĕ пурнăçшăн татăклă кĕрешĕве чĕнесси.

Кореньков ытларах демократилле реформăсене шанать. Çавăнпа кĕрешӳ пирки пĕтĕмĕшле çеç калать. Анчах кунта поэт халăх культурине çĕклессишĕн çунни уйрăмах хаклă. Юман Мĕтри аса илнĕ тăрăх, сăвăç Атăл çинче чăваш хули тăвас, унта маттур чăвашсене пухас, вара культура ĕçне хăватлатас тесе ĕмĕтленнĕ имĕш[5]. Çапла сĕмленмен çын, паллах, тăван поэзие те хастар кӳлĕнмен пулĕччĕ. Вăл революци шухăшлă çынсемпе паллашать, унăн килне полици те пырса ухтарнă. Ку шăпах Юман Мĕтри ун патне пырса кайнă хыççăн сиксе тухнă-и тен.

Çыравçă пултарулăхне хакланă чухне хайлавсене жанр енчен тишкерни уçăмлăх кӳрет. Çак тĕлĕшрен Кореньков поэзийĕ пуян та хăйне евĕрлĕ. Маларах тухнă сăвăсене те çак ыйтуран уйăрма çук. Вĕсенче халăхăн кулленхи пурнăçне сăнласси гражданла лирикăпа çеç мар, ытти жанр тĕслĕхĕсемпе те çыхăннă. Кунта уйрăмах çут çанталăк лирики (пейзаж) çинчен пусăмлатса ка-

Ч-44367

[5] Юман М. (Д.П. Петров). 1905-мĕш çул. Шупашкар, 1925. 117 с.

Национальная библиотека
Чувашской Республики

лани вырӑнлӑ. Самана сӑнарне (ХХ ӗмӗр пуҫламӑшне) ӳкерсе кӑтартнӑ чухне Кореньков кичем пейзажпа анлӑ усӑ курать. Хӑй тапхӑрне вӑл хӑрушла ҫумӑрлӑ ҫанталӑкпа кӑна мар, ытти самантсемпе те танлаштарать. «Усал саспа ҫил шӑхрать, йывӑҫсене авкалать», — тет вӑл тепӗр сӑвӑра. Хӑрушла ҫумӑр сӑнарӗ ытти сӑвӑсенче те сиксе тухать. Акӑ ҫак ӳкерчӗке тепӗр ҫӗрте «хура, хӑруш ҫанталӑк» тесе ят панӑ («Нумай усӑ тӑван эс...»). Самана тискерлӗхӗ чуна хытӑ пусмӑрлать пулин те, поэт ӑна сивлемест: ун шучӗпе, «ҫанталӑк пит шӑп тӑрсан, этем Турра час манать», ҫавӑнпа сӑвӑҫ хура пӗлӗтсене тата ытларах хуралма, «ҫын чӗрине хускатма» йыхӑрать, вӗсем усал ӗмӗтсене чарасса шанать. Пурнӑҫри пулӑмсене диалектизмла шухӑшласа хак пани кун пек сӑвӑсен хакне татах ӳстерет. Ун пек хайлавсенче ытарлӑхсӑр пейзаж мар, шухӑшлав лирики тӗп вырӑн йышӑнать, ҫанталӑка сӑнлани кунта пулӑшу хатӗрӗ вырӑнӗнче юлать.

Самана-вӑхӑт сӑнарӗ тенӗрен Кореньков пӗтӗмӗшле кӑна мар, пурнӑҫри хурапа шурра уйӑрса та сӑнлать. Халӑх пурнӑҫӗн йывӑрлӑхӗ пусмӑрҫӑсенчен килнине вӑл яланах асра тытать. Ахальтен мар ӗнтӗ «Каҫхи пӗлӗт тап-таса...» сӑвӑра ҫапла каланӑ:

«Тиек йытти тил тытать —
Тил тытса та юраймасть.
Пуп кушакӗ пул тытать —
Пул тытса та юраймасть...»
Тенӗ юрӑ илтӗнет.
Шухӑшласа пӑхан та —
Куҫҫуль тухать, чун йӗрет,
Чӗре выртмасть вырӑнта.

Кунта сӑвӑҫ ӗҫ ҫыннисем енче пулни, вӑл тӗрлӗрен тиек-пуп таврашӗсене сивлени тӳрех курӑнать. Автор сӑвва ҫакна палӑртсах вӗҫлет:

Чӑнах, хресчен пурнӑҫӗ
Ытла та пит йӳҫӗ.

Тӗрлӗрен икӗ пит пуянсем, ваккатсем ҫинчен сӑвӑҫ тарӑхса ҫырнине вулакан пӗлет ӗнтӗ. Лирикӑра кӑна мар, эпосла хайлавсенче (юмахсемпе поэмӑсенче) ҫак сийсен хирӗҫӗвӗ анлӑрах та сӑнарланнӑ. Акӑ «Ӑс укҫана ҫӗнтерет» поэмӑра ҫын хӑй ӑсӗпе ҫӗрме пуяна ҫӗнтерсе ҫиеле тухать. «Пӗр пек пултӑр» юмахра та ҫак конфликт тӗпре тӑрать: тавҫӑруллӑ хресчен хӑйне улталаса пуяс текен улпут-пупсене инкеке лектерет.

Çил-тăвăллă хăруш çанталăк этем чунне хытах пусать:

Ăна кура чĕре те
Лăпкă выртмасть, хускалать.
Тем чул ырă ĕмĕт те
Ĕмĕт хальлĕн çухалать...
Тулта уйăх хураран
Пуçри шухăш та хура...

(Усал саспа çил шăхрать...»)

Çакăн пек туйăм Коренькова 1903 çултах çавăрса илет. Ун чухне Яппун вăрçи те пуçланман-ха, революци кĕрешĕвĕ те хĕрсе çитмен. Сисĕмлĕ чун çак самантсем çитессе таçтан сиснĕ пекех, вăл «Çуркуннехи çĕр» сăвăра хăрушлăх çывхарнине палăртмасăр тӳсеймест. Ку сăвăра пейзаж кичем те мар-ха, анчах çут çанталăкпа этем чунĕнче хире-хирĕçле лару-тăру:

Вăрман çинчи уйăх та
Çĕре ыррăн çутатать.
Юман çинчи шăпчăк та
Тем пек лайăх янăртать, —

Çапах маншăн çут тĕнче
Пĕртте лайăх курăнмасть:
Çапах çынсем хушшинче
Пĕртте аван туйăнмасть.

Кайранхи сăвăсенче çак йывăр туйăм çĕршыври асаплă пурнăçран килнине, халăх сийĕсем хушшинчи хирĕçӳсем çивĕчленнине автор тĕрлĕ ӳкерчĕк туса сăнлать. Çапла, идеаллă (лăпкă) пейзаж та поэта канăç кӳреймест. Кореньков поэзийĕнче канăçлă çанталăка сăнлани питĕ сахал. Чи малтан çырнисенчен упранса юлнă «Пирĕн ял» сăвăра кунашкал ӳкерчĕк çук. Ăна хайланă чух авторăн çырас ăсталăхĕ те вăй илеймен-ха. Кайран çырнисенче ун йышши пит сахал. Вĕсенчен 1909 çулхи «Çумăра» палăртма пулать пек, анчах унăн контекстĕнче те савăнăçпа куççуль хутăш: халăх çумăра кĕтсе ывăннă. 1903 çулхи тепĕр пейзаж та çакăн пекех:

Хĕр пек чипер çуркунне!
Мĕншĕн эсĕ хăшшине
Савăнмалла тăватăн?
Мĕншĕн тепĕр йышшине
Хуйхă анчах паратăн?

(«Çуркунне»)

Çапла, поэт саманан чи хавассăр паллине асăрхать. Анчах унăн кăмăлĕ хуçăлсах ӳкмест, йывăрлăхра тăтăшах: «Ĕçлес пулать, ачасем!», «Йывăртарах та... ут малалла!» тесе йыхăрать, çăлăнăç çулне ĕçре, вĕренӳре, кĕрешӳре курать. Çав тапхăрти чылай çыравçă кулленхи тĕллеве çапла курса палăртнă, хăрушлăхра пуçа усса ларман. Ку вăл халăхри туртăма пĕлтернĕ.

Кореньков поэзийĕнче пейзаж лирикин ытти тĕсĕсем те пур. Акă вăл йывăç-курăкăн ытарлă сăнарĕсене калăплама юратать. «Юман юрринче» юман йывăça çирĕп те хӳтлĕх кӳрекен вăй пек ӳкерсе кăтартать (юман чечексене инкекрен хăтарма тăрăшать). Вырăс поэзийĕнче юман сăнарĕ унчченех анлă сарăлнă, тăван халăх юррисенче те вăл вăйлă арçынна, аттене пĕлтернĕ. Поэт ку сăнара хăйне май сĕм кӳрет: юмана кĕвĕçекен йĕкĕт пек сăнлать. Ку сăвăрах чечексен сăнарĕсем тĕл пулаççĕ. Вĕсене ятран асăнман, ытти çĕрте те çапла — тĕсĕсене çеç палăртнă. Йывăçсенчен тата чиене, çĕмĕрте сăнланă, вĕсем те ытарлă. Шап-шур çеçке çурнă, лĕпĕшсем иленнĕ, ырă шăршăллă çĕмĕрт хӳхĕм хĕре пĕлтерет («Нумай çĕмĕрт пахчара...»). Юманпа çĕмĕрт — юрату сăввисенче, чие вара — пейзажпа шухăшлав лирикин персонажĕ. Чие йывăçĕн шăпи этемĕннипе пĕрех: «шур кĕпеллĕ хĕрсем пек илемленсе ларать», чечекĕ лайăхран хуçса каяççĕ, çырли ытла тутлăран ăна татса каяççĕ.

Чăт, тӳс, мĕскĕн чей çырли!
Çырлаллă пул... çын валли.
Эс те, чунăм, тĕреклен,
Усă кӳме ан ӳркен.

(«Чей çырли»)

Çапла сăвăç этем пурнăçĕн тупсăмне, пĕлтерĕшне палăртать: кун-çул драматизмне ăнкарни çынна йывăрлăха çĕнтерме, ура çинче çирĕп тăма пулăшать.

Кореньков этем кун-çулне синкертерех курса хаклани те пур. «Пурнăç» сăвăра таса çыншăн ырри ытла сахал:

Ку тĕнчере çук та ун
Çутă кунпа çут мункун.
Курсан курать леш çĕрте
Таса çын перекете.

Эппин, çапах та çăлăнăç пур, çавăнпа автор сăмаха «вилер хуть ĕмĕтленсе» тесе вĕçлет. Ку сăвăра леш тĕнчене сăнламан, вăл

ырăрах пуласси çинчен çеç пĕлтернĕ. Темле йывăр пулсан та, поэт пурнăç çине мал ĕмĕтлĕ пăхать. Вăл чăваш халăхĕн кунçулĕ асаплă иккенне курать, ăна çăмăллатма çыннăн кăмăлĕ кирлине астутарать.

Çапла сăвăç пейзажпа усă курса самана, халăх, тăван тавралăх, уйрăм çын сăнарне калăплать. Кунта вăл тӳрĕ пĕлтерĕшлĕн те, ытарлăн та калаçать. Ку йăла пирĕн поэзире унччен аталаннă. Çут çанталăкри япаласен сăнарĕсем ĕмĕрех этем чун хавалне уçса пама пулăшнă. Çырулăхăмăр поэзийĕнче вăл М. Федоровăн «Арçурийĕнчех» вăйлă сисĕнет: тĕнче шуйханнă чухне çыннăн кăмăлĕ те турткалашса хускалать. «Тискер вăхăт» тени Турхан Хĕветĕрĕннех пур. Çакна Кореньков хăйне май çĕнĕ ӳкерчĕксемпе, сăнарсемпе пуянлатать. Турхан Яккăвĕпе Хĕветĕрĕ çулталăк вăхăчĕсем, тăван тавралăх, йăла-йĕрке çинчен ытларах çырса кăтартаççĕ. Ку япала Кореньков поэзийĕнче сахал. Поэт ытларах çыннăн ăшри шухăш-кăмăлне сăнлама юратать, çавăнпа вăл пейзажа ытларах символ сĕмĕ пама тăрăшать. Ку туртăм ун умĕн те пулнă-ха: акă асăннă Турхансемех куккук, шăпчăк, хурлăхан тата ытти япаласене куçăмлă пĕлтерĕш кĕртсе сăнланă. Анчах Кореньков ку енĕпе нумайрах та анлăрах ĕçлени пĕрре те иккĕлентермест. Вăл хăйне евĕр çĕнĕ сăнарсем туни, çĕнĕ темăсем хускатни тăван поэзи пуянлансах пынине пĕлтерет. Юман, чечек, çĕмĕрт, чие сăнарĕсемсĕр пуçне, кунта ытти çĕнĕлĕхсене те хушма пулать. Акă пĕр сăвăра поэт хурăн сăнарĕ урлă йĕкĕте те, сар хĕре те сăнарлать («Хурăн юрри», 1914). Çитменнине, ку сăвва прозăлла çырнă. Кун пек жанр тĕслĕхĕ тăван поэзире пулманччĕ-ха («Хыпарта» М. Акимов 1906 çулта пичетленĕ «Тĕлĕнмелле» памфлет вырăсларан куçарнă хайлав шутланать). «Ан выля» сăвăра çут çанталăк илемĕ этемĕн кăмăлĕнчен килет: юратнă хĕр каланă çепĕç сăмахсем йĕкĕте тĕнче çине пачах урăхла, хаваслăрах пăхма хавхалантараççĕ. Çак тĕслĕхсем Кореньков пысăк ăста пулнине, унăн поэзийĕ пуян иккенне лайăх ĕнентереççĕ. К. Иванов ăсталăхĕ лиро-эпикăра («Нарспи» поэмăпа юмах-балладăсенче) палăрнă пулсан, Кореньков ытларах чăваш лирикине жанрпа стиль çĕнĕлĕхĕ нумай кĕртнĕ, унччехи туртăмсене çивĕчлетнĕ.

Çакă вăл пейзаж, шухăшлав тата гражданлăх лирикинче кăна мар, юрату сăввисенче те вăйлă палăрать. Çыннăн интимлă кăмăл-туйăмне хăй вăхăтĕнче Кореньков чухлĕ никам та нумай сăвă халалламан: вĕсен йышĕ утмăла яхăн пухăнать. Хăш-пĕрне

автор пичет валли тесе те çырман. Хайлавĕсене хальхи куçпа хаклатăн та, сăвăçăн шухăш-туйăм çивĕчлĕхĕпе ăсталăхĕ вĕсенче те туллин палăрни курăнать. Поэт хăй чунне пăлхатса тăракан япала çинчен пытармасăр, тӳррĕн калать, вăл хăй çылăхлă та мĕскĕн курăнасран хăраса тăмасть, кирлĕ самантра ӳкĕнме, каçару ыйтма ха хатĕр. Кун йышши сăвăсенчен нумайăшĕ кун кĕнекипе альбом çине çырса пынă тĕслĕхсем евĕрлĕ, анчах автор чылай чухне вĕсене илемлĕх мелĕсемпе ăста усă курса хайланă. Вăл ытти чăваш сăвăçисем хускатма именсе тăнă ыйтусене хăюллăн çутатса парать, хăйне питĕ ирĕклĕ туять, тепĕр чухне виçерен иртсе кайни те тĕл пулать. Г. Айхи асăннă модернлăх, паянлăх çак пахалăхсенче палăрать пулас.

Паллах, кунта чи малтан ăсталăх уйрăмлăхĕсене тĕпе хумалла. XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи хамăрăн юрату лирикинче Кореньков чăваш вулаканĕшĕн анлă тĕнче уçать. Ку ĕçе ыттисем те вăй хуман мар-ха: Г. Комиссаров (Вантер), Н. Шупуççынни, Ф. Павлов, В. Мач сăввисенче юрату илемне, асапне чылай ӳкерсе пană. Анчах Кореньков каччăпа хĕрĕн кулленхи хутшăнăвĕсене нумай енлĕрех сăнланă, вăл çамрăк-кĕрĕмĕн çитменлĕхĕсене те питлет. Унăн юрату сăввисенче вара вырăс поэзийĕн витĕмĕ лайăх сисĕнет. Сăвăсен адресачĕсене кăтартса хăварас йăлана та чăваш сăвăçĕ Пушкинпа Лермонтовран вĕренсе пынă. Шел, ку хушаматпа ята кĕскен кăтартнисене хальлĕхе тишкермен (вĕсем кама пĕлтернине тупса палăртман). Çак ĕçе туни хăш-пĕр сăвăсен кунçулне, пĕлтерĕшне туллинрех çутатса пама пулăшнă пулĕччĕ. Сăвăсенче автор Амур, Клеопатра, ангел, сирена йышши сăнарсемпе усă курать, ку япала ун чухнехи ытти чăваш поэчĕсен питĕ сахал тĕл пулать. Нумай чухне сăвăç хăй сăнлакан персонажпа калаçать, вĕсем патне усă çыру çырнă пек сăмахлать. Çакă та пуплеве чĕрĕлĕх кӳрет.

Кореньковăн юрату лирики мĕн-мĕн çинчен калать-ха эппин? Юратăвăн пысăк пĕлтерĕшне, савни илемне мухтани ку сăвăçăн та нумай тĕл пулать. Ун пек чухне автор тăтăшах танлаштарусемпе усă курать. Ырă савнă тус уншăн тĕнче пек, пурнăç пек хаклă. Çакна поэт анлă ӳкерчĕксем тусах кăтаратать:

Эс çеç мана йăпатса
Усран çак сив тĕнчере;
Эс çеç чуна пусарса
Тытса тăран ĕмĕре.

Ялан йăваш куçупа
Мĕнпур хуйха путаран;
Çемçе, тӳлек сăнупа
Тăшмансене мантаран.

Эс пур чухне çеç мана
Тĕнче чипер курăнать;
Эс пур чухне çеç çынна
Чĕрем «тăван» пек сунать.

(«Эс çеç мана йăпатса...»)

Юратнă çын — чи пысăк шанчăк, тĕрек, илем, чун ăшши. Ку шухăша ытти сăвăсенче те тĕрлĕрен майпа анлă ӳкерчĕк туса сăнланă. Акă кайăк вĕçсе килнипе вĕçсе кайни çинчен çырнă тепĕр икĕ ӳкерчĕк:

Пĕтĕм лайăх кайăк та
Ăшă çĕртен килет-çке;
Вĕсем килсен халăх та
Хавасланса çӳрет-çке:
Инкекĕсем пĕтеççĕ,
Куççулĕсем типеççĕ.
Çапла, сана тĕл пулсан
Пĕтĕм хуйхă пĕтрĕ ман.

Пĕтĕм лайăх кайăк та
Ăшă çĕрех каять-çке;
Вĕсем кайсан халăх та
Пуçне каллах усать-çке:
Каллах шухăш пуçĕнче,
Каллах куççуль куçĕнче.
Çапла, сана ăсатсан,
Куççуль персе анчĕ ман.

Сăвă çаврисене яланхи пек тăватшар йĕркеллĕ мар, сакăршар йĕркеллĕ туса çырнă, вĕсене вуласа тухмассерен хаш! сывласа яратăн. Çакă килсе капланнă туйăм улшăнăвне лайăх палăртать. Çитменнине, кунта пĕр-пĕрне хирĕçле ӳкерчĕк-туйăм. Сăмах юххи юрăри пек тикĕс пырать, пуплевсене пĕр йышши калăппа йĕркеленĕ. Састашĕсем те тирпейлĕ те тулли. Поэт «ах, лайăх та, лайăх» тесе пĕтĕмĕшле сăмахсемпе мар, тĕрлĕрен ĕçпуçа пайăррăн кăтартса ӳкерет. Пĕтĕм сăвва икĕ хирĕçле анлă танлаштару шăнăрласа тăрать. Кунта виçерен иртни те, картне ларманни те çук. Çакăн пек çырма пысăк сисĕм-туйăмлă сăвăç кăна пултарать. Кун пек анлă танлаштару мелĕпе ытти сăвăсенче те усă курнă, анчах унта урăхларах сĕмсем те палăраççĕ («Пĕлĕт

çинчи çăлтăрсем...», «Юрă», «Тин çеç кайăк вăрмантан...» т.ыт.те). Сăвăç кĕске танлаштарусем каласа та сăнар витĕмлĕхне ÿстерет. Ырă енчен хак панă чухне Кореньков куççене алмаз пĕрчипе, хĕр юррине шăпчăк юррипе, чиперккене вырăс хĕрĕпе танлаштарать. Пархатарсăр чунлă çынсем çинчен çырнă чухне сăвăç ултавçă тăшмана çĕленпе, вĕçкĕн çăмăлттая лĕпĕшпе е качакапа, путсĕрсене шуйттанпа танлаштарса, питлев-кулăш сăввисенче тата хивререх сăмах тупса та хаклать. Кун пек туртăм вăл вăхăтри ытти сăвăçсен куçĕ тĕлне тăрăнмасть. Çакă вăл Кореньков чунĕнче лирикпа сатирик çураçуллă пурăннинчен нумай килет.

Поэт тĕлпулу телейĕ, уйрăм асапĕ, ăшă асаилÿ, вăйă-кулă хавасĕ, тунсăх-юншăх, ултавлă кăмăл, çăмăлттайлăх тата ытти çинчен те çакăн пекех çивĕч çырса кăтартать, хăш-пĕр чухне саламачĕпе те сулса илет:

Эсĕ лĕпĕш лĕпĕшĕ —
Вĕçсе анчах çÿретĕн.
Эсĕ хавас амăшĕ —
Пĕрмай шăлна йĕретĕн.

(«Пур енчен те эс аван...»)

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче тăван поэзири жанр тĕсĕсем хăвăрт йышланаççĕ. Çакă вăл пысăкрах калăплă хайлавсен йышĕ ÿсниңчен те палăрать. Ку вăл уйрăмах поэмăпа сăвăланă юмахсене пырса тивет. Çак енĕпе Кореньков пултарулăхĕнче те пысăк ÿсĕм палăрать. Поэт пикенсе поэзие кÿлĕннĕ вăхăтрах поэмăсем çырма, халăх юмахĕсене сăвăлама тытăнать. Акă вăл «Чăвашпа тутар» юмаха 1905 çултах сăвăлла каласа парать. Сăвăлама поэт ытларах хăйĕн кăмăлĕ туртакан кулăшла юмахсене суйласа илет. «Матка пулнă упăшка», «Пĕр пек пултăр» юмахсенче çакă уйрăмах вăйлă сисĕнет: автор хăйĕн геройĕсене мыскараллă лару-тăрура сăнласа пама кăмăллать. Ку йăла унăн поэмисенче те сахал мар тĕл пулать.

Тепĕр чухне унăн хайлавĕсенче юмахпа поэма жанрĕсен чиккине уйăрса илмешкĕн питĕ йывăр. Сăвăç юмах сюжечĕсене кулленхи пурнăçа çывăх сăнсемпе пуянлатать те, юмах тĕнчи реализмла ÿкерчĕкле курăнма тытăнать. Çитменнине, юмахĕсен сюжечĕсем те кулленхи лару-тăруран тĕвĕленсе кайнă. Акă чăвашпа тутар кам вăрăм юрлать тесе тавлашни те, пиччĕшĕ йăмăкĕ пек тумланса хăйне вăрлаттарни те, упăшки вырăнне

киле юлса тертленни те çавăн çинчен калать. Кусем новелла йышши юмахсем, йăла юмахĕсем тейĕпĕр. Асамлă юмахра та Кореньков геройĕсем хăйсене ахаль çынсем пек тыткалаççĕ. Акă «Эсрелĕ» юмахра Турă, пĕлĕт çинче пулсан та, ялти хресчен евĕрлĕ пурăнать, хăйне те çапла тыткалать: «кантăкран ыйтакана ăс парать», Эсреле ĕç хушать те «кĕрсе выртать шалалла».

«Уйăх свидетель пулни» поэмăра ялти чухăн çын укçа тупма Хусана çитсе çӳрени пур. Çакна автор ятарласа асăнман темелле, кунта унăн реализмла тĕнче курăмĕ вăйлă пулни курăнать. Çыравçă чухăна тухнă хресченсем хулана çул тытнине тӳрремĕн сăнлать. Çак тĕлĕшрен унăн поэмисемпе юмахĕсем тăван поэзин хăй вăхăтĕнчи тĕп туртăмĕсене палăртма пысăк пуянлăх кӳреççĕ. Кореньковăн çак уйрăмлăхĕ унăн лирикăпа сатира сăввисемшĕн те ют мар. Çавăнпа вăл пуянсемпе чухăнсем хушшинчи танмарлăха çивĕччĕн сăнлать. Çавна пулах классем хушшинчи хирĕçӳсем çивĕчленеççĕ, çав кĕрешӳре мĕскĕн те айван курăнакан чухăнсем тăтăшах çиеле тухаççĕ. Намăс-симĕс халапне сăвăланă чухне те поэт чи малтан çакна палăртса хăварма тăрăшать («Иванпа Хĕветле»): чухăн Иван пуянăн хăй юратакан хĕрне улталаса та пулин качча илет-илетех.

Самана сывлăшĕ «Тутарпа чăваш» юмахра тӳрех сисĕнет: вакă е ют халăх шутланнă чăваш хăй ыттисенчен кая мар иккенне туйса илет, ĕнтĕ унăн пĕртанлăх туйăмĕ чунра пытанса тăмасть, çакна халăхăн маттур ывăлĕсем тĕнче илтĕнмелле евитлеççĕ. Асăннă юмах шăпах çав шута кĕрет: унта чăваш хăй ĕçĕпе тутара çĕнтерет. Автор чăвашăн чунри танлăх кăмăлĕ пирки çапла пĕлтерет:

Чăваш пăхма пит йăваш,
А вăл енне кайсассăн,
Ан тив! — ая кĕрес çук.
Хуть кам унтан кулсассăн —
Хăй те маххă парас çук.

Çапла пĕлтерме, паллах, хăюлăх кирлĕ. Кун пек калани кӳршĕ халăха кӳрентерет тесе шутлани вырăнсăр. Илемлĕ хайлавăн йăлине кура ăна чиперех тӳрре кăларма пулать. Ăмăртура тăван халăх çынни урăх халăх çыннине çĕнтерни çинчен калакан сюжет ыттисен те пур: сăмахран çакнашкал лару-тăру казахсен юмахĕнче тĕл пулать, вăл тĕрĕк халăхĕсем хушшинче авалах сарăлнă пулас. Кореньков хайлавĕ акă мĕнрен паха: халăх кăмăлне ав-

тор пичет урлă пĕлтерме хăюлăх çитерет. Ку вăл — XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи наци ирĕклĕхĕшĕн çĕкленнĕ юхăм ахрăмĕ.

Юмахсемпе поэмăсене пурне те халăхăн çичĕ сыпăклă силлабикипе çырнă. «Иванпа Хĕветле» поэмăна поэт хорейпа çырма тытăнса пăхнă, анчах унăн таса виçипе кĕвĕленсе пырайманнипе малалла халăх сăвви çинех куçнă. Ку виçе ăна калуллă пуплеве палăртма меллĕрех пулнă пулас. Кореньков хамăршăн пур пĕрех авалхи йăла меллĕрех, вырăнлăрах тесе шутланă. Сăвă çаврисене ялан тенĕ пекех тăватшар йĕркерен калăплать. Пуплевлĕх-калулăх кĕввине палăртма уйрăм сăвă йĕркине пайласа, кĕске пуплевсем туса çырнипе те вăйлатать. Сăвăç диалогпа анлă усă курать, персонажсене тăтăшах пĕр-пĕринпе калаçтарать, çакă вăл, паллах, авторăн ĕç-пулăмсене чĕрĕрех ӳкерсе парас тĕллевĕнчен килет.

Кореньков та, халăх юмахĕсене сăвăланă ун чухнехи ытти поэтсем (Г. Комиссаров, К. Иванов, Н. Шупуççынни, Н. Шелепи) пекех, халăх хайлавĕсен тытăмĕпе сăнарĕсене питех улăштарса çĕнетмен. Вĕсен лирика çаврăнăшĕсемпе усă курасси те вăйлах аталанман-ха. Икĕ юмахне («Хĕре уйăх илни», «Эсрелĕ») Кореньков пĕр пĕччен мар, Михаил Шевле сĕннипе иккĕшĕ пĕрле сăвăланă. Ку хайлавсем, тĕрĕссипе, мифла халапсен йышне кĕреççĕ. Вĕсене сăвăлас шухăша халăхăн ĕлĕкхи йăли-йĕркипе тĕпчеме кăмăлланă М. Шевле хускатнă, асамлă тĕнчери ĕç-пулăмсем Кореньковшăн илĕртӳллех пулман, çакна сăвăç пурнăçри пулăмсене реалистла курса сăнлама юратни ĕнентерет. Унăн юмахĕсемпе поэмисем ытти сăвăçсен пултарулăхĕпе пĕрле тăван поэзире пысăк калăплă жанрсене аталанса çирĕпленме курăмлă витĕм кӳнĕ.

«Авалхи çын сăмахĕпе» «Ашшĕ пилĕ» пирки çакна каласа хăвармалла: вĕсем халăх халапĕ тăрăх çырнă поэмăсем, вĕсен сюжечĕ пĕр, анчах 1906 çулхипе 1919 çулхи тĕслĕхсем пĕр-пĕринчен чылай уйрăлса тăраççĕ: сăвăç вĕсен персонажĕсен ячĕсене те улăштарнă, хăш-пĕр эпизодсене икĕ тĕрлĕ сăнласа панă (сăмахран, малтанхинче арăмне упăшки чиксе вĕлерет, кайранхинче хăваласа кăларса ярать), калăпăшĕпе иккĕмĕш варианчĕ малтанхинчен икĕ хута яхăн вăрăмрах. Çак сăлтавсене пула вĕсене икĕ хайлав пек пăхни йăнăш пулмĕ. Тата çакна та шута илмелле: малтанхине совет тапхăрĕччен çырнă, теприне çĕнĕ самана вăхăтĕнче сăвăланă. Литература кун-çулне çырмашкăн çаксене уйăрса пăхни те кирлĕ.

Г. Кореньковăн сăвăлла хайлавĕсем кӳршĕ халăхсен поэзийĕпе танлаштарса пăхма пуян материал кӳреççĕ. Акă пĕр-ик тĕслĕх. 1906 çулта чăваш поэчĕ «Эх, Турăçăм, Турăçăм!..» сăвăра çапла каланă:

Эпĕ Сан пек пулсассăн —
Ирсĕрленме памăттăм!
Сан пек вăйлă пулсассăн —
Çылăх çипне татăттăм!

Автор Турра çынсене иртĕхтернĕшĕн ӳпкелет, хăй курса тăракан тискерлĕхпе килĕшсе лармасть, халăх ĕненсе тăракан аслă хăватран сăмах тытма ыйтать. Çакнашкал хăюллă диалог пушкăртпа тутар классикĕн Маджит Гафурин те пур («Ахăр, Эсĕ çук, Аллах...», 1915). Унта та автор суя, тĕрĕсмарлăхшăн айăпламаншăн, ырă вăрлăх акманшăн Турра хытă сăмах калать. Сăвăçсем пĕр-пĕрне пĕлмен, пĕр-пĕри çырнине вуламан. Вĕсем хăйсен чун ыратăвне пĕр евĕрлĕ мелпе калани çеç вĕсене пĕр-пĕринпе çывăхлатать. Икĕ поэт çапла шухăшлани чылай халăхăн хуйхи-суйхи пĕр майлă пулнине кăтартать тата вĕсем пурнăçри ирсĕрлĕхе хирĕçленине пĕлтерет. Çак хирĕçӳ ĕмĕрхи çынлăхлă (гуманизмлă) курăнать, вĕсен тарăхăвĕ революционерсен вăрçăллă-аркатуллă çулĕнчен çапах та уйрăлса тăрать, пуçа ниçта чикме çуккипе иккĕшĕ те йăлăнса ӳкĕтлеççĕ, çăлăнăç çулне çакнашкал вĕрентӳре кураççĕ. Çакнашкал протест асăннă сăвăçсен ытти сăввисенче те сисĕнет: иккĕшĕ те вĕсем ăслă пек курăнса халăхăн ĕмĕрхи типтерлĕхне пăсакан пуянсене е тĕн çыннисене питлеççĕ, вĕсенчен тăрăхласа кулаççĕ. Кунта Г. Кореньковăн нĕрсĕр икĕ пит Плешйăранне М. Гафурин айван та вĕçкĕн муллипе танлаштарма пулать.

Чăваш поэчĕн тантăшĕ — тутар литературин классикĕ Г. Тукай — пурнăçри тĕрлĕрен пусмăрпа кĕрешнĕ сатирăпа вичкĕн усă курнă, çакă уйрăмах унăн поэзийĕнче палăрать. Сăвăç питлеве «усала усалпа намăс кӳмелли шанчăклă мел» вырăнне хурать. Акă унăн «Утă пасарĕ е Çĕнĕ Касăк пуç» поэми (1908) сатира жанрне тутар литературинче çĕнĕ шая çĕклет. Хайлавра автор пурнăç çĕнĕлĕхне йышăнман фанатиксенчен кулать: пасарти цирк паттăрĕ Карахмет çыннăн касăк пуçне те çĕклеймест, çав пуçра фанатизм пин пăт чухлĕ вырнаçнă иккен, унта кутăнлăх та, ухмахлăх та, вĕçкĕнлĕх те, хаярлăх та тем чухлех. Чăнах та, асра юлакан çивĕч танлаштару. Поэт уйрăм сăвăсенче

те, сăвăлла юмахсенче те тăрăхлав мелĕпе тăтăш усă курать. Хăй вăхăтĕнче çак туртăм чăвашсенчен шăпах Г. Кореньковăн уйрăмах вăйлă палăрать. Шăл йĕрсе-шахвăртса çырасси унăн сатира сăввисемпе юмахĕсенче çеç мар, лирикăра та канăçсăр тапса тăрать. Турă хăй патне рая пыракан ирсĕрленнĕ çынсене йышăнасшăн мар, хурала тăратнă салтака вăл ун пек çынсене «ĕнсерен тыттарса яма» хушать. Чухăн çын каччи хĕр пек тумланса тухса хăйне пуян ывăлне вăрлаттарать, качча илтерет («Ăс ухмаха çĕнтерет»). Г. Кореньков «Иванпа Хĕветле» поэмăра та çапла мелпе усă курать: йĕкĕт хĕрле тумланса хăйĕн савнийĕпе çывăхланать. Иккĕшĕнче те чухăн çын ывăлĕ пуянсем хăйне хисепе хуманран çапла хăтланать, хăюллă пулса вĕсене тавăрать, телейне тупать. Çакнашкал кулăшла лару-тăру, халăхра сарăлнă тавçăрулăх икĕ сăвăçăн татах та пур.

Сăмах май çакна та каламалла: Г. Тукайăн «Шурале», «Вутăш», «Качакапа Така» юмахĕсен сюжечĕсем чăвашсем хушшинче те пур, вĕсем çеçен хирте выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пурăннă халăхра вăл Хусан таврашне килсе вырнаçсан тин тутарланнă чăвашсем урлă сарăлнă пулас. Г. Тукай та, чăваш поэчĕ пекех, халăх юмахĕсене питех улăштармасăр сăвăлать. Сăвăланă юмахсен йышĕпе калăпăшĕ енчен илсен Г. Кореньков поэзийĕ чылай пуянрах.

Поэма жанрĕ пирки те çакнах палăртмалла: ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнче хамăр тăрăхри вырăс мар халăхсен поэзийĕнче чăваш поэчĕ чухлĕ пысăк калăплă хайлав çыракан пулман. Г. Кореньков пилĕк поэма çырма ĕлкĕрнĕ. Пĕлтерĕшĕпе тата пурнăçа анлăн сăнлас енĕпе вĕсем К. Ивановăн «Нарспи» поэми шайне çитеççĕ теме çук ĕнтĕ, анчах унта чăваш кун-çулĕн хăйне евĕрлĕ тĕрлĕ енĕсем ӳкерĕннĕ: пĕринче аптăранă чухăн хресчен пысăк укçа шыраса хулана çул тытать, иккĕмĕшĕнче мĕскĕне юлнă ял каччисем пуян таврашĕсене чавса тăршшĕ лартаççĕ, автор час-час эротикăллă ӳкерчĕксем тупма кăмăллать т.ыт.те. Унăн геройĕсем йывăр лару-тăрура аптăраса ӳкмеççĕ. Юмахсене сăвăлассипе поэмăсем çырассинчен ытларах поэт ăсталăхĕ лирикăра вăйлăрах палăрать. Пĕтĕмлетсе çапла каламалла: чăваш поэзийĕ ĕмĕр пуçламăшĕнче хамăр регионта малти вырăна тухать, çак ӳсĕмре Т. Кирилловпа, К. Ивановпа, Н. Шупуççыннипе, Н. Шелепипе пĕрле Г. Кореньков тӳпи те пысăк. Хăй вăхăтĕнче ун еткерне чăвашла тата вырăсла пичетлесе халăх хушшине сарнă пулсан, унăн ячĕ Раççейре К. Иванов, Г. Тукай пек

чыс илме ёлкĕрĕччĕ. Самана çил-тăвăлĕ вăл çырнисене нумайăшне пачах тупайми салатса пĕтерме те пултарнă, вăл кун чухлĕ упранни те пирĕншĕн пысăк телей. Малашлăхра çак пуянлăха Г. Айхи асăннă пек нумайййăн хакласа йышăнасса тивĕçлипех шанма пулать.

Г. Кореньковăн илемлĕ куçару ĕçĕ-хĕлĕ те уйрăм сăмаха тивĕçлĕ. Петĕр Хусанкай «Улмуççиллĕ Тĕрлемес» поэмăра çакна асра тытса ăна «Крылов тăлмачĕ» тесе ят панă. 1901—1928 çулсенче вырăссен паллă юптаруçине никам та чăвашла Кореньков чухлĕ куçарман. Ку ĕçĕн уйрăмлăхĕсенчен чи малтан çаксене палăртмалла. Крыловăн юптарăвĕсене «Чăваш кĕнекине» XX ĕмĕрччене кĕртсе пынă, унта вĕсене К. Ушинский Л. Толстой каласа панă тăрăх куçарса кĕртнĕ, В. Ислантьев 1822 çулта хăйĕн «Первая учебная книжка для совместного обучения чуваш и русских» кĕнекинче тӳрех автор тексчĕ тăрăх прозăпа куçарать. 1907 çулта А. Барановăн шкулти вулав кĕнекине чăвашла кăларнă.. Крыловăн унти юптарăвĕсене те прозăпа куçарса панă. Кореньков вара поэзи текстне поэзи чĕлхипех куçарма тытăнать, ку ĕçпе вăл темиçе тапхăр та тăрмашать. Силлабо-тоникăпа çырнă текстсене вăл малтанхи вăхăтра чăваш халăхĕн çичĕ сыпăклă силлабикипе ылмаштарать, çапла вăл вулакана ăнланма çăмăлрах пултăр тесе тăрăшать. 1928 çулта куçарнă «Мужик» тата «Хресченпе ун тарçи» юптарусенче оригинал калăпĕпе çеммине упраса хăварнă. Çакна вăл çав тапхăрта тăван поэзире силлаботоника чылаях çирĕпленсе пынăран шута илнĕ ĕнтĕ. Кунта тăлмач сăвă йĕркинчи сăмах сыпăкĕсене те авторăнни пек хăварасшăн тимлет. Çапла вăл хамăр сăвăхывăм аталанăвне шута илет. Калас пулать, силлабикăпа куçарнă чухне те хăш-пĕр вырăнта çичĕ сыпăкран сахалрах сăвă йĕркисемпе усă курнă. Чĕлхепе сăнарлăх тĕлĕшĕнчен те тăлмач ăнланмалла куçарас тĕллеве пăхăннă. Çакна И.Я. Яковлевпа унăн пулăшаканĕсен шкулĕ унччченех йăлана кĕртнĕ, унпа шкул кĕнекисенче çеç мар, Библие куçарнă чухне те усă курнă. «Наелась... до отвала» тет Крылов, ăна Кореньков «çурăлас патне çитнĕ-мĕн» тесе куçарать (пĕр вариантра «хырăмĕ урлă кайиччен» тесе витĕмлĕрех каланă). Тăлмач вырăс юптаруçин стильне упраса хăварас тесе ун пекех афоризмла чĕлхепе çырма тăрăшать, халăх сăмахлăхĕнче çирĕпленнĕ çаврăнăшсемпе те усă курать: «çавăнтанпа урине ярса пусман ун килне», «тăсса хурать урине», «мĕнпур май та ку ĕçре тӳсĕмре» т.ыт.те. Хăй вăхăтĕнче вулакансене çак ăсталăх

тивĕçтернĕренех Кореньков куçарнă юптарусем вĕренӳ кĕнекисенче пичетленнĕ, сцена çинче те янăранă.

Çакна палăртмалла: Крыловран куçарнă малтанхи тĕслĕхсене кайранхи текстсенчен уйăрса пăхмалла, вĕсем пĕр-пĕринчен питĕ уйрăлса тăраççĕ, вĕсене уйрăмшар куçару тесе хакламалла. Ку вăл литературăмăр аталанăвĕн тĕрлĕ тапхăрĕпе те çыхăннă: малтанхисем — революцичченхине, кайранхисем — çĕнĕ самана культурине кĕреççĕ. «Автанпа ахах пĕрчи» юптару пуçламăшĕн темиçе тĕслĕхне пĕр-пĕринпе танлаштарса пăхни çакна лайăх кăтартса парать:

Тирĕс купи кутĕнче
Автан çӳп-çап салатнă.
Тепле тирĕс хушшинче
Ахах пĕрчи тупăннă.

Автан чула курать те
Çапла калать ун çинчен:
«Мĕне кирлĕ ку ĕнтĕ?
Тĕлĕнеп эп çынсенчен...»

(«Хыпар» хаçат, 1906 ç., 9 №)

Кайран пичетлес умĕн Кореньков юптарăвăн чĕлхине пачах çĕнетет, унчченхи сăмах çаврăнăшĕсем, тӳрлетмесĕр хăварнă вырăнсем курăнмаççĕ, унта сăвă састашĕсене те çĕнетнĕ:

Автан вите умĕнчи
Тирĕс пуçне сирнĕ чух
Тем чирле пек çӳп çинчи
Ахах пĕрчи сирпĕн тух!
Хайхи автан çак чула
Пăха-пăха калаçать:
«Эккей, уссăр япала!
Ну, мĕн пур ун, мĕн парать!..»

(«Ĕçлекенсен сасси» журнал, 1924 ç., 4—5 №)

Кореньков çапла çĕнĕрен куçарнă юптарусен шучĕ самаях: сăмахран, 1906 çулта «Хыпар» хаçатра пичетленнĕ юптарусене тăлмач пиллĕкĕшне те тепĕр хут куçарнă. Малтанхи вăхăтра ирĕклĕрех, кĕскетерех, ансатрах куçарнă пулсан, кайран поэт оригиналти шухăшсене туллинрех те тĕплĕнрех палăртса хăварма тăрăшать.

Кореньковăн ытти куçарăвĕсем çинчен çапла пĕтĕмлетсе калама пулать. Тăван поэзире куçару ĕçĕ икĕ ĕмĕр чиккинче

кăна вăй илет. Ку енĕпе чи малтан Турхан Яккăвĕ уйрăмах палăрать. Çырулăх культурипе литература ура çине çирĕппĕнех тăрса çитмен лару-тăрура поэзи хайлавĕсене (сăвăсене, поэмасене, юмах сыпăкĕсене) малтан асăннă пек ансатлатса куçарнă, вĕсене прозăпа куçарни те сахал мар. Ун чухне куçарнă литературăна тăван чĕлхепе çырнинчен уйăрсах та кайман, çавăнпа урăх чĕлхерен куçарнă сăвă-юрăсен авторĕсене кăтартманни те пулнă. Кореньков та хăй Крыловран куçарнине «Хыпар» хаçатра ним те палăртман. Ку пулăм юптарусен тĕлĕшĕнчен унччене сарăлнă: Крылов та хăй юптарăвĕсен сюжечĕсене час-час Лафонтенран илнĕ. Çакăн пек ирĕклĕ куçарусенче тăлмач, хăй сăвăç пулнине кура, хăйĕнчен те чылай хушса çырнă.

Çавăн пек тĕслĕхсем Кореньковăн ытти хăш-пĕр куçарăвĕнче те палăраççĕ. Акă вăл Пушкинăн 1816 çулхи «Друзьям» сăввине куçарма тытăнать те унта каланă шухăшсене хăй шухăшкăмăлĕпе, пурнăçĕпе çыхăнтарать, вара сакăр йĕркеллĕ сăвă вырăнне вăтăр йĕркеллĕскер хывать. Хăй ăна вăл куçарусен шутнех кĕртнĕ, анчах куçару ĕçĕнчи хальхи йăла кун пек хайланă чăн-чăн куçарнă сăвă тесе хакламасть, çĕнĕ сăвă тесе йышăнать, ăна хушма ят пама сĕнет. Çавăнпа Кореньковăн «Юлташсене» ятлă хайлавĕ «А. Пушкин майлă» çырнă сăвă шутланать. «Чӳрече» сăвва та çапла хаклама тивет: Кореньков ăна Пушкинăн «Окно» сăввипе усă курса çырнă, хайлав калăпăшĕн çуррине хăйĕнчен хушса çырни йышăнать. «Уйăх» сăвва вара чăннипех куçару тесе шутлама сăлтав çителĕклĕ: унта тăлмач хăйĕнчен хушса çырни палăрмасть. Ку тĕслĕхсене те Кореньков чăвашсен яланхи çичĕ сыпăклă силлабикин виçипе куçарнă. Вырăс классикĕн лирикипе чăваш вулаканне паллаштарма тăрăшни, паллах, пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Пушкинăн «Пулăçăпа ылтăн пулă юмаххине» Кореньков хăй малтан, 1903 çулта, куçарса хунă пекех хăварнă пулас: ăна 1914 çулта урăх çĕре куçарса çырнă чухне якатса-юсаса хуман пек (хăш-пĕр кăнттамрах вырăнсем, вырăсла сăмахсем çаплипех юлнă пек) туйăнать. Унăн пуплев юххи те йывăртарах. Анчах çак юмаха куçарни чăваш поэтне поэзи тĕнчине çирĕппĕнех кĕме, сăвăлас ĕçе хăнăхма пулăшнахтăр. Ку юмаха Кореньков чăваш ачисене вуласа пама та пултарнă. Автобиографире вăл шăпах чăваш кĕнекисенче кунашкал хайлавсем çителĕксĕр пулнишĕн пăшăрханать, хăй те çавăнпах юптарусемпе юмахсем куçарма тытănни çинчен пĕлтерет.

Кореньков, кунсăр пуçне, Иван Никитинăн икĕ сăввине куçарнă. «Ыйткалакансем» ятлине 1907 çулта Тайăр Тимкки те

куҫарса хӑварнӑ-мӗн. Кунта вулаканшӑн уйрӑмах выҫӑпа аптӑракансемшӗн пӑшӑрханни вӗсене пулӑшма ӑнтӑлни хаклӑ. Иккӗмӗш сӑвви те («Ҫуртӑм ҫук ман...»), шӳт-кулӑш еккипе ҫырнӑскер, чухӑн ҫыннӑн хуйхи-суйхи ҫинченех. Ҫапла чӑваш сӑвӑҫи вырӑс поэчӗсем пултарулӑхӗпе усӑ курса тертлӗ ӗҫ ҫыннисен хутне кӗрет. Ку икӗ сӑввин илемлӗх уйрӑмлӑхӗсем малтанхи куҫарусенчи пекех.

Совет тапхӑрӗнче Кореньков, Крылов юптарӑвӗсемсӗр пуҫне, илемлӗ литературӑна сахал куҫарнӑ. 1920 ҫулсенче вӑл «Ҫутталла» вулав кӗнеки валли икӗ сӑвӑ куҫарса парать, 1944 ҫулта Джамбулӑн «Сталин» ятлӑ сӑввине куҫарать. Вӗсене поэзи куҫарӑвӗнчи пысӑк ӳсӗм теме ҫук. Юлашки хайлавӗ поэт казахсен паллӑ юрӑҫин пултарулӑхӗпе паллаштарнӑран паха, ҫитменнине ӑна халӑх поэзийӗн пуянлӑхӗпе лайӑх усӑ курса ҫырнӑ. Илемлӗ литературӑна куҫарнинчен ытла Кореньковӑн вӗрентӳ кӗнекисене куҫарма тивет. Чӑваш чӗлхин илемне туякан, ҫырав ӗҫӗн вӑрттӑнлӑхӗсене пӗлекен тӑлмачӑн ҫак ӗҫӗ, паллах, ӑнӑҫсӑр пулман. Ҫавӑнпах ӗнтӗ ӑна ҫак ӗҫе шанса панӑ, вӗренӳ кӗнекисем хатӗрлеме явӑҫтарнӑ.

Кореньков ал ҫырӑвӗсен чӗлхи тӗлӗшӗнчен ҫакна палӑртса хӑварни кирлӗ: сӑвӑҫ совет тапхӑрӗччен яланах Тӗрлемес енчи диалект уйрӑмлӑхӗсене туллин палӑртса ҫырма тӑрӑшнӑ, ҫакна ятарласа ҫапла туни уҫҫӑнах сисӗнет. Акӑ хӑш-пӗр паллӑрах сӑмахсен тӗслӗхӗсем; чулха, шукӑш, шӑпчӑк, тӑта, чие (чее), лармӑтӑм, юмра, куҫҫӳл, никҫан, кӑҫан, кӑш чух, вӗсем, ан ти, хулха, пахил, ешлӗ (ешӗл), уншӗн, ҫилен, куйлан, тӑмлам, таранччӗн, ӗтем (этем), вит (вӗт), шут (шӳт), тийӗн (тейӗн), кӑсем, мимми, ҫапа (ҫапла), мӗнтарӑн, каллах, ҫынӑн, йӑхрать, хуни (хунӗ), чис (чыс), кунӗ-ҫӗрӗ (кунӗн-ҫӗрӗн). Хӑшне-пӗрне икӗ тӗрлӗ ҫырни те тӗл пулкалать: луччӑ — луччӗ, пушшах — пушшех, ҫих — ҫех, хуна — хӑна (хӑвна), ҫӑмӑр — ҫумӑр, шуйтан — шайтан, ҫутти — ҫути т.ыт. те. Сӑвӑҫ турипе анат енчи калаҫусен тӗп уйрӑмлӑхне — анатрисен *у* сасси вырӑнне *о* сасса та упраса ҫырать: пор, чон, школ т.ыт.те. Литература чӗлхине хӑнӑхнӑ ҫынна кунашкал чӗлхепе ҫырни вулама та йывӑр. Ҫавӑнпа ҫыравҫӑ еткерне йышлӑ вулакан валли хатӗрленӗ чухне вырӑнти калаҫу паллисене катертсе пичетлеме тивет: вырӑнти калаҫу фонетикине литература чӗлхин виҫипе ылмаштарни вулакана хайлавӑн илемне курма ҫӑмӑллӑх кӳрет. Паллах, уйрӑм сӑмахсене (лексика диалектизмӗсене) ҫаплипех упраса хӑварни

вырӑнлӑрах: ӳлмерен (ӳлӗмрен), чей (чие), лентей (кахал) т.ыт.те.

Ҫыравҫӑн турипе анат енчи калаҫу паллисене ятарласа упрас, ӑна та литература чӗлхи шутне кӗртес туртӑмӗ XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнче чӑваш интеллигенчӗсем хушшинче самаях сисӗнкелет. Акӑ ҫав ыйтупа Роман Иванов 1903 ҫулта «Казанская газета» хаҫатра ятарласа статья пичетленӗ («Какое наречие необходимо в чувашских изданиях», ҫурлан 17-мӗшӗ). Гурий Комиссаров та хӑйӗн сӑввисене тури (вирьял) калаҫӑвӗпе ҫыра-ҫыра хурать. Асӑннӑ ҫынсем иккӗшӗ те Кореньковпа пӗрле Чӗмпӗрте вӗреннӗ. Поэтӑн тепӗр тусӗ те — Михаил Шевле — ҫавӑн пек шухӑшлӑ пулнӑ (вӗсем, кӳршӗ ялсем, халӑхӑн икӗ юмахне иккӗш пӗрле сӑвӑланинe маларах асӑрхарӑмӑр ӗнтӗ). Вӑл акӑ 1912 ҫулта Н.В. Никольский патне ку ыйтупа ятарласа ҫыру ҫырать: «Пирӗн Чӗмпӗрти чӑваш ҫырӑвӗнче «о» саспалли ҫок, чӑвашла ҫырма йӑлтах вӗренмен ҫынсемпе манран орӑх чӑваш ҫырӑвӗнче «о» ҫыраканни орӑх никам та ҫок, эпӗ она лайӑх пӗлетӗп, порте «у» ҫыраҫҫӗ, анчах вӑл тӗрӗс мар, чӑваш ҫырӑвӗнче «о» сас палли кирли ҫинчен эпӗ чӑн-чӑн «диссертация» ҫырнӑ». Малалла автор хӑйӗн Тифлисри адресне кӑтартать, чӑвашсене Кавказри халӑхсемпе танлаштарса ӳпкелешет: «Пирӗн чӑвашсем хӑйсен чӗлхине, хӑй йӑлине пӗртте хисеплеменнипе юратманни мана пит тӗлӗнтерет, уйрӑмах вӗсене конти Кавказ халӑхӗсемпе танлаштарса пӑхсан, конта грузинсем, арменсем, тотарсем темиҫе ҫӗр тӗрлӗ газетсем, журналсем, сӑвӑсем, кӗнекесем кӑлараҫҫӗ. Драматургически журналсем, учен[ые] благотвор[ительные] т[оварищест]восем» кашни вак-тӗвек халӑхӑн; пирӗн ним те ҫок, чӑвашла куҫарни леш тӗнчери порнӑҫран орӑх»[6]. Ӑнланма йывӑр мар: тӗнчене тухса курнӑ чӑваш ытти халӑхран юласшӑн мар, вӗсенчен тӗслӗх илсе хӑйне ирӗкрех туясшӑн, мӗскӗнлӗхрен тухса культурӑллӑрах пуласшӑн. Ҫав хӑйтӗллӗнлӗх, уйрӑм халӑх ирӗклӗхӗ шӑпах чӗлхе ыйтӑвӗ ҫине те, уйрӑм пысӑк диалект шӑпи ҫине те пӑшӑрханса пӑхма, ӑна хисепе хуман пек хаклама хистенӗ. Ҫитменнине, И.Я. Яковлев чӑваш литература чӗлхине анатри чӑвашсен калаҫӑвне тӗпе хурса ӗҫлеме тытӑниччен тӑван чӗлхепе тухнӑ кӗнекесене тури чӑвашсен чӗлхипе пичетлесе кӑларасси йӑлара пулнӑ. Илсе кӑтартнӑ пек тӗслӗхсем татах та пур, акӑ Хусанти учительсен семи-

[6] ЧПГӐИ ӐА, I, 231, 255—256 с.

нарийӗнче вӗренекен Турхан Энтри те чӑваш литература чӗлхине «о» сасса кӗртме кирли ҫинчен хӗрсе калаҫать (XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнче ҫав йӑлана чӗртес туртӑм палӑрать). Шевле ҫырӑвӗ ҫак туртӑм Раҫҫейри ирӗклӗхшӗн пыракан ун чухнехи юхӑмпа ҫыхӑннине систерет.

Кореньков шкулти вӗренӳ программисемпе кӗнекисем хатӗрлес тата меслетлӗх ыйтӑвӗсем тӑрӑх статьясемпе вӗренӳ хатӗрӗсем ҫырас ӗҫре те хӑйӗн литература ӑсталӑхӗпе усӑ курма тӑрӑшать. Ку енчен уйрӑмах вӑл кӗске калавсем ҫырнине палӑртмалла. Акӑ 1927 ҫулта сӑмах ӑсти букварь вӗреннӗ чухне тӗрлӗрен сас паллисемпе паллашнӑ май вулама, пӗлӗве ҫирӗплетме ятсӑр калавсем ҫырса панӑ. Вӗсенче автор ача-пӑчана, шкулти, ялти пурнӑҫпа, тавралӑхпа паллаштарать. Вӗсене усӑмлӑ, ансат чӗлхепе ҫырнӑ, пуринче те мӗн пирки те пулин ӑса (тирпейлӗхе, тасалӑха, ӗҫе т.ыт.те) вӗрентсе каланӑ. Ку калавсене унччен чӑвашла тата вырӑсла тухнӑ букварьсенчи тӗслӗхсенчен вӗренсе ҫырни тӳрех курӑнать. Акӑ вӗсенчен пӗри:

«Татьяна кӗнеке вуласа ларать. Амӑшӗ ҫыврать. Пӳртри сывлӑш йывӑрланнӑ пек туйӑнать. Татьяна калать: «Темме пирӗн чӳрече шӑтӑкӗ ҫук, халех уҫса ярӑттӑм та пӳртри сывлӑша уҫӑлтарӑттӑм», — тет.

Пӳртри сывлӑш пӑчӑланса ҫитсен чӳрече ҫинчи шӑтӑка уҫас пулать.

Тусан тухсан чӳрече шӑтӑкне уҫ. Тулти чӳрече уҫлать-и?»

Ҫак ӗҫе Кореньков каярах та туса пырать. 1939 ҫулта унӑн «Учебник русского языка для III класса» кӗнеки тухать. Унпа чӑваш шкулӗсенче вунӑ ҫула яхӑн усӑ курнӑ. 1947 ҫулта автор ӑна ҫӗнетет, хушса ҫырать. Унта кӗнӗ калавсем («Таня», «Кто где?», «Щенок», «Дети») малтанхи пекех ҫӑмӑл вуланаҫҫӗ. Кореньков чӑваш ачисене тӗрӗс те илемлӗ калаҫма вӗрентес ӗҫе явӑҫтарма вӑй хурать. Ку йышши калавсене хальлӗхе тӗплӗн палӑртман-ха. Кӗнекере калавсене кам-кам ҫырнине кӑтартман, унта вырӑс литературинчен (сӑмахран, Л. Толстойран) илнӗ тӗслӗхсем те пур. Ҫавӑнпа Кореньковӑн кун йышши хайлавӗсен пуянлӑхӗпе илемӗ ҫинчен туллин калама иртерех.

Ҫакна та палӑртса хӑвармалла: ҫырав ӗҫне чӑнласа пикенесси те Кореньковӑн шӑпах ачасем валли И. Крылов юптарӑвӗсене чӑвашла куҫарма тытӑннинчен пуҫланнӑ. А. Пушкинӑн юмахне чӑвашла каласа парасси те ҫав сӑлтавранах килнӗ-тӗр. 1915 ҫулта

сăвăç И. Паульсонăн вулав кĕнекинчи «Тĕлĕнмелле эмелçĕ» кĕске калавне куçарнă. 1926 çулсенче тухнă «Çутталла» кĕнеке (букварь хыççăн вулав кĕнеки) валли Кореньков паллă мар сăвăç (е сăвăçсен) сăввисене тата тĕрлĕрен вак-тĕвек статьясене куçарса панă. Вĕсенче ĕлĕкхипе хальхи пурнăçа танлаштарса кăтартнă, çут çанталăка сăнама вĕрентнĕ т.ыт. те. Çаксене шута илсен, вĕренӳ кĕнеки валли е ятарласа ачасем валли çырнисем Кореньковăн литература еткерĕнче самаях пухăнаççĕ, вĕсен пĕлтерĕшĕ пирки ятарласа калаçма та тивĕç пур. 1938 çулта сăмах ăсти арифметика задачникĕсем çинчен рецензи пичетлет, унта чĕлхе илемĕпе тасалăхĕ çинчен çивĕччĕн асăрхаттарса хăвармасăр иртмен. Хăйĕн ĕмĕрĕнче ытларах чăваш тата вырăс чĕлхи вĕрентнĕ çыравçă тăван сăмах шăпишĕн пăшăрханса тăмасăр пултарайман. 1945 çулта вăл хăй çамрăк чухне çырнă, ун чухнех «Хыпар» хаçатра тухнă сăввисене çĕнĕрен пăхса тухса якатать, тĕрлĕрен хрестоматисене кĕртме хатĕрлет.

Çакăн пек куçа курăнман ĕçĕ Г.Кореньковăн татах та пулнă-тăр, ăна малашне лайăхрах пухса пĕтĕмлетни, унпа усă курни кирлĕ. Çыравçăна астăвакансем каласа хăварнă тăрăх, поэт пьесăсем те, калавсем те çырнă. Хальлĕхе вĕсем тĕпчевçĕсен аллине лекмен, çавăнпа Кореньковăн прозипе драматургийĕ çинчен татăклăн пĕлтерме май çук.

## СӐВӐСЕМ

## ПИРӖН ЯЛ

Икӗ ҫырма хушшинче
Эпир ӳснӗ ял ларать.
Аслӑ урам варринче
Чиркӳ тӑрри курӑнать.

Ялӑн икӗ айккипе
Хурӑн ҫулӗ ҫаврӑнать,
Икӗ ҫырма тӑрӑшпе
Йӑмра ушкӑнь чашкӑрать.

Уйри калча тӑррисем
Вӗҫен ҫилпе хумханаҫ;
Вӗсем ҫинчи тӑрисем
Тырра курса савӑнаҫ.

Ешӗл калча хыҫӗнче
Хура вӑрман хумханать;
Хура вӑрман умӗнче
Ҫӗрти прахут шӑхӑртать.

Яла кӗрсен, тӗлӗнен:
«Тӗлӗк мар-ши ку ман?» – тен.
Пӗтӗм кил-ҫурт, юмах пек,
Ешӗл ҫулҫӑ та чечек!

*1901*

* * *

Вăрман кайса курам-ха,
Тĕрлĕ кайăк пур унта:
Пурте юрлаç, хускалаç,
Йăва тума тăрăшаç.

Пахчаналла тухам-ха,
Хурт ушкăнĕ пур унта:
Пурте кĕрлеç, сĕрлешеç.

Улăхалла утам-ха,
Вĕт лĕпĕшсем пур унта!
Ытла питĕ ырă-çке
Вĕсем çак май вăхчинче!

*[1902–1910]*

## САНТĂР КИЛЕ КАЙСАН

Эс кайсанах сирĕн кил
Начарланса юлчĕ-çке!
Эс пур чухне хуть те вил —
Пăхмасăрах çукчĕ-çке.

Сада кайнă чухне те
Пĕрмай унта пыраттăм;
Садран килнĕ чухне те
Ун çинеллех пăхаттăм.

Халĕ сирĕн пӳрт çине
Пăхассăм та килмест-çке.
Ăна курсан, куç çине
Алла хурас килет-çке.

Эсĕ кунта пур чухне
Çӳреме те аванччĕ.
Сана курсан чĕрене
Тем пек аван туйнатчĕ.

Эсĕ кунтан кайрăн та,
Хула хир пек курăнать;
Пур паллакан вырăнта
Такам çитмен пек туйăнать.

Халĕ ĕнтĕ çынсем те
Ют çынсем пек туйăнаç;
Ĕлĕк лайăх тĕлсем те
Халь кичемлĕ курăнаç.

Ĕлĕк хуйхă килсен те
Сана курса чарнаттăм.
Кăмăл йӳçсе çитсен те
Сана пăхса яраттăм.

Халĕ, хуйхă килсен те
Мана никам йăпатмасть.
Кăмăл йӳçсе çитсен те
Никам пырса пусармасть.

*1903, çăвăн 13-мĕшĕ*

## ÇУРКУННЕ

Акă ĕнтĕ çуркунне...
Иртсе кайнă кĕркунне
Çулçă тăкнă йывăçсем
Çĕнĕ çулçă кăларчĕç;
Вĕçсе кайнă кайăксем
Килсе юрла пуçларĕç.

Калчасем те аякран
Ешлĕн, ыррăн курăнаç;
Ачасем те урамран
Кунĕ[н]-çĕрĕ[н] таталмаç.

Уйăх, хĕвел, çăлтăрсем —
Пурте ăшшăн çутатаç.
Хĕр ипраçсем, каччăсем
Кĕлетсенче йăпанаç.

Пăхан — пурте савăнаç,
Пĕрне-пĕри юратаç...

Эс çеç пӳртре кунĕпе
Пуçу çинчен шухăшлан;
Чĕрӳ йӳçсе çитнипе
Куççульлуна юхтаран.

Хĕр пек чипер çуркунне!
Мĕншĕн эсĕ хăшшине
Савăнмалла тăватăн?
Мĕншĕн тепĕр йышшине
Хуйхă анчах паратăн?
Хĕр пек чипер çуркунне...

*1903*

## ÇУРКУННЕХИ ÇĔР

Пĕлĕт çинчи çăлтăрсем
Тем пек лайăх çутатаç;
Шурти ешĕл курăксем
Тем пек ыррăн хумханаç;

Вăрман çинчи уйăх та
Çĕре ыррăн çутатать;
Юман çинчи шăпчăк та
Тем пек лайăх янăртать.

Çапах маншăн çут тĕнче
Пĕртте лайăх курăнмасть;
Çапах çынсем хушшинче
Пĕртте аван туйăнмасть.

*1903*

## ХĂРУШЛА ÇУМĂР

Макăр, макăр, çанталăк,
Макăрмалли вăхăт халь!
Ӳкрĕ-ӳкрĕ куççуль-тăк,
Савăнмалли сахал халь!

Самани те латлă мар,
Кунĕ[н]-çĕрĕ[н] юн юхать.
Тырри-пулли пит начар,
Вăл та пулин хурланать.

Макăр, макăр, çанталăк!
Макăрмалли вăхăт халь.
Ӳкрĕ-ӳкрĕ куççуль-тăк,
Савăнмалли сахал халь.

*1905, утăн 10-мĕшĕ.*

* * *

Нумай усă тăван эс,
Хура, хăруш çанталăк!
Мĕнле чĕре çемçелмест!..
Чăнах та эс — рай алăк.

Эсĕ çиçĕм кăларсан,
Алă хĕрес хăй хывать;
Эсĕ папай алтарсан*,
Тута хăех кĕл тăвать;

Эсĕ аçа çаптарсан,
Чĕре Турра асăнать!
Çанталăк пит шăп тăрсан,
Этем Турра час манать.

Тата пушшĕ хуралăр,
Хура, хăруш пĕлĕтсем!

* Аслати авăттарсан.

Çын чĕрине хускатăр:
Чартăр усал ĕмĕтсем.

*1905*

## ӲПКЕ

Ытла хĕн-çке сывлăхсăр
Ку тĕнчере пурнасси.
Ытла хĕн-çке ним уссăр
Янкăлтатса çӳресси.

Тĕлĕнетĕп хамран хам:
Мĕншĕн начар-ха эп пит?
Мĕншĕн кун пек пит хыткам,
Мĕншĕн ӳсмен пĕрер шит?

Мĕншĕн мана питĕ ир
Лекрĕ тата тĕрлĕ чир?

Вăйлă пиçĕ çын пулсан,
Пĕр ĕçе те ямăттăм;
Çирен-пуçран чир кайсан,
Пӳртре пĕртте лармăттăм!

*1905, çурлан 11-мĕшĕ.*

* * *

Усал саспа çил шăхрать,
Йывăççене авкалать...

Ăна кура чĕре те
Лăпкă выртмасть, хускалать.
Тем чул ырă ĕмĕт те
Ĕмĕт хальлĕн çухалать...

Чакнă уйăх час тухмасть,
Тĕттĕм çĕре çутатмасть.

Тулта уйăх хураран
Пуçри шухăш та хура...
Ӳкет перо алăран...
Кĕл тăвам-ха, пĕр, Турра:

Чĕре пăртик лăпланми,
Пуçри шухăш çуталми?..

*1905*

* * *

**М.П.**

Санăн таса куçусем
Алмаз пĕрчи манерлĕ;
Нумай кунта ыр хĕрсем —
Эс пуринчен илемлĕ.

Чăнах, сана тĕл пулсан
Куçсем санран каяймаç.
Алă парсан, ал тытсан
Наян юнсем вылянаç.

*[1905]*

* * *

**М.П.**

Пĕлĕт çинчи çăлтăрсем
Шутсăр йышлăн çутатаç,
Анчах манăн куçăмсем
Пĕр çăлтăртан хăпăнмаç.

Ытла лайăх вăл çăлтăр,
Ытла ыррăн çутатать.
Ăна мĕн чул пăхса тăр —
Çапах сахал туйăнать.

Ăна пĕлĕт хупласан,
Пĕлĕте пит çил килет;

Чĕре: «Мĕншĕн хупăрлан?
Сирĕл, унтан, сирĕл!» — тет.

Çамрăк хĕрсем хушшинче
Шутсăр нумай чиперри, —
Анчах вĕсем варринче
Пĕрехçи пур чи хитри!

Тĕлĕнсе çеç тăратăн
Унăн сăнне пăхсассăн;
Мĕнле ăна Тур папай
Килсе панă ун пек пай!

Вăл хуть те мĕн тусан та —
Тем пек лайăх пулать ун;
Ăна кăшт çеç курсан та —
Сиксе вĕрет пĕтĕм юн.

Анчах чипер çăлтăра
Нихçан тĕплĕн курас çук:
Вăл утмăл хут минутра
Улшăнмасăр тăрас çук.

Эсир, çамрăк чипер хĕр!
Çак çăлтăрпа иксĕр пĕр.
Сан та чĕрӳ кашни кун
Парать, илет урăх юн.

Тин çеç пĕрне юратан,
Унтан ăна улштаран.
Илентерен, илĕртен,
Пистерме те ĕлкĕрен.

Анчах улшуç-çăлтăра
Çилленме те пĕлместĕн;
Хуть улшăнать çеккунтра —
Çапах кусна илместĕн.

Çавăн пекех сана та
Ним калама аптратăп.

Эс тепринпе пулсан та,
Сан ҫинеллех пӑхатӑп.

*[1905]*

* * *

**М.П.**

Мана эсӗ пуринчен
Авантарах туйӑнан:
Наччасрах эс сиккелен
Е туххӑмра йӑл кулан.

Чӑнах та, эс пур качча
Качча кайма юрӑхлӑ.
Ӑслӑ, ырӑ пул, ача,
Нумай пурӑн ырлӑхлӑ!

*[1905]*

* * *

**А.Н.**

Ытла нумай сар чечек
Ҫаран ҫинче хумханаҫ,
Анчах пурте пӗрин пек
Ман кӑмӑла каяймаҫ.

Шутсӑр ешӗл ларать вӑл,
Ытла хӳхӗм чечекки.
Тӑвайрасчӗ пуҫ кӑшӑль —
Сахал анчах ун пекки.

Ӑна татса каясчӗ —
Алӑ-ура ҫӗкленмест.
Пӳрте кӳртсе лартасчӗ —
Татма кӑмӑл ҫитеймест.

Пӑчӑ ҫӗрте лараймӗ,
Типсе кайӗ апӑрша.

Ирĕкрискер, чăтаймĕ
Ялти хĕрӳ сывлăша.

Хитре сăнне пĕтерĕ,
Чечеккине ӳкерĕ.
Ӳстĕр, ан тив, ирĕкрех,
Сĕм вăрманти хӳтĕрех!

Ан тив, ăна ăшă çил
Каçпа-ирпе хумхаттăр,
Турри патăр ыр пехил,
Усал çилтен сыхлатăр.

Ан тив, ăна каç пулсан,
Вăрман ăшĕ хуралсан,
Шăпчăк лартăр сыхласа,
Юррисемпе йăпатса.

*[1905]*

* * *

**[N]**

Карт суннине ĕненсен,
Кулянас çук сан çинчен.

Картсем тăрăх, эс мана
Питĕ хытă юратан.
Хам ăсăмпа эп сана
Апла тесе шутламан.

Карт калани чăн пулсан,
Чăнах та эп телейлĕ.
А тӳррипе каласан —
Картсем çĕршер чĕлхеллĕ.

*[1905]*

## ÇĔРЛЕХИ КĔЛĔРЕН

Ĕлĕкренпех ман чуна
Усал шухăш аптратать.
Эй, Çăлакан, çăл мана,
Хута кĕрсем, чун путать.
Эй, Сиона ахалех
Кураймансем! Ак сирех
Турă хурлăх кăтартĕ,
Ĕннĕ курăк пек хăртĕ.

*1906, кăрлачăн 14-мĕшĕ*

* * *

Эпир сана ку таран
Аван тесе пурăннă:
Нихçан сана хурламан,
Ялан сана ырланă.

Çын-мĕн сана хурласан,
Ялан кĕнĕ сан хута.
Пĕртик усал ят тухсан...
Ăна пĕлен эс ху та.

Анчах эсĕ хăвна ху
Пăсрăн, намăслантартăн.
Сан тăшману — сăмахху,
Чĕлхӳ пирки пăсăлтăн.

Мĕншĕн санăн çăвару
Хупна пĕлмест, тек карлать?
Мĕншĕн çук ун кăшт чару,
Мĕншĕн çынна пит касать?

Элĕ эсĕ ху тĕллĕн
Хăвна теме хуратна?
Аçу пупа кĕнĕрен:
«Эп пуп», — тесе калатна?

Ăнлан, айван, ку чухне
Атте ячĕ пулăшмасть.
Никам ку чух çынсене
Ашшĕпе хăратмасть.

Ку сăмаха лайăххах
Ăнланассу килсессĕн,
Вăл ĕç пулĕ наччасрах.
Ĕçне тăва пĕлсессĕн,

«Хурсем» çинчен вулайрăр,
Мĕн çырнине ăнлайрăр.

Вăл юмаха ăнлансан,
Тен, кăшт пăртак тӳрленен;
Хур пек пулма хăрасан:
«Атте ман — пуп», — тееймĕн.

Халĕ эсĕ час-часах
«Благородна» текелен,
А ĕçӳсем час-часах
Хушă «мужик» ĕçĕнчен:

Лайăх çынтан кулатăн,
Ырă ĕçех пăсатăн...

*1906*

* * *

**А.Н.**

Ку тĕнчере никам та
Мана сан пек юратман.
Ку таранччен эп хам та
Никампа та паллашман.

Сана курсан, тем чир пек,
Эпĕ чисти улшăнтăм.
Эсĕ маншăн — сар чечек:
Пĕрмай сана шăршлăттăм.

Çĕр пин чечек хушшинче
Сана таçтан куратăп;
Сана курсан, кашнинче
Пĕчик ача пулатăп.

Сана курсан пĕтĕм юн
Ӳт-тир тăрăх чупкалать;
Вара, сана курнă кун,
Пĕтĕм пуçăм пăтранать.

*1906*

* * *

**А.Н.**

Халĕ эпир пĕр-пĕрне
Пит юратса пурнатпăр —
Иккĕн пĕрле ларнине
«Райри» тесе шутлатпăр.

Халĕ эпир ал тытни
Пĕтĕм чуна хускатать;
Куçа-куçăн пĕр пăхни
Пĕтĕм юна вылятать.

Неуштă эс ӳлмерен*
Мана, тусăм, пăрахăн?
Неуштă эс çитĕнсен
Урăх çынна юратăн?

Неуштă эп ун чухне
Санпа пĕрле лараймăп?
Неуштă эп «хăй чунне»
Ăшă сăмах калаймăп.

*1906*

---

* Ӳлĕмрен.

## ЁÇЛЕМЕ ЧĔННИ

Ёçлес пулать, ачасем!
Ахаль ларма Тур хушман.
Намăс ĕçпе хуйхăсем
Пурте пулаç ĕç çукран.

Ырă ята шыракан
Çăкăр çитĕр тарĕпе;
Урам тăрăх чупакан
Нихçан кĕмĕ хисепе.

Ун ўркенĕр, ачасем!
Ёçленисем тек пĕтмĕç.
Пĕчĕкренех ĕçрисем
Ватăлсассăн аптрамĕç.

*1906*

* * *

**А.Н.**

Эпĕ сана пăхап та —
Тĕлĕнсе çеç тăратăп:
Сан пек хăйне уйăп та
Тытаймасть пуль пит тăп-тăп.

Эсĕ утнă çĕрте те —
Тĕлĕнмелле утатăн.
Кирек мĕнле ĕçре те
Чисти ăнран ярататăн.

Çитменнине, шăпчăк пек,
Ытла аван юрлатăн.
Сăнна пăхсан — эс чечек!
Илемленсе пыратăн.

Анчах ак мĕн аван мар:
Ытла эсĕ пит çамрăк.

Пире — ҫывăх сив масар,
Сан — пуҫланать ҫанталăк.

Мĕншĕн эсĕ тĕнчене
Кăшт маларах тухайман?
Мĕншĕн хăвна ҫынсене
Кăшт маларах кăтартман?

Эс пĕр-ик ҫул аслăрах
Пулсан, сана паянах
Эпĕ качча илĕттĕм,
«Эс ман!» тесе чĕнĕттĕм.

Эсĕ ӳссе ҫитнĕ чух,
Сана сăн-пуҫ кĕнĕ чух
Эпир как рас ватлăпăр,
Пур енчен те катлăпăр.

Вара санăн ман ҫине
Пăхассу та, тен, килмĕ.
Вара пирĕн йышшине
Сана пăхма килĕшмĕ.

Эсĕ ху пек йĕкĕте
Ху суйласа илĕн те —
Ăна пăхăн, юратăн,
Пире таҫта хăвалăн.

Вара... вара ман чĕре
Мĕнле ҫӳрĕ тĕнчере?
Эх, ан пултăр вăл инкек,
Пурнар пĕрмай хальхин пек!

*1906*

## ҪУМĂР

«Эх, пĕрĕхет, пĕрĕхет!
Епле ҫумăр пĕрĕхет!»

Тӳлек çумăр, чăнах та,
Ыррăн çăва пуçларĕ.
Пахчана та, уя та
Тин йĕпетĕ, лăм парĕ.

Эх, çу, çумăр, çу, çумăр!
Сана нумай кĕтрĕмĕр.
Халь те лайăх хăртăмăр,
Халь те нумай типрĕмĕр.

Çумăр çăвать, чарăнмасть,
Типнĕ çĕре шăварать.
Этем курса тăранмасть —
Çумăр шывпе çăвăнать.

Ача-пчи те юриех
Çумăр çине тухаççĕ.
Кĕписем те йĕп-йĕпех —
Хăйсем çапах чупаççĕ!..

Эх, çу, çумăр, çу, çумăр!
Сана кам-кам хавас мар!
Халь те нумай чăтрăмăр, —
Хуть халь килсе нӳр-лăм пар!

*1906, çăвăн 31-мĕшĕ*

* * *

**В.П.**

Санăн сăнна пăхсассăн —
Клеопатра темелле!
Патша ачи курсассăн —
Вăл та качча илмелле!

Эсĕ хитре ташлатăн,
Пит типтерлĕ ларатăн,
Калаçма та пĕлетĕн,
Пит кăмăла килетĕн.

Анчах пăртак куштанрах
Хăш чух кулса илетĕн;
Тата хăш чух туххăмрах
Сăлтавсăрах питлетĕн.

Эс çаксене пăрахсан
Ытла ырă пулăттăн.
Пиртен кулма чарăнсан
Нумай хисеп курăттăн.

*1906*

* * *

Хам аллăмпа хама хам
Тытса çурас килет ман.
Пĕтĕм ĕçĕм ман харам,
Пĕтĕм ял-йыш — ман тăшман.

Кала ĕнтĕ: çынсене
Мĕскер сиен тунă эп?
Ăнланмастăп вĕсене!
Ăнран каяп, тĕлĕнеп.

Никама та ку таран
Хирĕç сăмах чĕнмен эп;
Çын-мĕн хирĕç тĕл пулсан,
Кама калпак илмен эп?!

Вăйăм çитнĕ таранччен
Ырă тума хăтланнă;
Куллен, сассăм тытниччен,
Ача-пчине ăс панă.

Эй, этемсем, этемсем!
Сире нихçан юраймăн.
Талса пĕтĕç шăнăрсем —
Сиртен ырă кураймăн.

Ачăрсене сирĕнне
Хам ача пек вĕрентеп;

Айвансене, вĕсене
Ним тивмесĕр ăн кӳртеп, —

Эсир «спасип» вырăнне
«Ухмах» тесе калатăр.
Манăн çамрăк кунсене
Хуйхă кунсем тăватăр.

*1906*

## ЧЕЙ* ÇЫРЛИ

Эй, мăнтарăн чей çырли!
Кала-халĕ, кам валли
Шур кĕпеллĕ хĕрсем пек
Илемленсе ларан эс?

Кала, камшăн тытса тек
Çырлусене усран эс?

Сан чечекӳ авантан
Сана хуçса каяççĕ;
Çырлу ытла тутлăран
Сана тăлăх тăваççĕ.

Эй, мăнтарăн пурнăçăм!
Усă курман сывлăшăм!
Шухăшласа пăх-ха эс:
Чей çырли пек мар-и эс?

Эсĕ ытла шурăран
Сана пĕрмай хуратаç.
Санран ырлăх курнăран
Сана вăрçаç е хурлаç.

Чăт, тӳс, мĕскĕн чей çырли!
Çырлаллă пул... çын валли.
Эс те, чунăм, тĕреклен,
Усă кӳме ан ӳркен.

* Чие.

Чей çырлине, хăрсассăн,
«Çук-çке!» тесе тин калаç.
Сана чуну тухсан çеç
«Эккей!» тесе тин аснаç.

*1906, çу уйăхĕ*

## ЮЛТАША
### [Г. Комиссарова]

Такки пĕччен хам пӳртре
Писме çырап сан патна.
Тем çитмен пек чĕрере,
Тем чир шăнтать пек юна.

Те çанталăк сулхăнтан
Салху чуна хупăрлать;
Те юлташсем пулманран
Чĕре каслать, ăш вăркать.

Шутсăр пушă туйăнать
Пур пурнăçăм хăш чухне.
Майсăр хуйхă хупăрлать —
Курас килмест çынсене.

*1906*

* * *
### М.П.

Пур енчен те эс аван,
Пур енчен те пултаран.

Пирĕн ялта сан пекки
Иккĕ-виççĕ пур-темĕн...
Эсĕ Турă качаки —
Пĕрмай сиксе çӳретĕн.

Эсĕ лĕпĕш лĕпĕшĕ —
Вĕçсе анчах çӳретĕн.

Эсĕ хавас амăшĕ —
Пĕрмай шăлна йĕретĕн.

Эс сиренă евĕрлĕ:
Малтан çынна илĕртен
(Ун чух ытла илемлĕ),
Кайран чисти пистерен.

*1906*

* * *

**М.П.**

Эпĕ сана ку таран
Никамăн та мар тесе;
Çын каласа памасан —
Пурнаттăм-ха ĕненсе.

Мĕн шухăшпа ват çынна
Пит юратнă-ха эсĕ?
Кала, мĕнле сан чунна
Пит килĕшнĕ ун тĕсĕ?

Хăвăн айăп пур-ши сан,
Укçа хыççăн каятна?
Элĕ пĕтĕ пуласран
Часрах качча тухатна?

Элĕ эсĕ, ват çынна
Часрах качча тухам та
Çамрăк çынна ху кутна
Парам тетне мĕн тата?

Хуть те мĕнле пулсан та,
Ку ĕç сана килĕшмест.
Ун пек ĕçе нихçан та
Курман пирĕн Тĕрлемес!

*1906*

* * *

**Е.С.**

Эп сан патна нихçан та
Хуртсем патне пырас çук;
Эсĕ тем чул çырсан та,
Ман хӳрене тытас çук.

Эсĕ ăнлă пулсассăн,
Çын пек шăп çех лармалла.
Кала-халĕ, мĕн санăн
Писме пекки çырмалла?

Эсĕ чисти качака:
Сухал çăра — ăс сахал!
Санăн сутту пит тачка —
Анчах ăшĕ — пит кахал.

Неужели ку таран
Улталанса пурнан эс?
Ан кĕт мана, ан çыхлан!
Атту кулĕ Тĕрлемес.

*1906*

* * *

Эпир тунă çылăха
Епле Турри чăтать-ши?
Кун пек ирсĕр халăха
Епле тĕнче йăтать-ши?

Эпĕ Турă пулсассăн,
Çунтарса çеç ямалла;
Эпĕ тамăк пулсассăн,
Пĕр çăтса çех ямалла.

Ытла ĕнтĕ пит ирсĕр,
Ытла ĕнтĕ тем тăваç!
Ним çылăхне пĕлмесĕр
Выльăх пекех айкашаç!..

*1906, çурлан 6-мĕшĕ*

## ТĂЛĂХ АРĂМ

Унăн мĕнпур шанчăкĕ
Пусри тырă çинчеччĕ,
Анчах ани татăкĕ
Ытла-ытла кĕскелчĕ.

Ансăрне те ансăр вăл,
Хыттине те хытă вăл.
Акнă тырă ÿсмерĕ,
Пÿлме тĕпне кĕмерĕ.

Ани çинчен килнине
Çисе ярса пырать вăл,
Макаçейрен илнине
Куланая сутать вăл.

Малаллине асăнса
Куççулĕпе йĕрет вăл.
Ним тума аптăраса
Ыйткаласа çÿрет вăл.

Ун хыçĕнчен ачисем
Çăтăк-çурăк пыраççĕ;
Витĕр курнаç шăммисем...
Çăкăр хытти хышлаççĕ.

Пуян çынсем чей ĕçеç.
Тăлăх арăм ачисем:
«Анне, шыв çук пирĕн», — теç.
Эй, шеремет çыннисем!

Сире çутă тĕнчене
Хурлăх курмах янă пуль;
Вăрăм хутаç мăй çине
Турах çакса янă пуль.

Эсир мĕн чул йĕретĕр,
Сирĕн йĕни шутра мар.

Эсир мӗн чул ӗҫлетӗр,
Ҫапах эсир тутӑ мар.

Сире ҫынсем ҫапсан та,
Эсир ӑна чӑтмалла;
Сире мӑшкӑл тусан та,
Эсир ҫынна пӑхмалла.

Кашни сире, выльӑх пек,
«Эй, эй!» тесе ҫеҫ чӗнет;
Алӑк панчи шӑпӑр пек,
Хӑй аллинче ҫӳретет.

Хӑҫан Туррӑн ҫыннисем
Пӗр пек пулса ҫитӗҫ-ши?
Хӑҫан хутаҫ ҫакнисем
Ӑна мӑйран илӗҫ-ши?

Хӑҫан халӑх ҫутӑлса
Ҫӗнӗ ҫула кӗрӗ-ши?
Хӑҫан пӗр пек пурӑнса
Хирте пӗр пек ӗҫлӗ-ши?

*1906, ҫурлан 11-мӗшӗ*

## ВӐРӐ АРӐМ ЮРРИ

Ман упӑшка килте ҫук,
Килте манран асли ҫук.

Ачасем те макраҫҫӗ:
«Атте» темеҫ, «анне» теҫ.
Манран ҫӑкӑр ыйтаҫҫӗ,
Памасассӑн — ӳкрешеҫ.

Кӑҫалхи ҫул — ху куран —
Уйра тырӑ пулмарӗ.
Упӑшка та вырӑнтан
Пӗртте укҫа ямарӗ.

Мĕн тăвас тен, аптраса
Вăрра кайма илентĕм;
Çын сурăхне вăрласа
Вărттăн пусма вĕрентĕм.

Çын пек шурă çиесшĕн
Каччăсемпе çыхлантăм;
Пĕр çирĕм пус илесшĕн
Тутарпа та варлантăм...

Анчах мана сисрĕç те
Пунетейсем кăларчĕç;
Вăрланине пĕлчĕç те
Питрен сура пуçларĕç.

Пурте мана «вăрă» теç,
Пурте мана «лекрĕ» теç.
Епле илтем ку ята,
Епле пурнам ку ялта?

Упăшка та каçармĕ,
Халăх ахаль хăвармĕ.
Пуçран çапса шăтарĕç,
Кула-кулах пытарĕç.

Акă ĕнтĕ аптраса
Мăя петле тăхнатăп;
Хурамаран çакланса
Леш тĕнчене куçатăп.

Упăшкапа пурăнсан
Эп те кун пек вилмĕттĕм;
Çăкăр-тăвар пур пулсан
Вăрă ятне илтмĕттĕм.

*1906, çурлан 12-мĕшĕ*

* * *

Эх, Турăçăм, Турăçăм!
Пур-и эсĕ, çук-и эс?
Сана пĕрре вăрçăттăм,
Анчах вăрçма хал çитмест.

Мĕншĕн эсĕ çынсене
Ытла питĕ чармастăн?
Мĕншĕн эсĕ вĕсене
Пит ирĕке яратăн?

Эпĕ, сан пек пулсассăн,
Ирсĕрленме памăттăм!
Сан пек вăйлă пулсассăн,
Çылăх çипне татăттăм!

Пĕтĕм этем чĕрине
Вĕр-çĕнĕрен тăвăттăм,
Пĕтĕм çылăх шухшине
Пуçа кĕме памăттăм —

Çынсем манăн алăра
Усал тума пĕлмĕччĕç,
Хуть те мĕнле вăхăтра
Пĕр ырă çех тăвĕччĕç.

Ваттисене пчиккисем
Тайла-тайла çӳрĕччĕç,
Ясар, вăрă чĕресем
Вăл çылăха тумĕччĕç.

Никам урам варринче
Эрех ĕçсе ӳкмĕччĕ.
Святой ӳчĕ умĕнче
Çын карманне касмĕччĕ.

Вырсарни кун çитсессĕн
Хам чирĕке пухăттăм.

Чирĕк ăшне кĕрсессĕн
Кулкалама памăттăм.

Сан пек пулсан, кашнине
Пĕр пек татăк парăттăм.
Ытлашкине — çуккине
Пай памалла тăваттăм.

*1906, çурлан 13-мĕшĕ*

## АВĂН ПĂТТИ

Авăн çапса пĕтертĕм,
Автан пăтти пĕçертĕм!
Эй, тантăшсем, кильăрах,
Манпа пĕрле юрлăрах!

Уйри ĕçе пĕтерсе
Ĕнтĕ киле кĕтĕмĕр.
Авăн пăтти пĕçерсе
Пĕр сире çех кĕтрĕмĕр!

Килĕр, ларăр сак çине,
Çисе пăхăр çак пăтта,
Ан ятлăрах çуккине!
Савăнмалли пит çук та.

Çапах паян ĕçер-ха,
Тур папая пиллер-ха!
Тен, пирĕншĕн малашне
Çутă хĕвел тухĕ-ха.

Ĕçĕр, ĕçĕр, тăвансем!
Ан хуйхăрăр, тантăшсем!
Тен, эпир те ӳлĕмрен
Тухăпăр-ха тĕттĕмрен!

*1906, çурлан 14-мĕшĕ*

* * *

Ку таранччен ман куçсем
Ачашланса, шывланса
Никам çине пăхайман;
Ку таранччен тутасем
Кулкаласа вылянса
Пĕр çынпа та калаçман, —
Вĕсем, сана курсассăн,
Чăтаймарĕç пĕр саншăн.
Мĕншĕн эсĕ ун тери
Манăн пуçа çаврăртăн?
Мĕншĕн эсĕ, аякри,
Хамăр ял пек курăнтăн?
Мĕншĕн халь те хăлхара
Санăн сассу тăрать ман?
Мĕншĕн халь те асăмра
Эсĕ пăхни каяйман?
Ытла эсĕ чипер-çке,
Ытла сассу çемçе-çке!
Сана «тусăм» темелле,
«Çăлтăр» тесе чĕнмелле.

*1906, çурлан 30-мĕшĕ*

* * *

**Д-на**

Ялан сана астуса
Сана çыру çыратăп.
Пĕтĕм чунтан юратса
Пысăк салам яратăп.

Эпĕ сана тахçанах
Пит юратса пурнатăп.
Пĕрмай хĕвел тухсанах
Санăн ятна аснатăп.

Эс пур енчен те аван:
Ĕç панче те пултаран,

Чиперне те чипер хĕр!
Сан пек хĕрсем ялта пĕр.

Уттусем те илемлĕ,
Кĕпӳсем те тирпейлĕ.

Эсĕ хура чăлхапа
Кăвак кĕпе тăхăнсан,
Шăтăклана саппунпа
Пурçăн тутăрсем çыхсан, —

Тепĕр вырăс хĕрĕ те,
Чăнах, сана çитеймĕ.
Хаклă чулăн тĕсĕ те
Сан сăн-пуçна çĕнеймĕ.

*1906*

* * *

**Д-на**

Ăмма эсĕ вăл тери
Ман ăн-пуçа тăлларăн?
Ăмма пĕтĕм мимери
Шухăшсене пăтратрăн?

Хуть те мĕнле ĕçре те —
Пĕтĕм шухăш сан çинче.
Кирек мĕнле çĕрте те
Эс çеç куçăм умĕнче.

Санăн кăвак куçусем
Мана витĕр касаççĕ;
Санăн хура чăлхусем
Чисти ăнран яраççĕ...

Санăн пыл пек тутусем
Майсăр ыррăн кулаççĕ.
Кăкăрупа аллусем
«Ыткăн» тесе калаççĕ.

Анчах эпĕ сан патна
Çывхарма та вăтанап.
Те юратан эс мана,
Те çук — çавна шухăшлап.

*1906*

* * *

**Д-на**

Ангел сăнлă N-е,
Ăмма эсĕ ман ратне?
Ăмма эсĕ тĕнчене
Урăх ялта тухман, э?

Мĕн чул эпĕ сан çинчен
Çыра-çыра мухтанă,
Мĕн чул эпĕ пĕр-пĕччен
Саншăн йĕнĕ, куляннă.

П[е]тĕр сана юратсан
Вилнĕ çын пек çӳреттĕм;
Вырăн сарсан, каç пулсан,
Вырта-вырта йĕреттĕм.

Сана эпĕ темрен те
Паха хунă, юратнă;
Саншăн такам хĕрне те
Качча илмен, пăрахнă.

Манăн мĕнпур шухăшăм
Пĕр сан çинче тăратчĕ.
Эсĕ пултăн ман Туррăм,
Эс ангелтан пахаччĕ.

Эс каланă сăмаха
Эпĕ теме хураттăм!
Сана пăхнă «ухмаха»
Тамăк тĕпнех яраттăм...

Ку тӗнчере, чӑнах та,
Сана ман пек юратни
Пулас та ҫук, пулман та.
Ӑҫта ман пек чуп туни?

*1906*

* * *

**Д-на**

Винават эп, ан ҫиллен:
Сана каччӑ тупнӑччӗ.
Вӑл чӑнах та сан ҫинчен
Питӗ нумай мухтатчӗ.

Ху та пӗлен, ун чухне
Вӑл ҫын хӑй те «чӑвашчӗ».
Вӑл ун чухне сан ҫине
Питӗ ӑшшӑн пӑхатчӗ.

Эй, N-й, N-йе!
Ку чухне ҫын пит чие*.
Ку чухнехи этеме
Чӗрне тӑрӑш ан ӗнен!

Ан ӗмӗтлен ӗненме, —
Ҫук ним усси вӗсенчен!

Вӗсем ҫынна лартасшӑн —
Вара тарса каясшӑн.

Эсӗ ӑслӑ пулсассӑн,
Урӑх ҫынна тух та кай, —
Луччӑ ырӑ пурӑнӑн,
Луччӑ пиллӗ Тур папай. ...

Вӗсем сана илӗртеҫ,
Вӗсем: «Качча илеп», — теҫ.

---

* Чее.

Чăнах вĕсен сăмахĕ —
Паллас та çук: йыт пăхĕ.

*1906*

* * *

Ача-пчана пĕр сăмах
Ăнлантарса каличчен
Луччă хăвна пус та прах,
Луччă рая кĕрен, тен.

Эсĕ ăна ыр сунса
Ăшă сăмах калатăн —
Вăл каялла çаврăнса
Санранах тем... куласшăн!

Эсĕ унăн чĕрине
Пысăк çын пек тăвас тен,
А вăл сана — чĕлхине
Йăлт! тăсать çăварĕнчен.

Ăна эсĕ ăс паран,
Тĕплĕ пулма вĕрентен, —
Вăл е паян, е ыран,
Вăтантарать çынсенчен.

Эх, ача-пча, ача-пча!
Ытла ухмах-çке эсир.
Сире пурте — укăлча.
«Каç» пулин те сире «ир».

Эсир хăвăр тунине
Лайăх хăвăр пĕлместĕр.
Ырă сунан аллине
Халĕ ним те сисместĕр.

*1906*

* * *

Ку яхӑнта темшӗн ман
Пӗтӗм чӗре пушанчӗ.
Хавас сӑмах ҫӑвартан
Таҫта тарса пытанчӗ.

Хӑлха янрать, куҫ хупнать,
Чӗлхе-ҫӑвар тытӑнать;
Алӑ-ура ҫыхланать,
Чӗре пӗрмай кӑртлатать.

Йӗри-тавра мӗскер пур —
Пурте ирсӗр курӑнать.
Ырлӑх ту та — хӗн-хур кур!..
Эх чун, ача, хурланать!

Туррӑн тӗнчи темшӗн вӑл
Ытла пушӑ, пит хӑвӑл.
Мӗншӗн пирӗн пурнӑҫра
Пӗтӗм вӑхӑт асапра?

Мӗншӗн пирӗн чӗрере
«Ах, ах!» тени ытларах?..
Пурнӑн-пурнӑн тӗнчере —
Вилсе кайӑн хуйхӑпах...

*1906, чӳкӗн 2-мӗшӗ*

* * *

Пули-пулми этемпе
Рескел* пырса ан ҫыхлан:
Эсӗ ун пек ҫынсемпе
Намӑс тупан, хур куран.

Ун пек ҫынна яланах
Тарт, сир часрах хӑвӑнтан,
Мӗншӗн тесен «сурханах»**
Ялан тӑшман пулать сан.

* Ытла, ытлашши.
** Ҫӗтӗк тумтир тӑхӑннӑ ҫын.

Вĕсем пире тĕнчере
Мĕн чул хурлăх кăтартаç!
Ырă курнă чух пире
Мĕн чул шăтăк чакалаç!

Вĕсем пирки сан куçран
Мĕн чул куççуль юхать пуль!
Вĕсем пире пăснăран
Мĕн чул кун-çул катлать пуль!

Тӳсен çапах, чăтатăн,
Йӳç куççульна çăтатăн.

*1906, чӳкĕн 30-мĕшĕ*

* * *

Тем пек лайăх юлташах
Сиен кӳме пултарать;
Вăл каланă пĕр сăмах
Пĕтĕм чуна ярт! касать.

Тем пек лайăх çынна та
Шанса сăмах ан кала.
Чăн çывăх çын пулсан та
Сăмаххуна пит чухла.

Вун сăмахран çиччĕшне
Ху ăшăнтан ан кăлар;
Виççĕшĕнчен иккĕшне
Итту трук ан персе яр.

Юмăш* сăмах пĕр тухсан,
Унтан саккăр тăваççĕ.
Çитменнине, май пулсан,
Ырă ятне пăсаççĕ.

*1906, чӳкĕн 30-мĕшĕ*

---

* Йăнăш.

* * *

**А.С.**

Мĕншĕн эсĕ ман çине
Лайăх хăйса пăхмастăн?
Мĕншĕн куçу хĕррине
Ман çинелле ямастăн?

Ялан эсĕ, эп пырсан,
Аяккалла таратăн.
Эпĕ санпа калаçсан
Шав çĕрелле пăхатăн.

Эс хăймантан эпĕ те
Питех хăйса каймастăп.
Тем пек кулас килсен те
Хама чарап, кулмастăп.

Çавăнпа та кашнинче
Хавасланса пулаймасть.
Сăмах чĕлхе вĕçĕнче
Тăрать-тăрать — тухаймасть.

Пурте вара чĕнмесĕр,
Чĕлхесĕр пек ларатпăр.
Нимĕн тума пĕлмесĕр,
Папироссем туртатпăр.

Эсĕ пĕртик кулсанах
Каçса кайса кулатпăр.
Санран сăмах тухсанах
Юмахлатпăр, шавлатпăр.

Ахаль те вăл, хĕрарăм,
Арçынсемпе калаçсан,
Чăнах та вĕт — ак Туррăм —
Пĕтĕм чунтан юмахлан.

Хĕрхен пире, А.С. тус!
Чĕлхесĕр пек ан тусам.
Атту эпĕ, хуть те пус,
Вăтанатăп хамран хам.

*1906*

* * *

**А.С.**

Пурна киле эс те, тен,
Тухса ӳкĕн чĕререн.

Пурна киле, тен, санран
Эпĕ хамах сивĕнĕп.
Санран чипер хĕр курсан
Ют хĕр хыççăн вирхĕнĕп.

Луччă ун пек пуличчен
Халех сивĕт хăвăнтан.
Луччă кайран йĕриччен
Халех сур эс ман куçран.

Ху та куран, эп сана
Пит юратса пурнас çук.
Вăл-ку енчен эс мана
Пит нумаях шанас çук.

Халь эп сана, чăнах та,
Пĕтĕм чунтан юратап;
Эп халь кирек хăçан та
Санăн ятна асăнап,

Мĕншĕн тесен ман куççем
Тĕнче тухса курайман,
Санран ытла сăн-пуççем
Хальччен мана тĕл пулман.

*1906*

* * *

Çыннăн пĕтĕм пурнăçĕ
Элек çинче тăрать-мĕн.
Ку чухнехи çын ĕçĕ
Çын çини çеç пулать-мĕн.

Ăçтан-чиртен* тĕнчене
Элек тухса кайнă-ши?
Кам таврашĕ вĕсене
Пирвай кларса янă-ши?

Вĕсем мĕн чул этеме
Çын хушшинчен кăларас;
Мĕн чул çынна ĕçлеме
Пăрахтарас, пăтратас!

Вĕсем пирки мĕн чул çын
Хăй пурнăçне пĕтерет;
Пĕр сăмахшăн миçе пин
Пурнас çулне кĕскетет!

Эй, элексем, элексем!
Хăçан вĕсем пĕтĕç-ши?
Хăçан элеклекенсем
Чĕлхисене çыртĕç-ши?

*1906, раштавăн 8-мĕшĕ*

* * *

**Е.С.**

Шалккă сана, N-нĕ!
Ытла сана хĕрхенеп.
Эсĕ «друг мой» тенĕ, —
Эпĕ санран сивĕнеп.

Ăмма эсĕ тĕнчере
Манран лайăх çын тупман?..
Çунать, çурлать ман чĕре,
Куçран куççуль тухать ман...

Сана качча илес мар —
Ытла шалккă туйăнан.
Саншăн вара эп — масар,
Вара...ĕмĕр ылханан.

* Ăçтан-муртан.

Сана качча илсен те,
Каллах та ҫав ниепле.
Эсӗ «ӑмма?» тейӗн те...
Ӑнла эппин, илтеле*:

Эпӗ кун чул пурӑнса
Сана пӗртте юратман.
Сана эпӗ тӗл пулса
Нихҫан ӑшшӑн ал тытман.

Пӑрах мана, ан юрат!
Хӑвӑн чунна ан хускат.
Ан йӗр маншӑн, ан куйлан —
Пуҫра урӑх хӗр пур ман.

*1906*

* * *

**Л-вӑсене**

Ӗлӗк сире эпӗ те
Мухта-мухта ҫӳреттӗм,
Кирек мӗнле тӗлте те
Калпак илсе иртеттӗм.

Вӑл вӑхӑтра хӑвӑр та
Усал марччӗ, лайӑхчӗ.
Вӑл вӑхӑтра алӑ та
Сире хӑйех тӑслатчӗ.

Халӗ эсир шуйттан пек
Элеклеме пуҫларӑр.
Хӑвӑр тӗллӗн мана тек
Мӑшкӑллатӑр, хурлатӑр.

Тӗрӗссипе хурласан,
Тата тӳсме пулӗччӗ;
Сӑмахӑрсем тӳр пулсан,
Хурлани те юрӗччӗ.

* Итле.

Анчах сирĕн чĕлхĕрте
Пĕр тумлам та чăнни çук.
Çитменнине, чĕрĕрте
Хĕрхенесси-мĕнни çук.

Пурте пĕрех сирĕншĕн:
Хуть вилтĕр çын, хуть пĕттĕр...
Çынна инкек килсессĕн —
Эсир «дай Бог» теетĕр.

Эй, пăсăлнă чĕресем!
Сире ытти хурлатăр.
Эй, намăссăр чĕресем!
Сиртен кулма Тур патăр.

Эпĕ сиртен тӳснине
Тепĕр йытă ан тӳстĕр!
Эпĕ сиртен илтнине
Тепĕр вăрă ан илттĕр!

*1906*

## I

Пуçра шухăш нумай та,
Пула пĕлни пит сахал.
Тăвас ĕçсем чылай та,
Алă-ура пит кахал.

*1906*

* * *

Вун ик апостол хушшинчен
Иуда çеç Иисуса,
Ăшне Диавол кĕнĕрен,
Пырса тыттарнă чуп туса.

*[1906]*

## II

Пуҫра шухăш нумай та —
Алă-ура ҫаврăнмасть;
Ҫырас шухăш чылай та —
Юраллă стих тухаймасть.

Мĕншĕн пирĕн ку таран
Поэт пекки пулман-ши?
Мĕншĕн пирĕн хушăран
Стихотворец тухман-ши?

Мĕншĕн чăваш ҫыннисем
Катăк пулса тăратпăр?
Мĕншĕн ҫыраҫ ыттисем,
Мĕншĕн эпир ҫывратпăр?

Мĕншĕн пирĕн чăвашран
Пушкин пекки пит сахал?
Мĕншĕн хăраҫ ҫырасран,
Мĕншĕн пурте пит кахал?

Кашни пĕртик ҫырсан та,
Чылай стихсем тухмалла;
Пĕр кĕнеке пулсан та,
Чылай усă памалла.

Рад бы тепри ҫырĕччĕ,
Тен, Пушкин пек пулĕччĕ,
Анчах ҫырма ҫул ҫукран
Ӳкет пери алăран.

Мĕн чул пирĕн ҫавăн пек
Ăслă ҫынсем пĕтеҫ пуль?
Хай «талантсем» тенĕ пек,
Мĕн чул ăссем ҫĕреҫ пуль?

*1907, уттăн 17-мĕшĕ*

* * *

Каçхи пĕлĕт тап-таса,
Кирек ăçта çăлтăрсем.
Уйăх тухать çутăлса,
Шăп çеç тăраç йывăçсем.

Таçта ялăн вĕçĕнче
Ал купăссем выляççĕ.
Вĕсем мужик аллинче
Чисти çын пек калаççĕ.

Савăнăç та пур унта,
Хуйхи тата ытларах...
Тата таçта, хыçалта,
Ал купăсран шалккăрах:

«Тиек йытти тил тытать,
Тил тытса та юраймасть.
Пуп кушакĕ пул тытать,
Пул тытса та юраймасть...» —

Тенĕ юрă илтĕнет.
Шухăшласа пăхан та —
Куççуль тухать, чун йĕрет,
Чĕре выртмасть вырăнта.

Чăнах, хресчен пурнăçĕ
Ытла-ытла пит йÿçĕ.

*1907*

## ЧĂВАШ ПУРĂНĂÇĔ

Ĕçлет чăваш лаша пек,
Пÿрчĕ çапах вите пек.

Питне çăвать кушак пек,
Çапах сăмси упте пек.

Çăкăр çиет тăварпа,
Çапах анрать хăй варпа.[...]

Матрӳшкепе чей ёҫет,
Ҫапах та хӑй снай чӗкрет.

Тапак туртать чӗлӗмпе,
А хӑй аптрать ӳслӗкпе.

Яшка ҫиет какайсӑр,
А хӑй ҫапах тӑм-вӑйсӑр.

Эрех ёҫет чашӑкпа,
А хӑй выртать мухмӑрпа.

Ёҫне ёҫлет ҫимесӗр,
Чирлет хӑй чир лекмесӗр.

Лашине те пӑтратмасть,
Лаши ҫапах туртаймасть.

Лекӗре* те ҫӳремест,
А хӑй ҫапах чӗрлеймест.

Матки те ун ним мар ҫеҫ,
Ҫапах ачи паклак ҫеҫ.

Школсемпе те айланмасть,
Ҫапах ӑслӑ пулаймасть.

Тӗнче тухса та курмасть,
Ҫапах кукши тасалмасть.

Кмака ҫинче ҫеҫ выртать,
Ҫапах мулӗ саланать.

Хӑй пахчине хӑй ҫимест,
Хӑй чут выҫӑ вилеймест.

Ҫуркуннепе кӗркунне
Пит атӑ та тӑхӑнмасть,
Ҫапах та хӑй сив чирне
Никак хуса яраймасть.

---

* Тухтӑра.

Пур пек çăмне тутара
Сутса ярать шеремет,
Çапах сивĕ вăхăтра
Чавси вĕçне тăм илет.

Пуçпа ĕçлес çĕрте вăл
Пит ванни те курăнмасть,
Çапах унăн пуç хăвăл:
Ним тусан та, ним тухмасть.

*1907, çурлан 19-мĕшĕ*

## ЧĂВАШ

Ăçтан тухнă эс, чăваш,
Кам пулнă сан аслаçу?
Кирек ăçтах эс «не наш»,
Кирек ăçтах ятлаçу,

Усал сăмах илтен эс.
Тата хăш чух, лаша пек,
Чылай патак çиен эс.
Пăхсан эс те этем пек:

Этем пекех тăхнатăн,
Этем пекех çиетĕн;
Çын пек суха тăватăн,
Çын пек вăрçса çӳретĕн,

Çапах сана хисеп çук,
Пĕрмай эсĕ ларчăкра,
Кирек ăçтах эс «Ванчук»,
Кирек ăçтах тарçăра.

Мĕншĕн эсĕ кăшт пăртак
Шухăшласа пăхмастăн?
Мĕншĕн эсĕ тăм ашак,
Мĕншĕн куçна уçмастăн?

Кала-халĕ, мĕн пур сан?
Аслă школсем пур-и сан?

Театтăрсем пур-и сан?
Прахут-лодка пур-и сан?

Кĕнекӳ те тахçанах
Тинĕс çинче çĕрнĕ сан.
Тăм ухмах эс, тăм ухмах,
Этем пулаймĕ санран.

Пăртак ăслă пуçлисем
Çĕн кĕнеке кăларчĕç.
Ун çинелле, путсĕрсем,
Çаврăнса та пăхмарĕç.

Каллех санăн кĕнекӳ
Тирĕс айне варăнчĕ.
Вăл пулнăччĕ сан ӳпкӳ,
Вăл сан чуну пулнăччĕ.

Унпа сывлăш çавраттăн,
Пуçна чылай уçаттăн.
Ĕнтĕ каллах пăчăхрăн,
Хура куçлăх тăхăнтăн.

Пĕрмай кун пек пурăнсан,
Чисти пĕтĕн эс, чăваш.
Ĕçпех тинкӳ тухĕ сан,
Пушшех пулăн эс «не наш».

Мĕскĕн чăваш этемми,
Мĕншĕн санăн пуç мими
Çын мими пек вылянмасть,
Мĕншĕн хăйшĕн тăрăшмасть?

Кала, кама шанан эс?
Е Турăран кĕтетне?
Ăнлан, Турă пит йĕмест,
Пĕлет хăйĕн пĕлĕтне.

Малтан пултăр сан кăмăл, —
Вара килсе парĕ Вăл.

*1907, çурлан 19-мĕшĕ*

* * *

Мĕншĕн пирĕн маларах
Ăслă çынсем пулман-ши?
Мĕншĕн халь те майлăрах
Ăссем пĕртте тухмаç-ши?

Мĕншĕн пирĕн çул йĕрсĕр,
Кăтрашкаллă, хуп-хура?
Сулланан ним пĕлмесĕр.
Тĕттĕм карнă йĕр-тавра.

Суккăр çын пек такănса
Урлă-марлă çӳретпĕр;
Ӳсĕр çын пек анраса.
Пĕр пуссанах ӳкетпĕр.

Килтĕрччĕ хуть пĕр этем
Çӳллĕ çутă çуртипе.
Палăрĕччĕç алăксем
Унăн лăпкă çутипе.

Тӳрех тимĕр алăкран
Уçĕччĕç те тухĕччĕç;
Çут çанталăк курнăран
Темĕн тĕрлĕ савнăччĕç.

Пурнăç та çĕнĕрен
Шыв пек тăрă юхĕччĕ,
Çĕнĕленнĕ çынсенчен
Пысăк ăста тухĕччĕ.

Тăрăшар-ха çапах та,
Тухăпăр, тен, çутталла.
Хутте йывăртарах та —
Ним тума... ут малалла!

*1907*

# ÇĔРĔ

Пурна киле эсĕ те
Манса кайăн юлташна.
Ют çын качча илĕ те,
Ман сăн кĕмĕ сан пуçна.

Халĕ эпир иксĕмĕр
Ытарайми пуранни,
Телей курса çур ĕмĕр
Пĕртăван пек ирттерни.

Сана аса килмĕ те.
Пăх-ха эсĕ пĕлĕте:
Паян таса, хĕвеллĕ, —
Ыранах вăл тĕтреллĕ.

Тен, пирĕн те пуранăç
Çавăн пекех пырать-и,
Çамрăк чунлă савăнăç,
Тен, ватăлсан, тарать-и!

Çавăнпа та эп сана
Çак ылтăна паратăп...
Тен пулăшĕ вăл мана:
Эп ун çине шанатăп.

Чылай вăхăт иртсессĕн,
Эп манăçа кĕрсессĕн,
Тен, эс ăна курăн та
Ху юлташна асилĕн;
Ĕлĕкхине чухлăн та
Пĕр куççульна ӳкерĕн.

*1907, юпан 27-мĕшĕ*

* * *

**А.Н.**

Тин çеç кайăк вăрмантан
Вĕçе-вĕçе килетчĕ;
Тин çеç сасси кантăкран
Манăн пӳрте кĕретчĕ...

Ун юррипе ман чĕре
Хуйхăсене манатчĕ;
Ку асаплă тĕнчере
Асап çук пек туйнатчĕ...

Анчах сив çил вĕрчĕ те —
Ешĕл тĕнче саралчĕ;
Кайăк сивве сисрĕ те —
Ăшă çĕре каяйчĕ.

Мĕншĕн эсĕ, çанталăк,
Час улшăнса, час шăнтăн?
Мĕншĕн эсĕ, сар кайăк,
Час пăрахса, час кайрăн?

Юрăсемпе кам ĕнтĕ
Хуйхăсене пусарĕ?
Хĕн-хур килес-мĕн тĕлте
Кам йăпатма пултарĕ?

Мĕншĕн тăран, сивĕ юр?
Мĕншĕн часрах каймастăн?
Кунта санăн мĕн ĕç пур?
Мĕншĕн нумай шăнтатăн?

Кил хăвăртрах, çуркунне!
Илсе кил вăл кайăка.
Каллах илтем юррине,
Уçам каллах кантăка!

Кайăк вĕçсе кайрĕ те —
Ваксалĕ те, ялĕ те,

Ман чĕрем те пушанчĕ,
Куçран куççуль тумланчĕ.

Нумай пăхса тăтăм та —
Кайăк кутăн килмерĕ;
Çухăрса та пăхрăм та —
Сасса кайăк илтмерĕ.

*1907*

* * *

Асту, ачам, пахчуна:
Улму тĕрĕс ларать-и?
Асту, ача, маткуна:
Чысне тĕрĕс упрать-и?

Улмисене час-часах,
Курмастăн та, якатаç.
Кăна та пит нумаях
Пăхса тăмĕç, шăхăртаç!

*1907*

* * *

**Д-на**

Мĕншĕн эсĕ ман куçран
Лачлаттарса сурмастăн?
Мĕншĕн манран, пулмасран,
Аяккалла тармастăн?

Ытла та эп сан умра
Пит айăплă, айăплă!..
Эпĕ — çӳп пек сан куçра,
Анчах эсĕ кăмăллă.

Эпĕ, сан пек пулсассăн,
Тапа-тапа ярăттăм;
Ун пек мăшкăл тусассăн,
Çырта-çырта çурăттăм.[...]

А эс, выртан, сикместĕн
Тем тусан та чĕнместĕн:

Сан мамăк пек чĕччӳсем
Ытла та пит çемçе-çке!
Туту çинчи тĕкӳсем
Ытла ыррăн чикеç-çке!

Эй, паянхи райри çĕр,
Мĕнле пула пĕлтĕн эс?
Мана ку çĕр — лайăх хĕр...
Хуйхăр, çамрăк Тĕрлемес!

*1907*

## [ÇИНÇЕ САЛТАК ПАЛВАННЕ]

Савăн,
Çинçе Салтак Палванĕ,
Ялти ухмах куштанĕ!
Савăн,
Тĕпсĕр эрех карланки!
Çынтан «Хусан паранки»
Лекессине кĕтекен,
Нагайкăсем çиекен!
Савăн,
Этем юнне ĕмекен!
Савăн,
Закон сводне пĕлекен!
Савăн,
Çын ĕмĕтне татакан!
Савăн,
Таса çынна варлакан!
Савăн,
Тăлăхсене йĕртекен!
Савăн,
Пуян çынна витлекен!
Савăн,
Полоштофпа шуйттана
Хăвăн чунна сутакан,

Тур папайпа патшана
Чунтан-чуна вӑрҫакан!
Савӑн,
Ясар матка илекен!
Савӑн,
Амур Турра ӗҫлекен!
Савӑн,
Ват стариксем умӗнчех
Матку ҫине ухакан,
Савӑн,
Хӑвӑн матку ҫумӗнчех
Ху маткуна сутакан!
Савӑн,
Ҫапах ытти ҫынсене
Ясар тесе варлакан!
Хӑвӑнтан ҫӗр хут ыррине
Ӳсӗр тесе калакан!
Савӑн,
Ӳсӗр ҫынсем мухтакан!
Савӑн,
Ухмаххисем ырлакан!
Савӑн,
Ашшӗ ҫине ҫилленсе
Ачи ҫине тӑракан!
Савӑн,
Икшер витре илтерсе
Халӑх мулне ҫӑтакан!

Ҫынна усал тунӑран,
Эпир сана мухтаса,
Ӑшран-вартан, пур чунтан
Ырлар ҫапла каласа:
Савӑн,
Вакат Ӗне Урипе
Прошенисем ҫыракан!
Савӑн,
Ҫӗньял Эрех Пичкипе
Анасене сутакан!
Савӑн,
Хлын Мӗнбольха Ачипе

«Учителе вырӑнтан
Сотрӑм!» тесе ҫӗрӗпе
Ӑнна-пуҫна ватакан!
Савӑн,
Кантӑк тутар Ҫурине
Свидетеле хуракан,
Йӑран Кукши тӑмсине
Суеҫҫӗ ӑс паракан!
Савӑн,
Ӗҫсе ӗҫне ӗҫлекен,
Питне кӗҫҫе ҫӗлекен!
Савӑн,
Пире ҫисе пурнакан!
Савӑн,
Ҫӗрти вилмен сатана!
Кукшусемпе аслӑлан!
Ҫӑпан тухтӑр ҫӑварна!
Аллилуя!

*1908*

## [ВАККАТЛАНСА ҪӐРЕКЕНЕ]

Савӑн,
Сурпансене хывтарса,
Чӑваш майри тӑвакан;
Учителе пӑрахса
Ваккатланса пурнакан!
Савӑн,
Кӗлентӗрсем тайтарса
Эрех-сӑра сутакан,
Тутарсене пуҫтарса
Маткуннӗпе пуякан!
Савӑн,
Ҫемҫе тӳшек саракан,
Выртсан — шӑмма ватакан!
Савӑн,
Чире персе ывӑлна
Салтак панчен ҫӑлакан;
Халӑх пӗлмен анана
Куштансемпе акакан!

Савăн,
Иуда пек чуп туса
Учительна сутакан;
Пĕтĕм яла пăлхатса
Хăвах таса пулакан!
Савăн,
Эрех ĕçсе пăхлине
Этем шутне кӳртекен;
Тӳр çын пырас сукмакне
Чакаласа пӳлекен!
Санран сиен тухнăран
Куллен сана аслăлар;
Сан урлă хĕн курнăран
Куççулĕпе кĕл тăвар:

Дай Бог сана вăрманта
Юман çапса ӳкерме!
Дай Бог ватлас кун-çулта
Ачу тытса пĕçертме!

Дай Бог çырса ларнă чух —
Ие тыттăр аллуна!
Дай Бог суда кайнă чух —
Шур илтĕрех сан куçна!

*1908*

* * *

**Д-на**

Мĕн тăвас ман ют çынпа,
N-пе пулсассăн?
Мĕн тăвас ман пурнăçпа,
N-сĕр юлсассăн?

Эх, мăнтарăн N-е!
Санра çеç ман пурнăçăм.
Тăс, Амур, ман телее!
Сан çинче ман шанчăкăм.

Эсĕ хăвăн уххуна
Çак Д-на тĕллипе
Ан яр хур ют çынна!
Эпĕ çеç хам савнипе
Йăпанса пурнам пĕрмай —
Хамăн пултăрччĕ хам пай!

*1908*

* * *

**Д-на**

Нумай çĕмĕрт пахчара,
Нумай лĕпĕш ун тавра.
Анчах пĕрин тĕлĕнче
Сĕмĕ те çук вылянаç.
Кашнин ĕмĕт ун çинче,
Кашни унпа йăпанаç.

Мĕншĕн тесен ун пекки
Хăй те пĕрех тĕнчере:
Унăн мĕн пур патакки
Лараç шап-шур чечекре.

Шăрши те ун таçтанах
Ыррăн тăрать сарăлса,
Çын хуйхине пĕрмаях
Лăплантарса, пусарса.

Эс те, ача, çавăн пек,
Пĕтĕм хуйха пусаран.
Сăну-пуçу — шур чечек:
Кам пур сана юратман!

*1908*

* * *

**Д-на**

Манман-и-ха, N-е,
Ҫӳлти хутра ларнине?
Ав эпӗ макӑртӑм... Е
Манса кайни вӗсене?

Хальччен асра тытнине
Ун чух хӑйса каларӑм...
Манман-и эп йӗнине?
Саншӑн куҫҫуль юхтартӑм.

Мана кура эсӗ те
Тутӑр вӗҫне йӗпетрӗн.
«Ах, Тур, ача!» — терӗн те
Ман тутана пӗҫертрӗн.

Унтан кайран, ыткӑнса
Эпир мӗн чул йӗтӗмӗр!
Ӗмӗр пӗрле юратса
Пурнар, ача, терӗмӗр.

Нихҫан, нихҫан манас ҫук
Ҫав каҫ пӗрле ларнине;
Ӗмӗр асран ярас ҫук
Ҫав ҫӗр санран илтнине.

Тек ун пекки малашне
Урӑх килсе тухаймӗ,
Тен, ӳлмерен пӗр-пӗрне
Курасси те пулаймӗ.

Сана тепри ҫураҫса:
«Эс — ман», — тесе мухтанӗ.
Вӑл пурӑнӗ ятлаҫса,
Маншӑн инкек пуҫланӗ.

*1908*

* * *

**Д-на**

Мĕншĕн эсĕ вăл тери
Çын кăмăлне хуçатăн?
Мĕншĕн унăн чĕрери
Ăшă юнне шăнтатăн?

Хăçантанпа вăл санран
Ăшă сăмах илтесшĕн, —
Эсĕ çапах ку таран
Пĕр сăмах та чĕнместĕн.

Хĕрхен ăна кăшт пăртак,
Çырсам ăна хăвăртрах.
Эсĕ çырнă пĕр патак
Ăна темрен ытларах.

«Намăс» тесе ан кала:
Çырмастăн вĕт ют çĕре.
Ĕнен, кун пек япала
Сăмахра мар, чĕрере.

Хăш чух сахал çырсан та
Çыннăн чĕри йăпанать.
Кукăр-макăр пулсан та
Савни куçне тӳр курнать.

Çын аллине лекесрен
Пĕртте эсĕ ан шиклен,
Ку ĕç çинчен çак таран
Эп никама каламан.

Малалла та эп ăна
Калассăм çук ют çынна.
Ĕнен мана, мана шан:
Сăмах тухас çук манран.

«Мĕнле çырма» ан кулян:
Чĕрӳ мĕскер калать сан,

Çавна çыр та парса яр.
Е хуть хăвах килсе пар.

Çырсам, чăнах, пĕрер хут!
[Ку писмене çур та — ут*!]

*1908*

* * *

**Е.Н.**

Пите мĕнпе çĕлесе
Пырса кĕрес сан патна?
Куçа мĕнле çĕклесе
Хăйса пăхас сан куçна?

Эс мантăн-и иртнине,
Вăрттăн мĕскер тунине?

Е намăсна пĕтерсе
Ăна çӳппе хуратна?
Е ху чысна пĕтерсе
«Ыр ĕç» тесе шутлатна?

Апла пулсан, сан патна
Нихçан пырса кĕрес çук.
Ху пĕçернĕ çăкăрна
Нихçан пырса çиес çук!

Тăмах пĕтмен ман типтер,
Кăшт пур пулас... ан пĕтер
Юлашкине! Хĕрхенсем —
Мана хăвран сивĕтсем!

Вăхăт иртмен тӳрленме:
Май пур-ха мĕн тунине
Хĕрес хурса ӳкĕнме.
Сыхлан эс те малашне.

*1908*

* Ывăт.

* * *

Çапах эпир пĕр-пĕрне
Юратиш пек пулатпăр,
Хамăр кашни каçхине
Урăх çынна саватпăр.

Мĕн ку пирĕн юратни,
Мĕн пĕр-пĕрне чуптуни!
Мĕн так çынна улталас,
Мĕн так çынна муталас!

Мĕскер шырать ку чухне
Тин çеç шăтнă хĕр чĕччи?
Те тапраннă тамăкне
Пусартăр тет ача-пчи;

Те ним тума аптраса
Унпа ларать алхасса;

Те, шуйттан пек, яшсене
Танатине хупăрлать;
Те, каччăсем ыррине
Кура, укçа хыптарать.

Тĕлĕнмелле! Тĕлĕнеп...
Юратнăшăн ӳкĕнеп.
Мĕн чул эпĕ вĕсенчен
Инкек курман, тертленмен!

Мĕн чул выртса макăрман,
Мĕн чул хама ылханман.
Тĕлĕнмелле! Тĕлĕнеп...
Юратнăшăн ӳкĕнеп.

Мĕн чул вĕсем ман юна
Пăса-пăса пĕтерчĕç;
Мĕн чул тачка кармана —
Улталаса — çинçетрĕç!..

Çапах... нихçан ан ĕнен
Хĕрарăма ӳлмерен.

Пĕр вăл анчах пултарать
Çынна пуçпех пĕтерме.
Вăл чĕрĕллех пуçтарать
Хăйне пĕлмен этеме!

Çĕçси çук ун, сăмах çук,
Анчах унăн чĕлхине
Тепĕр сăнă витес çук —
Кассах каять чĕрене!..

Çӳç-пуç тăрать вирелле,
Пăхан та ун çинелле!
Пит ан хăра çĕлентен,
Хăра хĕрарăмсенчен.

Вăл сăхасса эс пĕлен:
Пĕр çапан та вĕлерен.
Кусем хушă çĕлентен,
Тӳрех сăхаç чĕререн.

Ăна чунтан юратан —
Вăлах кулать ав санран.
Татлать пĕтĕм ĕмĕтӳ,
Типлех çĕрет чĕр ӳтӳ!

*1908, акан 11-мĕшĕ*

* * *

Самай лайăх вырăнта
Шап-шур чечек ларатчĕ.
Пĕтĕм кайăк вăрманта
Ăна курса савнатчĕ.

Ăна кура çынсем те
Таптамасăр иртетчĕç.
«Пулать кам вут  чечек те!
Ай-яй чипер ку!» — тетчĕç.

Анчах ырă чечекĕн
Ырă курса пулмарĕ:
Çурма çăва çитсессĕн,
Унтан ним те юлмарĕ.

Ним усăсăр чечекки
Çаран çине тăкăнчĕ.
Тăрса юлчĕ патакки,
Вăл та çĕре тăрăнчĕ...

Ун çумĕнчех ним марри
Ларса юлчĕ, сарăлчĕ.
Пулса çитсе ун вăрри
Çĕре кĕрсе варăнчĕ.

Кĕркуннепе, сивĕтсен,
Çаран çине юр ӳксен,
Тин пытанчĕç, тин пĕтрĕç,
Сивĕ юрпа витĕнчĕç.

Каллах килĕ çуркунне,
Каллах тухĕç чечексем;
Хăйсем пĕтнĕ вырăнне
Шăтса тухĕç вăррисем.

А сан, мĕскĕн шур чечек,
Мĕскер ӳсĕ сан тĕлте?
Камшăн, иртнĕ çури пек,
Юрлĕ шăпчăк çур çĕрте?

Ним те юлмĕ, ним лармĕ,
Вырăну та пĕтĕ сан!
Ни шăпчăк та юрламĕ
Саншăн, уйăх хăпарсан.

Тепле-тепле тĕлĕкре
Çуркуннепе кĕлетре
Çамрăк куçа курăнăн,
Курăнсанах — çук пулăн.

*1908, çĕртмен 22-мĕшĕ*

* * *

Мĕншĕн эсĕ, Кĕркури,
Пуҫна чиксе ларатăн?
Мĕншĕн эсĕ урури
Пушмак ҫипне вăтратăн?

Мĕншĕн ывтан пиншакна,
Мĕншĕн сĕлтен сехетна?
Мĕншĕн тивен вĕсене —
Тӳленĕ вĕт кашнине!

— Эх, ыр сунан юлташăм,
Пĕттĕр, ан тив, ман мулăм.
Чĕре йӳҫсе тăнă чух
Ман мĕн тăвас тумтирпе?
Ăшăм сӳнми ҫуннă чух
Мĕн тăвас ман сехетпе?

Ҫăпаталли витлет тăк,
Мĕн тăхнас пур шиплета?
Сурханах* верх илет тăк,
Мĕн так тăхнас ман пальтта?

*1908 ҫ., ҫурлан 4-мĕшĕ*

* * *

Ларар халĕ юрласа,
Ĕҫер халĕ савăнса.
Халь ҫеҫ пирĕн юрласси,
Халь ҫеҫ пĕрле пурнасси.

Пурна киле пĕр-пĕрне,
Тен, манса та кайăпăр.
Тĕл пулсассăн малашне,
Тен, алă та памăпăр.

*1908, ҫурлан 27-мĕшĕ*

---

* Ҫĕтĕк-ҫатăк тумтир.

* * *

## И.Н.

Пĕтĕм лайăх кайăк та
Ăшă çĕртен килет-çке;
Вĕсем килсен халăх та
Хавасланса çӳрет-çке:
Инкекĕсем пĕтеççĕ,
Куççулĕсем типеççĕ.
Çапла, сана тĕл пулсан,
Пĕтĕм хуйхă пĕтрĕ ман.

Пĕтĕм лайăх кайăк та
Ăшă çĕрех каять-çке;
Вĕсем кайсан халăх та
Пуçне каллах усать-çке:
Каллах шухăш пуçĕнче,
Каллах куççуль куçĕнче.
Çапла, сана ăсатсан
Куççуль персе анчĕ ман.

*1908*

* * *

## П.М.

Нумайранпа эп сана
Юлташ тесе пурăнтăм, —
Анчах темме сан куçна
Эп пит тискер курăнтăм.

Сана чунтан юратсан
Пушшех манран сивĕнтĕн;
Сана чунтан чуптусан
Аяккалла сирпĕнтĕн.

Ан тив эппин хурланса
Çӳрем эпĕ кашни кун.
Хуллен-хуллен лăпланса
Тен, сивĕнĕ санран юн!

*1908*

## [МĔНПУР ТĂВАН-ТАНТĂША]

Манман-и-ха ĕлĕкрех
Телей çинче ÿснине;
Ратланнипе çĕрĕпех
Тĕпĕртетсе ларнине?

Каньăхветпе, мăйăрпа
Çамкасенчен пенине;
Тула тухса сив юрпа
Пĕрне-пĕри пенине?

Аснатра-ха картаран
Чăхсем тытса кĕнине;
Пĕрин чăххи кĕл сăхсан
Каçса кайса кулнине?

Асра-и-ха вăхăтсăр
Хăш те пĕри çывăрсан,
Е вырăнтах, туймасăр,
Чăпта туртма пуçласан,

Ун сăмсине вĕт табак
Вăрттăн пырса сапнине?
Е хăрăмпа ват салтак
Тăва-тăва янине?

Манман-и çу эрнинче
Катаччăсем чупнине,
Çаврас чух ял вĕçĕнче
Туха-туха ÿкнине?
Юр ăшĕнчен пĕр-пĕрне
Кула-кула туртнине?

Манман-и хăй сÿнтерсен
Минтерсемпе пенине;
Асса кайсан çивĕтрен
Çыха-çыха янине?

Аснатра-ха асанне
«Ăçта туя!» тенине,
Хăйех вăрттăн тутине
Хупла-хупла кулнине?

Манман-и вăл ирхине
«Халь çеç-çке вăл!» тенине?
Эх, асанне, асанне!
Чун кӳртрĕн эс ун чухне.

Манман-и тыр панчен
Çумăр витĕр килнине;
Анне апат умĕнчен
Пĕрер черкке панине?

Асра-и-ха тутасем
Хăйсем тĕллĕн кулнине,
Пĕр черккепех хăлхасем
Тăрук илтми пулнине?

Ун чух пурте пĕрлеччĕ:
Пĕр шухăшлă, пĕр чунлă;
Ун чух кун та çĕрлеччĕ;
Кашни чĕри пĕр юнлă.

Халь çук ĕнтĕ, халь вăл мар.
Çуллен кун-çул хушăрах!
Хăшне илнĕ уш масар,
Тепри çӳрет сурханах.

Ытти качча тухнă уш,
Ачисем те пулнă уш!
Эп хам та уш «ватăлса»
Питрех кайрăм улшăнса.

Чун пĕр çӳрет кӳренсе,
Ӳт пĕр кĕрет кукленсе!
Пĕр кун иртмест инкексĕр,
Пĕр çул иртмест йĕмесĕр.

Пурнайрасчĕ халь пĕр кун
Çав ĕлĕкхи пурнăçпа.
Çĕнелĕччĕ пĕтĕм чун
Пур кивелнĕ юнăмпа.

Каллах çынна шанакан
Пулăттăм!
Ачасем пек кăмăлтан
Кулăттăм!..

*1908*

* * *

Çук, пулмасть пуль ман тупса
Ылтăн чунлă сар хĕре!
Çакăн пекех сулланса
Ирттереп пуль ĕмĕре...

Тин пуçлатăн юратма —
Сивĕннĕ те сан тусу.
Тин тухатăн тыр вырма —
Пушаннă та сан пуссу.

Эс тухатăн ратланса,
Никам тивмен пуль тесе.
Тепри çитнĕ те чупса!
Вырать, çыхать уш хĕрсе.

Мĕн тăвас тен — ху ану
Палламасть тĕк хуçине;
Мĕн тăвас тен — тӳр çынну
Сивĕтет тĕк чĕрене?[...]

*1908, чӳкĕн 2-мĕшĕ*

## ЮМАН ЮРРИ

Кашни килен çуркунне
Чечек шăтать ман хӳтте.
Хура çумăр пĕлĕте
Хупăрласан — вĕсене

Çулçăмсемпе пуçтарса
Ялан витсе тăраттăм.
Çил вĕрсессĕн аванса
Çиле сирсе яраттăм.

Хĕрӳ хĕвел çутипе
Вĕсен çеçки шанмастчĕ,
Пăрлă çумăр çунипе
Чечек пĕвĕ ванмастчĕ.

Шăрăх тăнă вăхăтра
Çĕртен сивĕ кăларса
Сивĕтеттĕм йĕр-тавра...
Ӳсетчĕç çав сарăлса.

Анчах вĕсем пĕри те
Ман çинелле пăхмастчĕç.
Ман хӳттĕмре пулин те,
Ăшшăн пăхса кулмастчĕç.

Çапах кашни çуркунне
Хам чĕрене хытарса,
Пĕтĕм кăмăл йӳççине
Куççуль витĕр каçарса —

Ыттисене пăхаттăм,
Çил-тăвăлтан сыхлаттăм.
Çапах эпĕ чăтаттăм,
Çапах шăла çыртаттăм.

Хăш те пĕри кусенчен
Мана савми-ха тесе;
Хуть пĕр хут çу каçиччен
Ман патналла çĕкленсе:

«Эп сан!» — тесе калами,
Çулçăмсене сĕртĕнми
Тесе. Анчах вĕсем те,
Эп кăшт пăртик тайăлсан

/Ха, хӑйсене тивмен те!/,
Эп вӗсене варласран
Манах хирӗҫ чӗнетчӗҫ,
Усал ятпа витлетчӗҫ!

Пӗр вӑхӑтра чечексем
Ӳсми пулчӗҫ ман айра.
Куртӑм: хура путексем
Ишетчӗҫ-ҫке катара...

Чылай вӑхӑт иртсессӗн,
Лешсем вилсе пӗтсессӗн,
Илемлӗ ҫеҫ сар чечек
Шӑтса тухрӗ, тем чир пек.

Пӗтӗм чунтан ратланса
Ӑна пӑха пуҫларӑм.
«Кунтан хуть ыр пӗр савӑнса
Пулми?» — тесе каларӑм.

Ҫумӑр ҫусан, пӑр ҫусан
Ун пуҫ тӑрне ӳкмерӗ;
Тӑвӑл пулса ҫил тухсан
Ӑна пӗртте тивмерӗ.

Уйӑх тухса вӑрмана
Хӑй ҫутипе ҫутатсан,
Пӗтӗм кайӑк йӑвана
Кӗрсе ларсан, ҫывӑрсан,

Эп, ыйӑха каймасӑр,
Куҫа унтан татмасӑр,
Ҫамрӑкскере сыхлаттӑм,
Ун сывлӑшне сывлаттӑм.

Чечекки те кашни ир
Ман патналла тӑслатчӗ.
Ӗмӗр чечекпе эпир
Пӗрле пурнас туйнатчӗ!

Çук, кунпа та савăнса
Пулаймарĕ пурăнса!
Анчах мана ку чечек
Хур çеç турĕ, лешсем пек.

Çамрăк туйра шăтайчĕ...
Чечек ăна пăхайчĕ...
Каллах юлтăм пĕр-пĕччен,
Каллах талтăм телейрен!

Пĕтĕм çĕре чĕтретсе
Тымарсене хускатрăм;
Çулçăмсене силлесе
Сар чечеке ылхантăм.

Ним юлмарĕ туйраран!
Ăçта кайрĕ чечекки?
Пĕттĕр, çĕттĕр ман куçран —
Тек ан ӳстĕр ун пекки!

Çавăнпа ман хӳтĕре
Нимле курăк халь ӳсмест.
Луччă лăпкă чĕрере:
Ни çунмасть вăл, ни йӳçмест.

*1908, чӳкĕн 5-мĕше*

* * *

## Ф.М.

Мĕншĕн хăран эс манран,
Мĕншĕн таран ман çумран?

Е ман юмах хăлхуна
Йĕрĕнтерсе ларать-и?
Е ман сăн-пуç сан куçна
Тискерлĕ пек туйнать-и?

Е ăшăнта: çĕр каçа
Ыйăх памĕ ку! тетне?

Çук, çук, ырă №-ça!
Пырассăм çук яхăнне.

Манран пĕртте ан хăра:
Эп ĕлĕкхи мар халĕ.
Ватăлмалăх кунăмра
Этем илтсен — тем калĕ.

Иртрĕ пуль вăл ĕлĕкхи
Манассăм çук — çĕрлехи
Ахăлтатни, чуп туни,
Çурма çĕрччен тарлани.

Халь çук ĕнтĕ ылтăн пек
Хаклă, çутă, ырă кун!
Ĕнтĕ хуллен-хуллен тек
Сивĕнетех вĕри юн...

*1908*

## ВĔРЕНТЕКЕНĔН ПУРНĂÇĔ

Кам халăха вĕрентет,
Кам этеме ăс паратъ?
Кам ухмаха ăн кӳртет,
Кам айвантан çын тăватъ?

Кам пурнăçне хĕрхенмест,
Кам кун-çулне кĕскетет?
Кам тусантан йĕрĕнмест,
Кам сурăх пек ӳсĕрет?...

Кам чирĕкре пупсене
Пĕтĕм вăйран пулăшатъ?
Кам кĕлĕри çынсене
Юрăсемпе йăпататъ?

Никам та мар — вĕрентекен!
Эй, чăтăмлă вĕрентекен!

Мана уншăн хуть пĕр çын
Ăшă сăмах калать-и?
Çĕр арçынтан пĕр арçын
Хуть кăшт сана мухтать-и?

Пурнать, вилет, апăрша, —
Ырă сăмах илтеймест.
Ун пурнăçĕ — пĕр нуша,
Çапах та вăл ним чĕнмест.

*1908, чӳкĕн 30-мĕшĕ*

* * *

Мĕне сиссе кашни кун
Тек кăртлатан, мĕскĕн чун?
Хĕн-хур кунне сиссе-и,
Е ăш хыпар кĕтсе-и?

Кала, тек ан аптратсам,
Вĕри пуçа йăпатсам.
Çук, ним чĕнмест вăл каллах!
Вĕркет ăшăм çав-çавах...

Ан тив пултăр пуласси!
Тин мар инкек курасси!..
Чăтăр чăтми пуличчен,
Тӳсĕр хăват çитиччен.

Вара...ĕмĕр канăпăр,
Тӳлек çĕре кайăпăр.
Чарнĕ вара юн тапма,
Пĕтĕм ăн-пуç хускалма.

*1908, раштавăн 18-мĕшĕ*

## ПУРĂНĂÇ

Таса çынна Тур папай
Сахал парать кунта пай;
Ку тĕнчере çук та ун
Çутă кунпа çут Мункун.

Курсан курать леш çĕрте
Таса çын перекете.

Кунта аван кунсене
Парать усаллисене.

Вĕсем кунта савăнаç,
Кашни кунах ыр кураç.

Эпир хамăр ĕмĕре,
Рестанцă* пек, тĕрмере
Ирттеретпĕр тертленсе, —
Вилер хуть ĕмĕтленсе.

*1908, раштавăн 20-мĕшĕ*

* * *

**П.М.**

Сана курсан эп татах
Сан еннелле çаврăнтăм.
Сана тата ытларах
Пур ăнăмпа парăнтăм.

Анчах эсĕ ман çумрах
Тепри çине ху куçна
Ярса пĕр-ик минутрах
Хă[вă]нтан пистертĕн мана.

Ăмма мана ку тери
Мăшкăллатăн-ха эсĕ?
Çĕтмĕ çапах чĕрери
Ман тӳсĕмлĕх хĕресĕ!

*1908*

* Арестант.

* * *

**А.С.**

Сан пуҫунти шухăшна
Пĕлейресчĕ манăн халь:
Те юратан эс мана,
Те улталан эс ахаль?

Санпа пĕрле пулсассăн —
Савнă пек те туйăнан;
Е куҫунтан пăхсассăн —
Юратнă пек курăнан.

Ҫапах та эп сан чунна
Пĕлмерĕм-ха ку таран:
Те юратан эс мана,
Те кăлăхах улталан?

Ăҫтан пĕлен ҫамрăк хĕр
Улшăнакан чĕрине?
Унăн чĕри шывпа пĕр:
Сайра куран ун тĕпне.

Тӳлек чухне хумханмасть —
Ҫап-ҫут тăрать ҫутăлса.
Пăхмасть хĕвел, ҫутатмасть —
Каять вара хуралса.

Вара ăна пĕлесси
Этем ăсĕ ҫитеймест.
Каллах хĕвел килесси
Шухăшне те ун килмест.

Ҫĕнĕ уйăх хăпарсан
Ăна та вăл ратланать.
Ҫилли пĕртик ҫаврăнсан
Ăна пăхса йăл кулать.

Кĕтĕр уйăх пĕлĕте —
Каллах унтан сивĕнет.

Пăхтăр çăлтăр çав тĕлте —
Йыхрать ăна, илĕртет.

Тĕнче çути ирхине
Пĕлĕт çине хăпарсан,
Уйăх çăлтăр çутине
Хăй çутипе çухатсан.

Вара каллах ун чĕри,
Пĕтĕм шухăши ăн-пуçран
Кайса ÿкет ун енне,
Пăхах тăрать ун çине!

Пăхтăр хĕвел кашни кун —
Татах ăна юраймĕ:
Вылянĕ те çамрăк юн —
Хĕвел анса чараймĕ.

Каллах кĕтĕ çăлтăрах;
Унпа вара çĕр каçах
Хăйĕн чунне йăпатĕ,
Кăкăрĕ çинче вылятĕ.

Эс те, ача, çавăн пек!
Кун çутинче — манăн пек.
Ахăр, çĕрле, эп кайсан,
Тепри хăпмасть сан çумран.

*1908*

* * *

**А.Д.**

Ай-яй, эпир ĕлĕкрех
Пурнаттăмăр пурнăçа!
Яраттăмăр чистиех
Çын вестине, ăн-пуçа!

Çич çулхи пек тÿн-тунла
Пуçлаттăмăр выляма.

Алла лексен шалалла
Пуçлаттăмăр тустарма!

Апат çиме пухăнсан,
Сайраччĕ вăл тĕк ларни.
Тула тухсан мăй таран
Иртместчĕ вăл варланни!

А светкă чух ташлани!
Ăçта пăчах пĕтерен...
Эпир кулни, выляни,
Тен, теприне тĕлленмен?

*1908*

* * *

**Д-вăна**

Кашни сана ачашлать,
«Ача!» тесе чуп тăвать.
Пулман пуль-ха ку таран
Çу пек яка пурнакан.

Аллусенчи çĕррӳсем
Сан çăлтăр пек ялкăшаç;
Ăна кура тусусем
Вăрттăн куççуль юхтараç.

Ан пĕл, ача, хĕн-хура!
Ратлан «рай» пур вăхăтра.

*1908*

* * *

**Е.Н.**

Май çук аван пурнан эс,
Пит илемлĕ ташлан эс.
Епле сана ырлас мар,
Епле сана савас мар!

Сана курсан пĕтĕм чун
Вырăнĕнчен тапранать;
Çитменнине пĕтĕм юн
Чĕре патне тăвăнать.
Епле сана ырлас мар!

Упăшкуна ачашлан
Пĕрле выртан, чуп тăван;
А вăл пăртик пăрăнсан —
Тусна та эс пай паран.
Епле сана савас мар!

Пĕри тухса ĕлкĕрмес —
Тепри пырать сан патна;
Килне çитсе ÿкеймес —
Тăта шаккаç алăкна.
Епле сана ырлас мар,
Епле сана савас мар!

Ăна та эс кăлăхах
Çÿремелле тумастăн;
Пÿрте кÿртен çавăтсах,
Кĕрсен «ахаль ямастăн».
Епле сана ырлас мар!

Эс кăш чухне ху тусна
Лекес çĕртен хăтаран:
Çын-мĕн пырсан сан патна —
«Çыврап!», тен те, ăсатан.
Епле сана савас мар!

Каять вара леш ухмах:
Çыврать пуль, тет, чăн-чăнах!
А эс çыврас вырăнне
Уклаттаран ху çине.
Епле сана ырлас мар!

Кăш чух тăта, алăкран
Кĕнĕ-кĕмен, ху пантан
«Кĕтменнине» ăсатан:
Ăна та эс пултаран!
Епле сана савас мар! [...]

Ку килелле çитеспе
Чĕриклетет уш кравать.
Тулнă та ун ыттинпе:
Укланнă ўт — такăрлать.
Епле сана савас мар!

Тăта кăш чух алкумчех
«Тарлаттаран» эс тусна.
Пўртри пĕлет пĕтĕмпех —
Эс çеç: пĕлмес! тен ăна.
Епле сана ырлас мар!

Упăшкуна, вăрçасран,
Чарма та эс пултаран,
Ăмма тесен, вăл та сан
Пит аптраман «ют кутран».
Епле сана савас мар!

*1908*

## ÇĔНĔ ÇУЛ

Эй, Çĕнĕ çул, Çĕнĕ çул!
Миçе хутчен кўртрĕн эс
Ман чĕрене сивĕ чул?
Каллах çав чул илĕнмест...

Ан пыр ĕнтĕ, тăрса юл
Манран, телейсĕр кив çул!
Пĕттĕр санпа пур инкек,
Ан лектĕр мана вăл тек...

Çитет ĕнтĕ тӳсни те,
Çитет кăмăл йӳçни те!

Парсам кăçал хуть мана
Хăвăн пĕтми ырлăхна!

Ан тив чĕре лăплантăр,
Ăн-пуçăм та кăшт кантăр.

*1909, раштавăн 1-мĕшĕ*

* * *

Хĕрарăмăн вăрçасси
Пĕр наччасрах пулать-мĕн.
Хĕн вĕсемпе пурнасси:
Пит час турти тапать-мĕн.

Пит час вĕсем пĕр-пĕрне
Яра-яра илеççĕ;
Чипер ларас вырăнне
Пĕрне-пĕри çиеççĕ:

«Пĕрин кĕпи кĕскерех,
Теприн арки йĕперех»...
Шуйттан пĕлет вĕсене!
Этем пĕлмĕ вĕсене.

*1909, кăрлачăн 16-мĕшĕ*

* * *

**К.Н.**

Каллах ĕнтĕ пĕр-пĕччен
Тăрса юлтăм тĕнчене.
Никам ĕнтĕ, чун йӳçсен,
Пусараймĕ чĕрене.

Ĕнтĕ кама асăнса
Хĕрес хурам хам çине?
Ĕнтĕ камшăн вăранса
Çутта пиллем ирхине?

Ĕнтĕ камшăн Турăран
Кун-çул ыйтам малалла?
Камшăн ĕнтĕ Пурнăçран
Тĕрек ыйтам ик алла?

*1909*

* * *

Чăнах та-мĕн Тĕрлемес
Тĕрĕс калать сан çинчен:
Эс çук пулсан «каç» иртмес[т],
Тем чир çиет чĕререн.

Эх, мăнтарăн, чун савни!
Пиллĕх сана малалла.
Эп куçăмпа юратни
Нихçан кĕмĕ ман алла!

Эсĕ ӳссе çитсессĕн
Санпа тепри савăнĕ.
Шăмму, тепри илсессĕн,
Ун айĕнче авăнĕ.

Ман вырăна вăл сана
Ярса тытса ыталĕ;
Чечен сăнна, ӳт-тирна
«Ку ман» тесе тыткалĕ.

*1909*

* * *

Иртет ĕмĕр пĕр-пĕччен
Ĕмĕр сакки хĕрринчен;
Пăхав — çӳреç, хумханаç,
Ахăлтатаç, паллашаç...

Асра та çук эс пурри.
Ăçта пырса çыхланма!..
Çапла çырнă тен Турри? —
Ăсăм çитмест ăнланма...

*1909 ç., раштавăн 17-мĕшĕ*

* * *

**К.Н.**

Эс çеç мана йăпатса
Усран çак сив тĕнчере;
Эс çеç чуна пусарса
Тытса тăран ĕмĕре.

Ялан йăваш куçупа
Мĕнпур хуйха путаран;
Çемçе, тӳлек сăнупа
Тăшмансене мантаран.

Эс пур чухне çеç мана
Тĕнче чипер курăнать;
Эс пур чухне çеç çынна
Чĕрем «тăван» пек сунать.

*1909*

* * *

**И.Н.**

Манăн Сире мухтама
Пур ăсăм та çитес çук.
Сирĕн çинчен «стих» çырма
Алăсем те пĕлес çук.

Ытла Эсир кăмăллă,
Ытла тĕрĕс калатăр.
Ытла Эсир пит ăнлă,
Ытла аван чухлатăр.

Эсир мĕскĕн Саньăна
Пĕтĕм чунтан хĕрхенни,
Тата айван Еньăна
«Аван мар-çке вăл» тени, —

Мана Эсир мĕнлине,
Мĕнле çынне пĕлтерчĕ.

Тур пулăштăр — кашнине
Çавăн пек ăс кĕтĕрччĕ.

Эпĕ Сире çавăншăн
Нихçан, нихçан манас çук.
«Эй, все пройдет!» тенĕшĕн
Сире асран ярас çук.

*1909*

## [ПЛЕШЙĂРАНА]

Ăçта Сире çитесси,
Ăçта Сире питлесси!
Пит якатай вĕт Эсир.
Ăçта унта «Эпнесир»!..

Вăл та вĕтĕ пит пуян —
Эсир тата муллăрах!
Ан та çыхлан Селиван —
Эсир унтан чухăнрах.

Эх, Плешйăран, Плешйăран!
Сана мухтас халĕ ман.
Епле сана мухтас мар,
Епле сана чыслас мар?

Пур вĕт мĕншĕн мухтама,
Аслăлама, чыслама!
Пĕрмай ĕçкĕ тăван эс,
Пĕрмай хăна пухан эс.

Ратланма мар — чĕтресе
Лараç вĕт сан хăнусем.
Кавлеме мар — чĕкĕрсе
Лараç вĕт сан тусусем!

Ăсатнă чух хăнуна
Чуп тума мар, эс ăна

«Кучченеç» те тыттаран;
Аташасран çул тупма, —
Хăвна пушшех ырлама, —
«Фонарьсемпе» ăсатан!

Турра та эс пит мухтан,
Çуртасем те пит лартан.
Непоç виçшер пуслăх мар,
Пĕрер пуса пĕр çурта!

Хăвăн та уш юхать тар —
Çук вĕт пĕр пус карманта!

Матку та сан вăл енчен
Санран питех юлас çук.
Чиркӳ енчен, мĕн енчен
Ăна та эп хурлас çук.

Епле хурлан пуль ăна!
Çынсем чунтан икона
Лампадăсем пиллесен,
Вăл, турăсем писесрен,

Ятлать вара çав çынна:
«Ăмма шеллен укçуна?

Мĕскер, «така çăмарти»
Çакрăн-и-мĕн Тур умне?
Епле ĕнтĕ ун çути
Çутăлтарать турăшне!

Ăçта!» — тет. Эй, мĕн калан!
Пит чаплă вăл, Плешйăран.

Турра курман этемме
Вăл Турă та кăтартать.
Ăçта ăна çын çитме!
Çын тăваймасть — вăл тăвать!

Матки пĕрех Тур умне
Чĕркуçленсе ларать те,

Тăват çăрхаллă йĕмне
Йăшт мăкăртса хурать те:
«Çĕн Турă ак ăçта ман!
Ак кам Турра курайман,
Пăхăр килсе, пăхăр!» — тет.
Унта та ун ăс çитет!

Вăл çеç-и-ха — Тур кутне
Тур ум патне çавăрса,
«Кадит» тăвать ун умне
Хăй «ладăнне» кăларса!

Пыр та пупле эс унпа
Хăвăн мĕскĕн ăсупа!
Тем те туса хурĕ вăл,
Пупран та пит юлмĕ вăл!

А кăмăлĕ, кăмăлĕ,
Пит аслă ун кăмăлĕ!

Нушта çитсен çынсене
Çав çеç çынна çăлакан;
Тăлăхсене, çуксене
Çав çеç çăкăр паракан!

Ун кăмăлне ытарса
Пымасть те вĕт пĕри те;
Кил хуçине юратса
Шалт! питĕрнет хапхи те!

Тепле, раç-тăк Ĕсмĕлтен
Хутаç çакса килекен

Пырса тухать ун тĕлне.
Тĕртет-тĕртет хапхине, —
Çук, уçăлмасть. Кантăкран
Шаккать хайхи çул-пыран...

Унта та ку Плешйăран
Иртсе каймасть Турăран,

Пёлет вёт вăл чухласах:
Туррăн укçи нумайрах!

Çапах Турă çынсене
Анса памасть укçине...
Епле иртĕ Плешйăран
Шутсăр пуян Турăран!

Вĕт çилленет Тур папай
Унтан иртме пуçласан.
Вăл çавăнпа: «Каях, кай!
Тек ан шакка кантăкран.

Ут, Тур парать, пĕтмĕн!» — тет.
Утать вара, шеремет!
Епле ăна ырлас мар!
Ав мĕн тĕрлĕ ун хастар!

Мĕнле çуртра пурнать вăл,
Мĕнле выльăх усрать вăл!

Унăн çурчĕ Сĕвери
Касаматран пиçĕрех!
Кĕсри тата ун, кĕсри! —
Сыснаран та чĕрĕрех.

Ăçта унпа пуплеме!
Ăçта ăна çын çитме!..

*1909*

* * *

Хăш чух пĕлĕт хушшинчен
Хĕвел мĕнле йăл пăхать,
Вăл кичеме сирнинчен
Этем мĕнле савăнать,

Шăп çавăн пек Млаваран
Ху çĕршывна таврăнсан,
Эс ман чуна йăпатрăн,
Пĕр вăхăта пусартăн.

Эс ху пĕлен пурăнăç
Ман халь мĕнле шунине,
Телейсемпе савăнăç
Ытла сахал курнине.

Хĕвел каллах пĕлĕте
Кĕрсе кайса пытанни
Мĕнле татать ĕмĕте,
Шăп çавăн пек эс кайни
Мана каллах тĕнчене
Хăварчĕ пĕр-пĕччене.

Ĕлĕкренпех пĕлекен
Юлташсенчен пĕр-пĕччен
Юлап пулас ĕнте эп;
Халь хама хам хĕрхенеп.

Тăсап, тăсап пурнăça —
Телей лекмест сан куça!

Хальхи юлташ ушкăнĕ,
Тен, вăл та час хăпăнĕ.
Вĕсем ӳсеç, çитĕнеç,
Хăйсем умне питрес теç.

А эп ĕнте кашни кун
Вăйсăрланап, пушанап.
Телее мар, ĕнте чун
Асап кĕтет, пĕр асап.

Эп мар ĕнте хĕрсене
Чуптăвасси, савасси.
Эп мар ĕнте вĕсене
Тăмах ăсран ярасси.

Пĕтрĕç ĕнте халăмсем,
Ӳкрĕç ĕнте вăйăмсем.

Ĕнте вĕри юнăм та
Çурхи шыв пек шавламасть;

Ёнтĕ харсăр чунăм та
Чечек çурса сарăлмасть.

Хĕвел курман сив кунлах
Иртет пулас çуркунне;
Куçăм курман çу урлах
Çитет пулас кĕркунне.

Эх, хĕрхенетĕп сана,
Уссăр çамрăк пурнăçăм!
Сан ........ ыр кунна
Курмарĕ так ман куçăм.

*1909*

* * *

**Д-на**

Сана чунтан савнăран,
Сана юлташ тенĕрен
Ан çиллен!

Ан çиллен!
Сана сăмах панăран,
Саншăн çĕрле йĕнĕрен
Ан çиллен!

Эп юрăхсăр пулнăран,
Сан кăмăлна килментен
Ху та пит час эс манран
Пăраннăран, писнĕрен
Ан çиллен!

Эп те сана хăварсан,
Эс те манран сивĕнсен, —
Каллах сана манмантан,
Сана аса илнĕрен —
Ан çиллен!

*1909*

* * *

Ĕмĕр сана манас çук,
Нихçан асран ярас çук.
Шутсăр чаплă çын вĕт эс,
Латсăр аван çын вĕт эс!

Епле манан пуль сана!
Сан пахчуна пĕринче
Кĕрсе кайсан, эс мана
Çӳллĕ йывăç айĕнче

Ай-ай лайăх ăс патăн!
Халь та манман-ха çавна:
Так ураран шаккарăн —
Чут ӳкеттĕм сан умна!

Тепĕр тĕрлĕ тутар та
Вăл та ĕнтĕ хаяр та! —
Çапах начар лашине
Пит çав тери «савмас» пуль!

Пăх тухрĕ ман ун чухне...
Кули сана манан пуль!
Нихçан асран ярас çук,
Виличчен те манас çук.

Кули манăп эп сана!
Халь те хамăн хăлхана,
Талман-ши-ха ку тесе,
Пӳрне вĕçпе лектерсе,

Кăшт хускатса пăратăп,
Атту çынтан ыйтатăп...
Ăçтан манас ман сана —
Эс ăс панă вĕт мана!

Халь те ман пит çăмарти
Вут тухнă пек хĕмленет.

Астусанах — куç çути
(Начар лекмен пуль!) пĕтет.

Ăçтан манан пуль сана —
Вĕрентнĕ вĕт эс мана!
Сана аснап пĕрмаях.
Эс пынине курсанах

Пĕтĕм класри ачасем
Шăп ларатчĕç чĕтресе;
Ёненмĕн вĕт — шăнасем
Перĕнеччĕç кĕтессе!

Эрешмен те шăнине
Паман пуль «страх» çав тери!
Сана курсан — хăй айне
Яраччĕ-и, тен, тепри.

Эп çакна та манас çук,
Нихçан асран ярас çук:

Ай-яй лайăх пĕринче,
Ўкрĕн эсĕ пăр çине!
Калпак выртать пĕр енче,
Туйу кусать леш енне.

Таçтан-чиртен ача-пчи
Пырса тухнă ... хуть пĕри
Сана ун чух хĕрхенчи?
Чупса пырса çĕклери?

Ну, лайăхчĕ ун чухне
Пăхса тăма сан çине!
Выртан вит çав мăшлатса,
Сухаллуна тăратса!

Ахăрах, сан ун чухне
Унта тăнă çынсене
Шуйттан патне яма та
Пуçра шухăш пурччĕ пуль.

Анчах çук ним тума та!
Ну, пит намăс пулчĕ пуль.

Хăранăччĕ эпир те!
Ĕнтĕ килсе кĕрет те —
Пĕр-ик кукăль тыттарать!
Тесе кашни хуйхăрать.

Çапах пĕртте тивмерĕн, —
Лăпкă ларса ирттертĕн.

Шĕвĕр пӳрни çеç пĕрмай
Лапка сăмсу шăтăкне
Чакаласа чут сакай
Тăваймарĕ вĕсене!

Ыратнă пуль çав санăн:
Пит йывăррăн сывлаттăн.

Тен, пăр çине ӳкниех,
Лекес çупка катерчĕ,
Хăвна шăн пăр «савниех»
Ыратнине пĕлтерчĕ!

Епле сана манан пуль,
Епле асран яран пуль!
Сысна яшки пĕçерме
Укçа пĕртик пухасшăн,
Пирĕн ăша шĕветме
Çĕрĕк хăяр тупасшăн

Лайăх педагогсене
Иле-иле килеттĕн:
Ватă тиечуксене
Эрех ĕçме чĕнеттĕн.

Калӳсĕпе илявар,
Плешивыйпа свиновар,
«Хĕвелĕ» те, кучăр та
«Турецкий» та пур унта!

Вĕрентĕмĕр хамăр та!
Хаярлас çук, хурлас çук!
Тухаç çирĕм саккăр та,
Ăсне пĕр пус парас çук!

Юрать, кайран хăйсене
Кĕнекесем вуласа,
Куркаласа çынсене
Пĕртик кайрĕç уçăлса.

Ăçтан манан пуль сана!
Учительсем — золотой!
Ăçтан манан яшкана,
Ухмах, первый сорт помой!

Тем пек выçă сысна та
Çиес çук вăл яшкана!
Эпир çинĕ ăна та —
Ăçтан манан пуль сана!

Ухмах, миçе пичке квас
Эпир унта кўпнĕ пуль!
Эп мар тăк — кам аснас!
Нумайăшĕ вилнĕ пуль!

А сторожсем, сторожсем!
Вĕсем пекки тупас çук.
Чĕтреччĕç вит школьниксем...
Ăçта, ухмах! Хурлас çук!

Нихçан ăна манас çук,
Нихçан асран ярас çук!

Мĕнле ĕнтĕ ырлас мар
Сан пек чаплă, ыр çынна?
Мĕнле ĕнтĕ аснас мар
Хам виличчен ман сана?

Халь те манăн çурăмра
Туя йĕрри каяйман.

Ун пек пулсан та вара
Аснас мар-и сана ман?

Эс вилсессӗн, тупата,
Пӗр тенкӗлӗх çурта та
Кайса лартма шалккӑ мар.
Епле саншӑн лартас мар?

*1909*

* * *

Ах тур, епле пӑрахса
Тухса каям çак пӳртрен;
Ах тур, епле ытарса
Каям-щи çак хӗрсенчен?

Ытла та пит йывӑр-çке
Пӗччен пулса тӑрасси,
Ытла та пит кансӗр-çке
Такка пӗччен çыврасси!

Йӗри-тавра юлташ чух
Сив урай та ӑшӑ-çке,
Ху çеç пӗччен выртнӑ чух
Хур тӳшек те хытӑ-çке.

Эх, иртрӗ пуль телейӗм,
Сивӗнчӗ пуль чун савни!
Ӗнтӗ пачах çӗтертӗм,
Пӗтрӗ пӗтӗм ыр курни.

Тепле пӗлӗт хушшинчен
Пӗр çут çӑлтӑр курӑнчӗ,
Вӑл та куçа хупиччен
Ярр! турӗ те пӑч çӗтрӗ.

Миçе хут ман ӗмӗрте
Çам пек çӑлтӑр çухалчӗ,
Миçе хутчен ӗмӗте
Çитес çӗртен татайчӗ!

Ăмма мана Тур папай
Пит телейсĕр тунă-ши?
Ăмма мана лекес пай
Мана лекми пулнă-ши?[...]

Мĕн-ма манран куç умри
Çырла тарса каять-ши?

*1910, раштавăн 4-мĕшĕ*

## КĔЛĔ

Хĕрхен мана, Тур папай!
Усал ĕçрен, эрехрен,
Вăрçас тĕлтен чарса кай;
Çăл чунăма пĕтесрен.

Вăй кўрт мана, Тур папай,
Илтсем мĕскĕн кĕллĕме!
Шуйттан çынни пек пĕрмай
Ан пăхăнам ўтĕме.

Эрех ĕçес вырăнне
Çăкăр парам çуксене;
Ирсĕрленме чарăнса
Çутăлтарам хам ăса.

Эй Турăçăм, хĕрхенсем,
Çак ĕмĕте çитерсем.

Эпĕ паян калани
Ыран сая ан пултăр.
Каллах тамăк Сатани
Мана çĕнсе ан култăр.

*1911, утăн 12-мĕшĕ*

## ЧЎРЕЧЕ
### (А. Пушкин майлӑ)

Маншӑн тӗнче пушанчӗ,
Савӑнӑҫ та пытанчӗ.
Мана халӗ пурте пӗр,
Манӑн пурнӑҫ «йӗр те йӗр».
Маншӑн ҫил те ахалех
Сӗм вӑрмана чуп тӑвать.
Тем пек ырӑ чечекех
Мана ним мар туйӑнать.
Маншӑн пулсан, кӑлӑхах
Хӗвел анӑҫ час сӳнмест.
Ирпе шыв та ҫап-ҫутах, —
Мана вӑл та ним тивмест.
Мана хӗвел анни те,
Кӗрен пӗлӗт сӳнни те,
Уйӑх ыррӑн пӑхни те —
Ытла ним мар пек пурте!
Ӗнер эпӗ каҫ пулсан
(Ун чух уйӑх пӑхатчӗ,
Пӗччен тетрем шӑватчӗ?),
Курап — пӗр хӗр кантӑкран
Пӑхса ларать тайӑнса;
Ун кӑкӑрӗ хӑраса
Пӗр илтӗнми сывлатчӗ.
Куҫӗсемпе вӑл таҫта
Аяккалла пӑхатчӗ.
Такам ӑна «эп кунта!»
Тенӗ пек сас илтӗнчӗ.
Илемлӗ хӗр аллипе
Чӳрече кӑлт уҫӑлчӗ.
Уйӑх, пӗлӗт тӗллипе,
Хӑй ҫутине пытарчӗ.
Манӑн чӗрем хуҫӑлчӗ.
«Ак ӑҫта ыр курмалли!
Кунта-мӗн вӑл телейли!» —
Терӗм... Хӑҫан хӗр алли
Кантӑк уҫӗ ман валли?

*(1906–1914)*

## ЮЛТАШСЕНЕ
## (А. Пушкин майлă)

Эсир пĕрмай кулатăр,
Хавасланса ларатăр.
Эп çеç сирĕн хушăрта
Кулянатăп пĕр кунта.
Хăвăр çамрăк ĕçкĕре,
Ăн-пуç пĕтес пур çĕре,
Эсир мана ан чĕнĕр,
Сĕтел кутне ан сĕтрĕр.
Пĕркунтарах эпĕ те
Ĕçкĕ ĕçме пĕлтĕм те...
Пĕрле черкке тытаттăм,
Ĕçке çырса мухтаттăм,
Анчах шалккă, çав вăхăт
Иртсе кайрĕ пит хăвăрт.
Эй, ратланнă вăхăтăм!
Эпĕ сана час мантăм...
Мана хуйхă час çитрĕ:
Çунаттипе час витрĕ...
Эсир мана ан чĕнĕр,
«Ме, тыт черкке!» — ан тейĕр.
Эпĕ пĕччен хуйхăрам,
Сирн ĕçкĕре ан пăсам.
Сирĕн валли ыр çĕрте
Ырă кун та нумай-ха.
Çамрăк, чипер хĕрсем те
Сирн çинелле пăхаç-ха.
Юрлăр, ĕçĕр, юлташсем!
Иртчĕр каçхи сехетсем!..
Эсир ыррăн ларатăр,
Хавасланса кулатăр...
Манăн куççуль тумланать, —
Тута çапах йăл кулать.

*(1906–1914)*

* * *

Манни, ача?
Хĕлле. Мунча.
Кăмакара вут çунать.
Шалтан тĕтĕм йăванать.

Эпир тулта, алкумче.
Аллусем сан ман çинче.
Ху ман çине кармашан.
Куçран пăхан, кулкалан.

Ĕмĕр манмăп вăл куça —
Пĕтерчĕ вăл ăн-пуçа!

Сана, пĕчик ача пек,
Алă çине хутăм та
Çавра çил пек сана тек
Çавратăп пĕр вырăнта.

Мĕн чул сана пит-куçран
Чуптурăм пуль ун чухне!
А эс кулан, ратланан,
Пăхатăнах ман çине!

*1914, раштавăн 6-мĕшĕ*

* * *

Ĕлĕк мана та чунтан юрататтăн,
Пĕр шикленмесĕр пăхаттăн куçран.
Ху ман çумма кĕнчелепе лараттăн.
Ним пытармастăн манран.
Ним ютшăнмастăн, тармастăн манран.

*1914*

* * *

Çилленсе мар, вăрçса мар;
Витлесе мар, кулса мар;
Ху пит сысна чунлăран,
Çынна мăшкăл тунăран
Санăн сăнна ӳкереп,
Хам чĕреме çемçетеп.
Мĕнле сăрпа, мĕн çине
Ӳкерем-ши, ...
Санăн сăнна, сан чунна,
Сан кăмăлна, сан ăсна?
Çăпатунтан пуçлам-ши?
Пуç тӳпинчен пуçлам-ши?
Кĕске ăсна ырлам-ши?
Чул чĕрӳна мухтам-ши?
Пуçлам малтан сăнунтан,
Хĕлĕх çӳçлĕ пуçунтан.
Ансăр çамка, шĕвĕр пит;
Лутра сăмса, хĕсĕк куç;
Çӳхе тута пĕр çур шит, —
Чисти шĕвĕр йытă пуç.
Янах кĕске, мăй çинçе, —
Чисти катăк кĕреçе!
Пӳрнӳ, сенĕк юппи пек,
Хутланмасăр хыт тăрать.
Ӳте, хăйра чулĕ пек,
Кăтăр-катăр хыртарать.[...]
Вуник эрне пăрахман
Сăран кĕпӳ çӳрет сан.[...]
Урăх мĕн пур? Çук те тек!
Пĕвӳ пур-çке кашта пек.
Ĕнтĕ пуçлам ăсунтан,
Кăмăлунтан, ĕçӳнтан.[...]
Пар-ха сана вулама —
Панамар пек панклатан;
Хушас сана юрлама —
Çурăк чан пек мăйлатан.
Чĕнен сана ĕçлеме —
Пĕрер сехет ирттерен;

Унтан яран чĕнтерме —
Тепĕр сехет сиктерен.
Ăмма килмест? — Вăхăт çук;
Мĕскер тăвать? — Килте çук.
Килсессĕн те — аран çеç,
Вăл та пулин йăла çеç!
Камăн çемйи пӳрт тулли,
Унта каян çыврăма.
Сан пур ĕçпе каймалли —
Вăхăт çук сан кăшт ларма.
Чĕнен урай çутарма —
Таран таçта выляма.
«Ăмма килмен?» — «Чĕнтермен».[...]
Ак мĕнле эс ĕç енчен.

*1915, акан 28—29-мĕшĕсем*

**ХУСАХ**
(И.Никитинран)

Кам пур сан пек телейсĕр?
Кам пур сан пек ылханли?
Çӳрен шута кĕмесĕр,
Ялан пулан «усалли»!

Яла тухан, юмахлан —
«Матка патне чупать», — теç.
Килте ларан, йăпанан —
«Килти патне пырать», — теç.

Кирек ăçтах эс ютти,
Кирек ăçтах ытлашки!
Ялта эсĕ — уй йытти,
Шутра эсĕ — юлашки!

Йытта курсан пур путек,
Макра-макра тарнă пек,
Санран тараç, ютшăнаç,
Алка питреç, хупăнаç.

Вӑрӑ килсен, таврашне
Аяккалла тартнӑ пек,
Эс пырсассӑн, сан ҫине
Шанман куҫпа пӑхаҫ тек.

Хуть тем пултӑр — ыттине
Этем чармасть, ятламасть.
Хуть хӗрттӗр вӑл ун хӗрне —
Пӗр сӑмах та шарламасть.

Авланнӑ вӑл, маткаллӑ!
Маткаллӑ тӑк — уш паллӑ:
Юрать кулма, ташлама,
Ыталама, чуптума!

Сан ҫук матку — юрамасть.
Эс ан ташла, эс ан кул!
Чул пул эсӗ, ӳт ан пул!
Сан ҫук мӑшӑр — юрамасть!
Ҫынна ӳтпе шӑмӑран,
Сана тунӑ сив чултан!

Ҫыннӑн алли хускалтӑр,
Эс тыт алла, ан хускат;
Ҫыннӑн юнӗ вылянтӑр,
Эс шӑнт юнна, ан вылят:
Сан ҫук мӑшӑр — юрамасть!

Ҫыннӑн чӗлхи шӳт тутӑр,
Эс чар ӑна, ан шӳт ту;
Ҫыннӑн тути чуп тутӑр,
Эс ҫырт ӑна, ан чуп ту:
Сан ҫук мӑшӑр — юрамасть!
Эх пурӑнӑҫ, пурӑнӑҫ!
Тӑвайкки те сулӑнӑҫ!
Ҫӳрен ҫапах тӗршӗнсе,
Темле ҫӗртен тем кӗтсе...

*1915, авӑнӑн 29-мӗшӗ*

* * *

Савнă тусăм! Эсĕ халь
Питĕ канлĕ çывран пуль:
Супнă майăн эсĕ халь
Пĕтĕм хуйха манан пуль.

Эп çук, ача, çук-халĕ,
Эпĕ халь те выртайман.
Ыйăхăм та çук халĕ —
Кăнтăрла та çывраймаи.

Тăрасса хам сирĕнпех,
Тăваттăра тăнăччĕ.
Чее сиртен иртерех
Ĕçсе.........................

*1916, çăвăн 4-мĕшĕ*

## ЮРĂ

Пырса кĕтĕм çуркунне
Çамрăк çĕмĕрт вăрманне:
Пурте чечек çураççĕ,
Икĕ çĕмĕрт хăраççĕ.

Мĕншĕн вĕсем çурăлман,
Мĕншĕн вĕсем хăраççĕ?
Ватă çĕмĕрт уссăртан
Икĕ çамрăк хăраççĕ.

Пырса кĕтĕм çуркунне
Çамрăк улма пахчине, —
Пурте чечек сараççĕ,
Ик улмуççи хăраççĕ.

Мĕншĕн вĕсем çурăлман,
Мĕншĕн вĕсем хăраççĕ?
Тымар тăпри хытăран
Икĕ çамрăк хăраççĕ.

Пырса кĕтĕм çуркунне
Чие çырли пахчине:
Пурте чечек çураççĕ,
Икĕ чие хăраççĕ.

Мĕншĕн вĕсем çурăлман,
Мĕншĕн вĕсем хăраççĕ?
Айра тăпра шывсăртан
Икĕ çамрăк хăраççĕ.

Пырса кĕтĕм çуркунне
Ялти çамрăк ушкăнне:
Пурте йăл-йăл кулаççĕ,
Икĕ çамрăк макраççĕ.

Мĕншĕн вĕсем кулайман,
Мĕншĕн вĕсем макраççĕ?
Килти ватă ăссăртан
Икĕ çамрăк макраççĕ!

*1916, çăвăн 12—13-мĕшĕсем*

* * *

Эпĕ сана ку таран
Ангел тесе шутларăм.
Ангел мар-мĕн эс, шуйттан!
Халь тин ĕнтĕ чухларăм.

Сан пиркиех аттерен
Сан пиркиех..................

*1917 ç. кăрлачăн 22-мĕшĕ*

## «АН ВЫЛЯ»

*А-сăна асăнса*

Ир. Ик сехет. Чан çапать.
Эпĕ тăтăм. Вăл выртать...
Чăтаймарăм! Юратса
Пĕтĕм чунтан чуптуса

Илтĕм ăна. «Ан выля», —
Терĕ мана вăл çемçен.
Эй, мăнтарăн, «Ан выля»!..
Ун пек сасса эп илтмен.
Этем чунне саракан
Кайăк юрри, мусăк та,
Шăнкăртатса юхакан
Шыв сасси те пур унта!
Вăл темрен те хаклăрах;
Манма хал çук вăл сасса!
Эх, «ан выля» — ик сăмах!
Пĕрмай тăрать янраса.
Чарна пĕлми чан çапать,
Таçта çитех сас парать, —
Вăл каланă ик сăмах
Янрать тата хытăрах!
Урам тулли çын сĕрлет,
Çурхи шыв пек çĕмĕрлет, —
Вăл каланă ик сăмах
Шавлать тата хытăрах!
Илтеле-ха: йĕр-тавра
Купăс çурлать урамра, —
Вăл каланă ик сăмах
Вылять тата хытăрах!
Авă çамрăк хĕр ипраç
Пĕтĕм яла ян яраç, —
Вăл каланă ик сăмах
Юрлать тата хытăрах!
Пăх-ха: хĕвел çутатать,
Пĕтĕм чуна ăшăтать, —
Çук, çав ылтăн ик сăмах
Ăшши тата ытларах!

*1917, акан 5-мĕшĕ*

* * *

Киккирикки сар автан
Урам тăрăх çӳрет-çке,
Килтен киле кĕрет-çке!

Ай-хай ача Эемлайн
Уес тăрăх çӳрет-çке,
Шкултан шкула кĕрет-çке!

Киккирикки сар автан
Çунаттине сарать-çке,
Сар чăхсене савать-çке!

Ай-хай ача Эемлайн
Эрех-сăра ярать-çке,
Хĕрарăма «тытать»-çке!

Киккирикки сар автан
Хуçине те пăхмасть-çке,
Вăтанма та пĕлмест-çке!

Ай-хай ача Эемлайн!
Юлташне те пăхмасть-çке,
Намăсне те пĕлмест-çке!

Киккирикки сар автан!
Çук-ши саншăн ал туйи —
Хапха тĕлне кăтартма?!

Ай-хай ача Эемлайн!
Çук-ши саншăн пĕр сутйи —
Чул çурт ăшне ăсатма?!

*1926 ç., нарăсăн 20-мĕшĕ*

## ПУЛАС ЯЛ
### (Вырӑсларан)

Ҫӗнӗленчӗ хальхи ял,
Ылхан йӗрки асра ҫук;
Ватти-вӗтти «станавай»
Тенинчен тек хӑрас ҫук.

Ӗлӗк латсӑр уретник
Яла пырса тухсассӑн, —
Хуть ӗҫ кунӗ, хуть праҫник —
Салхуланса каятчӗ;
Вӑл эсреле курсассӑн,
Пӗтӗм вӗт-шак улатчӗ.

Пӑрусем те, старшина
Килсе кӗрсен, картана
Тара-тара кӗретчӗҫ,
Сехри хӑпса — чӗтретчӗҫ.

Нихҫан килсе пулман пек,
Иртсе кайрӗ ҫав инкек.
Нумай пуслӑ уйсенче
Анасем чат тырӑра;
Ҫурхи ҫутӑ кунсенче
Ыррӑн сывлать сив тӑпра.

Улӑх тӑрӑх саланса,
Выльӑх ҫӳрет якалса.
Ыраш кулса, юрласа
Ларать пуҫне тултарса.

Хирте — юрӑ шӑранать;
Ӑш-чик лӑпкӑ, лӑшт каять.
Кӗркуннепе тыр-пулли
Кӗрсе ларать ял тулли.

Хӗрлӗ Ҫара илсессӗн,
Амӑшӗ халь ачишӗн

Йӳҫ куҫҫулӗ юхтармасть;
Е, юлсарах килсессӗн,
Эрех ӗҫмен мăшришӗн
Хӗнӗ тесе кулянмасть.

Килте мӗнпур ача-пчи
Тутă ҫӳрет, сиккелет;
Ҫирӗп, хитре хӗр ачи
Сар чечек пек ҫитӗнет.

Курпун тухнă, чуть ҫӳрен
Аслашшӗ те ерипен,
Ҫӗн пурнăҫа ырласа,
Ларать юрă юрласа.

Хӗлле улах ларнине
Кашни намăс пек шутлать.
Пӳртре «чӗпкуҫ» вырăнне
Электрицă ялкăшать.

Ҫамрăккисем каҫпала
Вуламалли ҫурталла
Туха-туха утаҫҫӗ,
Кӗнекесем вулаҫҫӗ,
Картинкăсем пăхаҫҫӗ.

Кӗнекесем вӗсене
Ӗҫ халăхӗн пурнăҫне
Ҫăп-ҫăмăл ҫулпа яма,
Ҫутă, телейлӗ тума
Ăн илтерсе пыраҫҫӗ.

*1926, ҫӗртмен 10-мӗшӗ*

# ХĔРЛĔ ÇУ УЙĂХĔ
## (Вырăсларан)

Килех, кил, çу уйăхĕ,
Килсе çитех хăвăртрах!
Çук халь пусмăр хуйăхĕ,
Тĕрме алăк те уçах...
Кукса кайнă тӳпи те...
Çук пĕр сăнчăр унки те...
Çапах, савас вырăнне,
Курайма-ха пĕр-пĕрне.
Килех, кил!

Тăчĕ ĕнтĕ ĕç çынни, —
Пур тĕнчери ĕç çынни, —
Çутă пурнăç тăвасшăн,
Ĕçне çăмăллатасшăн...
Килех, кил!

Хĕрлĕ ялав хӳттипе
Пур халăха тĕнчипе
Пĕр çемьене хутшăнтар,
Юратуллă пурнăç пар!
Килех, кил, çу уйăхĕ,
Хĕрлĕ, çут çу уйăхĕ!

*1926, уттăн 2-мĕшĕ*

## ЧĂВАШПА ТУТАР

Пĕр чăвашпа пĕр тутар
Юланутпа, юнашар
Улăх тăрăх пыраç тет,
Кашни хăйне ырлаç тет.
Хĕвел анать, каç пулать,
Чăваш лаши чут утать.
Кусем чисти сӳсленеç:
— Атя ĕнтĕ канар, — теç.
Лашисене хайхисем
Çаран çине яраç те
Канма выртаç-мĕн хăйсем.
Чăваш выртать, сикмест те.
Тутар хушать-мĕн кăна:
— Пăхсам, тусăм, лашуна! —
Чăваш тусĕ тутара:
— Ман мĕн пăхас? Ман хура!
Манне вăрă тытас çук —
Мĕншĕн тесен курас çук.
Сан лашу ав палăрать,
Таçтан шурă курăнать.
Вăрă пекки-мĕн килсен,
Тытсан санне тытĕç, — тет.
Тутар пуçне хыçрĕ тет:
— Чее, шельмă, — терĕ тет.
Тутар çапах чăвашах
Лаша пăхма ярасшăн.
Çавăнпа та наччасрах
Ак мĕн тесе калать-мĕн:
— Атя, эппин, улштарар!
Ху лашуна мана пар —
Шур лашуна хăвна ил!
— Юрать, юрать, Исмахил! —
Тесе выртать ман чăваш.
(Ун пек çĕрте вăл йăваш.)
А хăй каллах хускалмасть,
Хускалма та уйламасть.
Тутар татах: — Мĕншĕн эс
Пĕрмай çывран, чăваш? — тет.
Чăваш выртать, пит сикмест:
— Манăн шурă — курăнать, —
тет.
Пăхаç кăсем ирхине —
Тутар лаши урине
Тăсса выртнă... кăннă та!
Хайхи тутар тăнă та:
— Лартрăн мана, Тарас, — тет.
Чăваш хăйнех йĕкĕлтет:
— Ху патăн вĕт, пичей, — тет,
Каçса кайса лĕхлетет.
Мĕскĕн куштан тутарăн
Çуран утас килмест-мĕн.
Ху та тутар пулсассăн,
Çуран утасах темĕн.
— Ача, атя пĕр кана
Пусар шурă лашана! —
Тет-мĕн хайхи юлташне.

— Хуть тирĕпе каяр, — тет.
Чăваш: — Мĕнле апла? — тет.
— Пуссан курăн мĕнлине!
Шур лашана пусаç те
Туххăм тирне сĕвеç-мĕн.
Пĕр çул çине тухаç те
Лаша ӳтне утаç-мĕн*.
Чăваш: — Ну, мĕн? Кала? — тет.
Тутар: — Ак мĕн тăвар, — тет,
— Эпир пĕри ларăпăр —
Тепри туртса пырăпăр.
Кам нумайрах юрлĕ, — тет, —
Çав нумайрах ларĕ, — тет.
Чăваш: Юрĕ, юрĕ, — тет, —
Эс ларатна малтан? — тет.
Тутар ларать, ку сĕтрет:
— Янăрт ĕнтĕ, пичей! — тет.
Тутар пуçне сулласа,
Аллисемпе хлаçланса,
Кăркка пек хăпартланса
Ячĕ тет-мĕн юрласа.
Чăваш сĕтрет, ку ĕрлет...
Хайхин юрри пĕтрĕ тет.
— Ну, тутар тус, ан ĕнтĕ,
Мана туртса пăх ĕнтĕ.
Хайхи тутар анать те —
Чăваш юрра ярать тет.
Ку тутар пек сăвăллă
Сăмахсемпе юрламан,
Чăваш юрри, вăл паллă,
Илтес килмест хăш чух ман.
Пĕр пуçласан чăваш тек:
«Олёро» та «олё» тет.
Ку чăваш та çавăн пек
Олёрона хыт илет!
Тутар: — Пĕтри, тусăм? — тет.
Ак ку: — Çук-ха! Пуçламан —
Тин пуçлап-ха, пичей, — тет.
Чăваш каллах ĕрлет ман!
Мĕскĕн тутар чĕлхине
Йыт чĕлхи пек тăснă та
Аран туртать юлташне...
Чăваш ĕрлет-ха тата!
Тутар каллах: — Пĕтет-и?
Вăйăм пĕтрĕ, тусăм, — тет.
Ăста чăваш чарнасси:
— Çурри пулман-халĕ, — тет.
Чăваш çапла ĕрлесех
Пĕр пӳрт патне çитрĕç тет.
Тутар кăна сĕтĕрсех
Алăк урлă кĕртрĕ тет.
Хай «Олёро» тин чарнать.
Пӳртре никам курăнмасть.
Хĕвел анать, каç пулать.
Пӳртĕн хуçи таврăнмасть.
Супнă майпе тутарĕ
Кĕрĕп! кайса ӳкрĕ тет:
— Ай-яй! Ĕнсе тымарĕ
Талса ӳкет! — терĕ тет.
Шăршлать чăваш — тĕпелтен
Тем тутлă шăрш килет-мĕн:
«Эккей, Турă пиллесен,
Апат хăйех тупнать-мĕн.
Илет чăваш питлĕхе —
Çатма тулли хур ларать.
Ак мыскара, ак тĕнче!
Ак тин телей тур парать.
Чим-ха, чĕнем тутара;
Ирччен, мăйĕ шыçиччен
Çисе юлтăр хуть хура.
Вилсе кайĕ, пĕлеймĕн!»
Хур пуррине пĕлсессĕн,
Тутар йăшт! çеç тăчĕ тет.
Ун пит çиес килнĕ-мĕн.
Тĕпелелле пычĕ тет...
Чăваш хура илет те:
— Атя, çиер, пичей, — тет.

* Ывăтаç-мĕн.

Тутар кулса илет те:
— Чим-ха, тусăм, çийĕн, — тет.
— Иксĕмĕртен, — илтеле! —
Хура ак кам çимелле:
Кам каçхине лайăхрах
Тĕлĕк курать — çав çиет.
Атя çыврар хăвăртрах:
Манăн ыйăх килет, — тет.
Выртаç. Чăваш çывăрмасть, —
Унăн куçĕ хупăнмасть.
Тутар хĕртет ыйăха!
Хĕртĕн унта, пыр — турт-ха.
Чылай тăрсан, çак пӳрте
Хуçи пырса кĕчĕ тет:
«Чим-ха, унта, тĕпелте
Хур пур, çием», — терĕ тет.
Курать чăваш — ĕç пăслать,
Кăмакаран хур шăвать.
«Чим-ха, халех хур парап!»
Хайхи, чулпа тыт та çап!
Хăранипе пӳртĕнчен
Хайхи хуçа тух та шу!
Ăçта унта хур çинчен, —
Вĕçет. Çитмĕ сан лашу!
Ку пит вăйлă çапнăран
Вăранать леш ыйхăран.
— Мĕскер пулчĕ, чăваш тус!
Хăлха илтмест — хуть те пус?
Тем янăрса кайрĕ те —
Хăлха илтми пулчĕ те.
— Аçа çапрĕ-ха, тусăм!
Хам та пит хăрарăм.
Ну ничего, иртĕ-ха,
Пире килсе тивмĕ-ха.
Çывăр, çывăр — тĕлĕк кур —
Атту тарĕ темĕн хур! —
Тутар çыврать — выртать те.
Чăваш сиксе анать те
Çиет ярать хай хура —
Ним те юлмасть тутара!..
Чăваш выртать вырн çине.
Выçă тутар ирхине
Ышт! çеç сиксе тăрать-мĕн.
— Тăр-ха, тусăм, тăр-ха, — тет.
Чăваш: — Пушар пулчи-мĕн?
Мĕскер пулчĕ сана? — тет.
— Лайăх тĕлĕк куртăм-ха!
Шур лашапа эпĕ тек
(Мĕн тăвас тен выльăха?)
Пĕлĕт çине улхап пек.
Турăпа та калаçрăм,
Ангелпа та юрларăм.
Кун пек тĕлĕк çук та пуль, —
Хура мана паран пуль! —
Вăл тĕлĕкне малтанах
Шухăшласа хунă-мĕн.
Хăй ăсĕпе чăн-чăнах
Хам çеç çиеп тенĕ-мĕн!
— Эй, Исмахил! Эпĕ эс
Улăхнине сисрĕм те
Ĕнтĕ тутар тек килмест,
Турă ямĕ, терĕм те
Çи яр хура çараллах.
Пăхап кайран — эс кунтах! —
Хайхи тутар ним чĕнмест —
Тепле тирне сĕвеймест.
— Апла пулсан, мĕн тăвас?
Пĕр çупмалла выляр хуть.
Тем чир, манăн ĕç ăнмасть, —
Çапнă çĕрте ăнми хуть. —
Чăваш: — Юрать, юрать, — тет:
Хăшĕ мĕн чул çупать? — тет.
— Камăн типĕ мĕн чул пур —
Çавăн чухлĕ çупмалла!
— Типпи пирĕн кашнин пур,
Хăшĕ малтан çупмалла? —
Тутар: Эпĕ çупам, — тет.
Чăваш: — Пуçла эппин, — тет,
Хайхи тутар ратланса
Хăй типпине шутласа

Лайӑх вуннӑ ҫапрӗ тет.
— Ӗнтӗ пулчӗ! — терӗ тет.
— Ӗнтӗ эс лар, Исмахил!
Ӗнтӗ манран ҫупкӑ ил.
Тутар ларать, ку пуҫлать.
Чӑваш типне асӑнать —
Тӑват кукӑль тыттарать.
Унтан темме кӑшт чарнать.
Тутар: — Пӗтри-мӗн сан? — тет.
Чӑваш: — Ха, пуҫламан, — тет.
Унтан пуҫлать тутара
«Среда», «пятница» теме,
Ик айккинчен лектерме, —
Хайхи тутар минутра
Утмӑл ҫупкӑ тупать тет, —
Сывлама та чарнать тет.
Аран чарнать хай чӑваш.
Чӑваш пӑхма пит йӑваш —
А вӑл енне кайсассӑн,
Ан тив! — ая кӗрес ҫук.
Хуть кам унтан кулсассӑн,
Хӑй те махӑ парас ҫук.
Хайхи тутар чӑвашран
Аран тарса хӑтлать-мӗн.

*1905*

## [ӐСЛӐ ИВАН ПЕТӖРӖ]
### [Акӑ епле ӳснӗ вӑл]

Акӑ мӗнле ӳснӗ вӑл:
Унӑн ашшӗ авлансан
(Кам плет*, тепле тӳснӗ вӑл),
Матки патне пырайман.
Ик ҫул, виҫ ҫул иртсессӗн,
Вӑл кӑшт хӑя пуҫланӑ.
Вара типпе кӗрсессӗн,
Унӑн ачи ҫуралнӑ.
Ывӑл ачи ӳсиччен
Ӑна вӑхӑт парар-ха,
Ӑна кӑшт ӑн кӗриччен
Ашшӗ ҫинчен ҫырар-ха.
Ятран калас тесессӗн,
Ӑна «Иван» тейӗпӗр,
Хушаматран чӗнсессӗн,
«Ӑслӑ» тесе чӗнӗпӗр.
Ӑслӑ Иван, чӑнах та,
Питӗ ӑслӑ ҫын пулнӑ.
Ҫамрӑклах вӑл Хусанта
Хут вӗренсе пурӑннӑ.
Ҫынна хирӗҫ пӗр сӑмах
Чӗнсе курман ҫав Иван.
Ӗҫ пекки-мӗн хушсанах
«Аюк» тесе каламан.
Ӑна пурте юратнӑ,
Ӑслӑ ача ку, тенӗ.
Вӑл кашнине юранӑ,
Кашни ҫынна итленӗ.
Хут патне те пит ӑста
Пулнӑ теҫҫӗ ҫак Иван.
Вулама та, ҫырма та
Пит аптраса вӑл тӑман.
Анчах ӑна Турриех
Хут еннелле яман пуль —
Кам пӗлет, тен, вӑл юриех
Научный ҫын туман пуль.
Самай чухне ҫул майӑн
Унӑн ашшӗ пынӑ та
(Ватта хирӗҫ мӗн тейӗн?):
— Ачам, атя! Хусанта
Текех усраймӑп сана,
Тем чир пулчӗ амуна —
Куҫӗ пӑсла пуҫларӗ,
Хӑлхи илтме пӑрахрӗ.

* Пӗлет.

Ху та пĕлен, маткасăр
Пит аван мар пурăнма.
Апат тавраш тулăксăр, —
Ни ятлама, ни вăрçма!
Суккăр çынпа мĕн вăрçан?!
Эсĕ киле таврăнсан,
Сана юлташ тупăпăр,
Туххăм хĕр туй тăвăпăр.
Вара аму вырăнне
Матку «ответ» парĕччĕ.
Пирĕн пурнăç хайхине
Тин малалла кайĕччĕ.
Атя, ачам! — тенĕ-мĕн.
Иван, кăна илтсессĕн,
Ним тума та аптранă, —
Вĕренес те килнĕ кун,
Ашшĕнчен те хăранă —
Хаяр пулнă ашшĕ ун.
Вара: — Юрать, — тенĕ те,
Вĕсем киле таврăннă...
Хусанĕ те, школĕ те
Юлашки хут курăннă.
Ĕлĕк ансат авланнă;
Ашшĕ-амăш ачинчен
Ыйтмасăрах хĕр тупнă,
«Юрататна эс?» темен.
Хĕрпе каччи пĕр-пĕрне
Краулккара тин курнă.
Çавăнпа та хăш чухне
Ĕмĕр вăрçса пурăннă.
Ивана та ашшĕсем
Пĕр хĕрлескер тупнă та —
Айван пуçлă мĕскĕнсем
Ар-арăмлă пулнă та.
Иван ашшĕ ĕлĕкех
Чухăн пулнă, хĕн курнă.
Çавăнпа вăл çав хĕллех
Ывлĕ валли ĕç тупнă.
Иван, ашшĕ хушнипе,
Вăрман, ката сыхланă.
Унтан ашшĕ «ыйтнипе»
Почтовойра пурăннă.
Унщăн ăна хуçисем
Укçа пекки тӳленĕ.
Ăна çапах та хăйсем
Уйрăм пит хисепленĕ.
Унта та вăл лери пек
Шăп хастарлă çын пулнă.
Вĕсем ăна, ачи пек,
Шанса пăхса усранă.
Ăна шанма та пулнă.
Вăл çыннăнне ним илмен,
Вырсарникун кĕлĕрен
Май пулман чух çеç юлнă.
Çĕртен укçа тупăнсан,
Хуçисене систернĕ;
Укçан хуçи пулмасан,
Çук çынсене валеçнĕ...
Çапла вара Иванăн
Ывăл ачи çуралнă.
Ăна вĕсем çăмăллăн
Петĕр тесе ят хунă.
Ик-виç çулччен Петĕре,
Çыврас килсен — сăпкара,
Ларас килсен — сивĕре
Шутланнă вăл пуракра,
Пăха-пăха усранă.
Хăш чух ăна култарнă,
Макăртнă та хăш чухне,
«Ярттарнă» та хăй айне.

## Ёмме пăрахтарни

Пĕрре Петĕр амăшĕ
Ута тухса кайнă-мĕн.
Пăхать аслă амăшĕ —
Петĕр питĕ çиесшĕн:
Макăрса та пăхать ку,
Юнтарса та пăхать ку,
Чĕчĕ памаç те кăна —
Чăмламсем çех хыптараç.
Чăмлам кирли куштана?
Эккей! Пĕртте чухламаç!
Чăмламсене ман Петĕр...
Луччă куçне ан лектĕр!
Пит пăхмасть те уйламасть.
Амăш чĕчĕ хыптармасть.
— Анне! — тет ку аптраса.
Асламăшĕ: — Çук вăл, — тет.
Кайран хайхи анраса
Асламăшне ёмет тет.
Асламăшĕ ёмтермест:
— Манăн мумму пур ав! — тет.
Петĕр пĕртте ёненмест:
— Чĕчĕ, чĕчĕ, чĕчĕ! — тет.
Асламăшĕ чĕччине
Хура çăмпа аврать те:
— Курмасна-мĕн муммуне?
Ан тыт, асту, тухать те
Çиет сана халех, — тет.
Петри каллех ёненмест:
— Чĕчĕ, чĕчĕ, чĕчĕ! — тет,
Муммуран та шикленмест.
Асламăшĕ чăмласа
Сухан хурса тухать те:
— Анне, чĕчĕ хуртланса
Кайнă, — тесе калать те
Пĕрех сурать чĕччине.
Петĕр, кăна илтсессĕн,
Тин пăрать-мĕн хăй пуçне,
Тин чĕчĕрен хăпать-мĕн...

*1906*

## ХĔРЕ УЙĂХ ИЛНИ*

Тăлăх хĕре инкĕшпе
Ытла йывăр пурăнма:
Ăна хăш чух çĕрĕпе
Лекет куççуль юхтарма.

Ĕçе аван тусан та,
Нихçан ăна ырламаç;
Хăйсем наян пулсан та,
Ăна вăрçма вăтанмаç.

Ĕçлеттереç вилес пек,
Çăкăр татки хĕрхенеç.
Çиме ларсан ăна тек:
«Нумай чыхан, шуйттан», — теç.

Чăтаç çапах мĕскĕнсем!
Тепле тухмаç чунĕсем?
Мĕскер хушаç — тăваççĕ,
Ăçта яраç — каяççĕ.

Авалтарах çавăн пек
Тăлăх Марье пурăннă.
Питне пăхсан — сар чечек,
Ĕçрен-мĕнтен — вут тухнă.

Анчах ăна инкĕшĕ
Ăшă сăмах каламан.
Нихçан, аçа çапасшĕ,
Этем тесе шутламан...

* Михаил Шевлепе пĕрле çырнă.

Çак пĕринче Марьене,
Çурма çĕртех тăратса,
Кларса ярать çăл кутне.
Утать Марье макăрса:

«Атте-анне пулсассăн,
Кун пек нушта курмăттăм.
Ĕçпех пĕтет çамрăк сăн,
Тертпех сӳнет пурнăçăм.

Никам мана хĕрхенмест,
Никам мана юратмасть.
Ман нуштана çын пĕлмест,
Ăш çуннине çын курмасть».

Çанталăкĕ сивĕрен
Пĕтĕм пĕвĕ чĕтрет ун;
Сăхмансăрах тухнăран
Шăнма пуçлать ăшри юн.

Пĕлĕт çинчен çăлтăрсем
Ун çинелле пăхаççĕ,
Вĕсен лăпкă çутисем
Йăпатнă пек курнаççĕ.

Таçта пĕлĕт варринче
Йăваш уйăх çутатать.
Марье хăйĕн ăшĕнче
Çут уйăха кĕл тăвать:

«Атте-анне вырăнне
Хуть эс мана хĕрхенсем.
Ман хурлăхлă кунсене
Хуть эс пăртак кĕскетсем».

Уйхи кăна хĕрхенсе
Чăнах илет хăй çине...
Пырать инкĕш йĕрлесе —
Ним те юлман шыв кутне.

Унтан пăхать çӳлелле:
Курах каять Марьене.
Марйи пăхать çĕрелле,
Ним те чĕнмест инкĕшне...

Уйăх çине сăнаса
Пăхсамăр-ха, ваттисем:
Марье тăрать кулянса,
Ик айккинче — витрисем.

*1907, чӳкĕн 22-мĕшĕ*

## ЭСРЕЛĔ*

Турă патне çитмешкĕн
Ĕлĕк ним мар пулнă-мĕн.
Инкек-сиен-мĕн пулсан,
Тӳрех унта сулланнă.
Турри вара кантăкран
Ыйтакана ăс панă.
Кайран-кайран этемрен
Те пит шуйттан кĕвĕçнĕ?
Анчах этем пĕр енчен
Ирсĕрленме вĕреннĕ.

Малтан Турă çынсене
Канаш пама ӳркенмен;
Ирсĕрленсен, вĕсене
Хăй патне те кӳрттермен.
Çавăнпа вăл салтака
Рая чĕнсе илнĕ те,
Хăй пурнакан алăка
Çăраласа илнĕ те
Ăна çапла каланă:
— Эсĕ ху та чухланă,
Этем ытла пăсăлчĕ,
Ĕнтĕ пĕтĕм этемрен

* Михаил Шевлепе пĕрле çырнă.

Манăн чĕре сивĕнчĕ.
Çавăнпа эс ӳлĕмрен,
Рай патнелле çын килсен,
Тыттар та яр ĕнсерен.
Ĕнтĕ кунтан малашне
Манăн таса çурт ăшне
Нимле çын та ан кĕтĕр,
Никам канаш ан илтĕр.
Сыхла! Лайăх сыхласан,
Святой тăвăп эп санран! —
Турă çапла калать те
Кĕрсе каять шалалла.
Салтак пуçне çĕклет те
Тытать алла каялла:
«Ĕнтĕ эпĕ хам патша!
Ĕнтĕ Турă хам пултăм!
Килсе тух-ха пĕр кукша —
Славнăй канаш парăттăм!..».
Кашни кунах кун катлать, —
Ку табака снай шăршлать.
Чылай вăхăт иртсессĕн,
Хыт чĕреллĕ Эсрелĕн
Çынна касас килнĕ-мĕн.
Хăй çавине çĕклет те
Турă патне хăпарать,
Хапха умне çитет те
Çак салтака тĕл пулать.
Салтак камне пĕлменскер,
Утать ку рай еннелле.
Хайхи салтак, çиллĕскер,
Пат! тутарать Эсреле.
— Мĕскер кирлĕ — кала! —
тет, —
Кунта эпĕ хуçа, — тет.
Эсрел пуçне хыçрĕ тет:
— Турă кирлĕ, — терĕ тет.
— Мĕн тумалла Турăпа?
Халех хăвăн çавупа
Утăн* кунтан! Атту эп
Халех сана тӳпелеп!
— А вăт мĕншĕн кирлĕ вăл:
Те пур ун ĕç ман валли,
Пĕлес — мĕнле ун кăмăл,
Пур-ши çын-мĕн касмалли?
— Апла пулсан, чим-халĕ,
Кĕрсе ыйтам — мĕн калĕ.
Салтак кĕрсе каять те
Шаккать Турă кантăкне.
Турри пырса пăхать те
Курать хăйĕн салтакне.
— Мĕн сăлтавпа кĕтĕн эс?
Мĕскер пулчĕ-ха унта?
Ни çын килни илтĕнмест,
Ни куçармаç ман çурта.
Кала, салтак! — тет Турри.
Салтак: — Такам чĕмери
Çава йăтса килчĕ те:
«Ĕç пур-ши, тет, çын касма,
Каймасть кунтан — пер хутте.
Анрарăм эп ним тума.
Мĕскер хушан ăна?» — тет.
Ăна Турри илтелет.
Турри: — Кала: ик çулччен
Çĕр те икке çитнине
Çави мăка пуличчен
Касса тухтăр кашнине.
Каях ĕнтĕ, салтак, — тет.
Салтак тухса сирпĕнет.
Салтак вăрттăн шухăшлать:
«Парам сана çын касма!
Калап: пĕрмай çын катлать,
Парам ăна ашкăнма».
Эсрел патне пырать те
Вăрман çине кăтартать:
— Ĕç парасса парать те,
Ĕçĕ йывăр туйăнать:
Сана папай ик çулччен
Пĕр ват юман юлмиччен
Тăпăлтарма хушать, — тет.

* Ывтăн.

Эсрел тухса каять тет.
Пуçлать Эсрел вăрманти
Ват юмана шутлама.
Тепле пулмасть вар витти,
Ёлкĕреймест сывлама.
Пĕр вăрманне пĕтерсе
Теприн патне утăнать.
Çамки çинчен кĕрлесе
Çурхи шыв пек тар юхать.
Çапах Эсрел ик çулччен
Хăйĕн ĕçне пуçтарать,
Унтан, ĕçне пĕтерсен,
Пĕлĕт çине хăпарать.
Ёнсе кукли тупасран
Тӳрех рая перĕнмест:
Хăрать мĕскĕн салтакран.
Салтак кăна тек тивмест.
— Мĕскер тăвас-ха, Эсрел?
Аван пĕтри сан ĕçӳ?
Питех хĕртмери хĕвел?
Куран, мĕнле тăрать çу.
— Каккуй унта шӳт тума,
Аран ĕçе пĕтертĕм.
Ай-ай юман кăларма!..
Пĕтĕм ăша пĕçертĕм!
Кĕрсе ыйтсам Турăран:
Тата мĕскер хушать-ши?
Мана ахаль ларасран
Мĕскерле ĕç парать-ши? —
Салтак, кулса ярасран,
Часрах шăлне çыртрĕ тет.
— Юрать, халех турăран
Кĕрсе ыйтап, — терĕ тет.
Каллах шаккать кантăкран:
— Эсрел каллах ĕç ыйтать,
Ёнтĕ мĕскер тутаран? —
Турри каллах ĕç парать:
— Тухса кала Эсреле:
Пĕр çĕр эрне иртиччен
Çурма çулхи пĕтмелле, —
Каях ĕнтĕ килкартинчен. —
Салтак тухать те калать:
— Сана ĕнтĕ кунхĕнче
Тата йывăр ĕç хушать:
Пĕр çĕр эрне хушшинче
Çурма çулхи юмана
Суйлатăр, тет вăл сана.
Эсрел пĕтĕм çиллипе
Юмансене тĕппипе
Турта-турта кăларать,
Пĕтĕм вăрман чашкăрать...
Эсрел ĕçне пĕтерсе
Каллах çӳле улăхать.
Салтак çине çилленсе
Усал куçпа пăхкалать.
Салтак кăна йăпатса:
— Пырать-и-ха, ача? — тет.
Эсрел пăртак лăпланса:
— Э-эх, ача, беда! — тет.
Ёнтĕ тата тем хушать,
Кĕрсе ыйтсам Турăран. —
Салтак каллах йăпатать,
Кĕрсе шаккать кантăкран.
Турри кăна кунхĕнче:
— Пĕр виçĕ çул хушшинче
Пĕтĕм пĕчик ачана
Касса тухма хуш ăна, —
Тесе приказ парать те
Кĕрсе выртать шалалла.
Салтак сиксе тухать те:
— Сан ак мĕскер тумалла:
Мĕнпур шăхан* йывăçне
Пĕр пилĕк çул хушшинче
(Тăвас пулать хушнине:
Эпир ваттин аллинче)
Тăпăлтаран ĕнтĕ эс.
Эсрел тепле йĕреймест.
Эсрел мĕн чул пурăнман —

* Шăлан.

Шăхан çăлса чăрманман.
Пĕлĕт çинчен вирхĕнсе
Шăханлăха анать те
Пуçлать çăлма çилленсе...
Пăртак ларса канать те
Каллах пуçлать вăтăрма.
Ăçта унта çын пыма!
Пĕтĕм вăрман хумханать,
Шăхан хулли ывтăнать...
Алли-ури пăчах юн,
Ĕçĕ çапах пĕтет ун.
Хăй çавине çĕклесе
Улхать çӳле тертленсе.
Курать каллах салтака,
А леш ... шăршлать табака.
Эсрел ыйтать салтакран:
— А эс, салтак, мĕн шăршлан?
— Ак ку табак, — тет салтак.
— А мĕн тăвать вăл табак?
— Табак чуна йăпатать,
Шăмма-шакка кантарать.
— Парсам эппин мана та. —
Салтак парать: — Шăршла, —
тет, —
Ай-яй, аван, чăнах та,
Тата пăртак парсам, — тет.
— Туртсам, туртсам, — тет
салтак, —
Тата илсем кăшт пăртак.
— Ай-яй, аван! Ĕмĕрех
Ку табака шăршлăттăм.
— Вăл ĕç хĕн мар вĕт питех,
Эп ак мĕскер тăвăттăм:
Халех шăна пулăттăм,
Киркки ăшнех кĕрĕттĕм,
Ĕмĕр табак шăршлăттăм,
Нихçан тухас темĕттĕм.
Ухмах Эсрел ĕненет:
Шăна пулса йăшт! кĕрет.
Салтак кăна шалт! питрет:
— Пропал теперь, шельмă! —
тет, —
Ĕнтĕ пит час тухаймăн,
Тек этеме касаймăн.
Унтан табак кирккине
Персе чикет кĕсьене...
Салтак табак кирккине
Пĕр çичçĕр çул кăларман.
Вăл хĕрхенмен сăмсине:
Нихçан табак шăршламан.
Эсрел çукран этемсем
Шутсăр нумай пурăннă.
Улт-çичçĕре çитнисем
Хальхи ват пек курăннă.
Салтак текех чăтайман:
Табаксăр тек пурнайман.
Малтан табак кирккине
Кăшт çеç уçса шăршланă,
Вара каллах пытарнă.
Тăрсан-тăрсан кун каллах
Шăршлас килнĕ табакне.
Ку куннĕнче ытларах
Уçас тенĕ хуппине.
Сисмен хутран хай шăна
Вĕçет тухать тĕрминчен.
Усрас салтак шельмăна
Тата тепĕр виç кунччен —
Эсрел вилсе выртатчĕ,
Этем вилли пулмастчĕ,
Шăмми анчах юлнă-мĕн.
Кăшт чăтайман ват салтак —
Хуплать çынна йӳç табак.
Эсрел этем пулать те
Турра пырса пĕлтерет.
Турри райран тухать те
Хай салтака влерттерет.
Çавăнпа халь этемсем
Час ватăлса час вилеç,
А Эсрелĕн шăммисем
Паян та ӳт илеймеç.

*1907, чук*

## МАТКА ПУЛНĂ УПĂШКА

Пулать вĕт вăл тĕнчере
Пĕрер арçын кӳршĕре —
Хăйĕн ĕçне мухтакан,
Матки ĕçне хурлакан! [...]
Матка ĕçĕ темле пит
Ăна çăмăл курăнать.
Хăйне çӳсрен пĕрер шит
Канра явни хĕн туйнать.
Суха туни çав çынна
Салтаксем япула......................
Çын тертинчен хĕнтерех,
...................................................
Матки ача ӳстерни,
Урай шăлни, тыр вырни
Çӳппе тăмасть вăл çынна:
«Сысна!» тет вăл маткана.
Авалтарах çавăн пек
Хай маткинчен пĕрле тек
Кукăр курса пурăнать:
— Çӳрен, лӳппер, сулланса,
Сăмсусене каçăртса!
Хĕвел тухать, каç пулать —
Пӳртрен туха пĕлместĕн!
Пĕр ĕç туни курăнмас...
...........шăнăр татăлмас?!
Мĕн тумалла санпа? — тет.
Матки: — Çапла, çапла! —
тет.
— Çапла вĕт вăл çын кукли
Пит тутлă пек туйăнать.
Кала-ха эс: сан валли
Кам çăм арлать, кам пусать,
Кам пир тăвать, кам çĕлет,
Кам пӳрт ăшне питĕрет?
Кам выльăха тăрантать,
Кам чăхсене тăрантать?..
Эп мар-и вăл виçĕ хут
Кунне апат паракан?
Хура йĕмна çăвакан?
Кала ĕнтĕ, вит улпут.
— Асту ĕнтĕ, пит ĕçлен!
Вилсе ан кай эрнерен!..
Мĕскер пур сан ĕçлени?
Пур, пур çăкăр кавлени!
Йыт хӳрине тăраймасть
Чăхчаву пек ĕçӳ сан!
Пĕтĕм ĕçна пĕр наччас
Пĕтермелле, хам пулсан.
Туса пăх-ха эс суха,
Кайса пăх-ха улăха,
Тӳле-халĕ куланай,
Кĕлте кӳр-ха эс пĕрмай,
Вутта кай-ха Çармăса, —
Вара тин лар тавлашса.
— Атя эппин иксĕмĕр
Ĕç улштарса пăхар, — тер, —
Эп сан ĕçна тытăнам —
Суха тăвам, тыр акам;
Эс ман ĕçе типтерле, —
Вут хут, апат хатĕрле...
Как рас ыран тыр вырма
Тухас теççĕ пуçласа.
Эс юл кил-çурт пуçтарма.
Çăкăр пĕçер вут хутса
Ĕне суса кĕтӳ ху;
Çу пух уйран уçласа;
Выç ан тăтăр чĕп-чăххy.
Ирхи апат çийиччен
Çит ман патна апатпа;
Ыран хĕвел тухиччен
Утам эпĕ хам майпа!..
— Юрать, юрать, пĕлтĕрех
Çак сăмаха калас эс,
Хуна качча илсенех
Арçын пулса пурнас эс... —
Выртаç кăсем çывăрма.

Тулта пуҫлать ҫутӑлма.
Арҫын-матка тӑрать те
Ана ҫине уттарать,
Ҫурласене салтать те
Юрла-юрла тыр вырать!
Иртен-ҫӳрен тӗлӗнеҫ,
Кашни ыйтать маткаран:
— Ӑмма-ха ку Митрапхан
Чирлени-мӗн паян? — теҫ.
— Ҫук чирлемен чирлессе,
Матка пулас терӗ-ха.
Килет апат пӗҫерсе,
Мӗнле пӗҫеркелӗ-ха? —
Тет ку кашни кӳрӗшне.
Ҫапаҫ лешсем пӗҫҫине:
— Ҫук-ха, пӗтсе ҫитеймеҫ
Ухмах ҫынсем пирӗн, — теҫ...
Арӑм-арҫын Митрапхан
Ура сырать халӗ ман.
Ура сырса пӗтермен —
Чусти кӑвас чӗресрен
Шыв пек тапса хӑпарать,
Пӑт-пӑт! ҫӗре тумланать.
Сиксе тӑрса Митрапхан
Витсе хурать пӗр сӑхман.
А хӑй часрах килкартне
Чупса тухать вут патне.
Вутне хутса яраймасть —
Кӗтӳ хума тытӑнаҫ.
Ӗне суман — мӗн тӑвас?
Ӑҫта чӳлмек ӑҫта лаҫ?..
Лаша витри илет те
Ӗни патне ывтӑнать.
Ӗни кӑна сисет те
Вӑшт картана пытанать.
Ну ислетет ӗнине
Чӑпӑрккапа ҫиллипе!
Ӗни чӗри хӑпнипе
Ямасть кӑна яхӑнне.
Тӑратнӑ та хӳрине,
Ахаль чупать макӑрса!
Аран-аран кӑкарса
Суса илет ӗнине...
Сурӑхӗсем хӑраса
Ура тапса ҫеҫ тӑраҫ.
Чӑххи-чӗппи хуйханса
Пакартинчен ҫухрашаҫ.
Сысни, сысни хӑраса
Кӗрех кайнӑ комнӑтне.
Ҫиес тесе кармашса
Тӑкнӑ янӑ чустине.
Ну ислетет чустана
Тӑват уран хай сысна!
Кӗрет пӳрте Митрапхан —
Карать прахать ҫӑварне:
Ак кулатник, ак шуйттан!
Пат! тутарать сыснине
..........................................
Тути урлӑ хӑмсарать.
Нри-ик! тет те хай сысна
Палт! ҫаврӑнать каялла.
..........................................
Чуста хыпать кун тути!
Куҫне чуста карнӑран
Курӑнмасть те кун ҫути!
Аран-аран Митрапхан
Куҫне уҫать ҫаннипе.
Кӗтӳ хунӑ пӗтӗмпе,
Пӗр Митрапхан хӑвайман.
Тухать часрах килкартне,
Тӑрья, тӑр! тет сурӑхне.
Ыр ҫеҫ чипер тӑракан
Сысна кӗлет ӑшнелле
Кӗрет каять ку тухсан.
Унтан хуса кӑларать,
Каллах кӗлет ӑшнелле
Кӗрсе кайса пытанать.
Унтан вӑрӑм шалчапа
Ӑна тӗртсе кӑларать,
Вӑшт! ҫех калла сыснапа

Лаç хушшипе утăнать*.
Чисти супать Митрапхан,
Ку puласса вăл сунман.
Питрет кĕлет шăтăкне,
Тин кăларать сыснине!
Ну чуптарать Митрапхан
Хăй выльăхне кĕтĕве.
Сысни пырать чăн малтан:
Туять ăшшипе сивве.
Кĕтӳ хуса килекен
Каçса кайса лехлетет:
«Мĕнле ку çын çамкинчен
Чуста юхать паян?» — тет.
Ăçта вăл ман Митрапхан
Çын килнине пăхасси!
Кĕтӳ таçта уш ялтан, —
Чылай-халĕ чупасси!..
Юрать сысна тĕк пырсан,
Аяккалла тармасан!
Чут сулланать Митрапхан
Урам тăрăх килелле.
Ачасем-мĕн тĕл пулсан —
Тараç ампар айнелле.
Кĕрет пӳрте Митрапхан,
Выртса канать ырнăран.
Чусти урай варринче,
Хăйми ярнать ун çинче.
«Хĕрарăм пек ухмаххи
Çапах çук пуль тĕнчере?
Мĕн пур вĕсен лайăххи?
Пĕтĕм ăсĕ çивĕтре...
Лараç уйран уçласа,
Виçшер сехет çывăрса.
Çакайрасчĕ чĕресе
Пиçиххирен кут хыçне —
Кураймăн та чӳхенсе
Çу мĕнлелле ӳкнине».
Пырать хайхи тĕпеле,
Пăхать малтан çĕрелле:
«Ну, хуть çĕрти чустана
Кăшт çăркаларĕ сысна, —
Малтан кăна çăркалас,
Вара пĕрле купалас».
Çу чӳлмекне Митрапхан
Çакса ярать кут хыçне.
Чĕркуçленет ик уран,
Çăрма пуçлать чустине.
Алли те ун ĕç тăвать,
Чӳлмекĕ те сулланать.
«А чим-ха, — тет Митрапхан. —
Ĕнтĕ пĕрле çăрас ман».
Çиччас кăвас чĕресне
Ӳпĕнтерсе чустине
Урай варне [купалать],
Çăрать, чӳлмек сулланать.
«Ну, çитрĕ пуль çăрса та,
Ӳкет пуль уш хăйма та!
Туртам ĕнтĕ кăварне
Вара унам çăкăрне».
Кăвар туртса кăларсан,
Каллах пуçлать Митрапхан
Хĕрарăма хурлама,
Çĕн ăс тупма, мел тупма:
«Ав паçăрах каларăм,
Ухмах-мĕн ку хĕрарăм!
Мĕскер тума çăкăра
Уна-уна хумалла,
Пурĕпĕрех çăвара
Хуçа-хуçа хыпмалла!
Сар луччĕ, хур çăкăр пек
Кăмакана чустана!
Çиес чухне вара тек
Чĕллĕн-чĕллĕн кас ăна».
Пуçлать хайхи Митрапхан,
Пĕчĕк ача çырмаран
Лачакине утнă* пек,
Лачлаттарма чустана.

* Ывтăнать.

* Ывăтнă.

Кун хыҫӗнчи ҫу чӳлмек
Хак ӳкермен чустана.
Урайӗнчи чустине
Пӑчах утса пӗтернӗ.
Тухать хайхи килкартне:
Чӑххисене ҫитермен.
Парас тет кӑшт пӑтратса,
Пӑхас тет пӗр шутласа.
Чӑх-чӗппине шутласан
Каллах пуҫлать Митрапхан
Хӗрарӑма хурлама,
Ҫӗн ӑс тупма, мел тупма:
«Каллах куран, хӗрарӑм —
Вуҫех ухмах япала.
Паҫрах вӑн ав каларӑм:
Пӑчах шыва ямалла.
Тек чӑх чӗппи ҫӗтет теҫ.
Кули ҫӗтмӗ чӑх чӗппи?
Куран, мӗнле шинклетеҫ:
Чпи-пи-пи-пи-пи! [...]
Ярас ҫиппе кашнине
Урисенчен кӑкарса».
Хайхи кашни чӗппине
Тыта-тыта кӑкарать:
Раз-раз! илеҫ урине,
Салтак утти пек курнать...
Турчӑкипе ҫӑкӑра
Илес тет кӑмакаран
Туртать, туртать — «Ха, ара!
Тухмасть те-ҫке-ха ку ман!..»
Пуҫлать хайхи ҫӑкӑра
Лумпа ватма айккинчен,
Тепри хӗлле, тен, пӑра
Ун пек катмасть тарличчен!
Аран-аран кӑларать
Нихҫан пулман ҫӑкӑра —
Айккисенче хуп-хура,
Шалта чуста курӑнать.
«Эй-ей! — тет хӑй ӑсӗпе, —
Кун пеккине свечӗпе
Тупас ҫук пӗр ҫӗрте те,
Пур ӑшӗнче шӳрпи те!»
Тӑрук тулта чӑх ами
Кӑтиклетме пуҫларӗ.
Ну чупрӗ ку сывлами:
«Ак хурчӑка хупларӗ!».
Пырать вӗҫсе хурчӑка,
Вуник чӗппе каплатса...
Пӗтерчӗ ку карчӑка.
Хай Митрапхан кӑшкӑртса
Карта урлӑ каҫнӑ чух
Чанлаттарать чӳлмеке
Юпа ҫумне. Атя, юх!
Хӑймаллӑ ту нушнике!
Юхать хӑйма Митрапхан
Йӗмӗ тӑрӑх шӗлкесе...
Ҫук, ҫухӑрса ним пулман...
Вӗҫрӗ чӗппе ҫӗклесе...
Ак кӑнтӑрла ҫитесси
Инҫех те мар, час ҫитет.
Тинех хайхи чӗп асси
Матки патне сӳсленет...
Ах тур, матки ҫурлапа
Ӑс пачӗ тет айвана!
Парасчӗ кун пӗр майпа —
Хӑй кӗнӗ вӗт маткана.
Тинех прахать Митрапхан
Матки ӗҫне хурлама.
Хӗрарӑм та тек пулман —
Ӑҫта унта тек пулма!

*(1906—1914)*

## ПĔР ПЕК ПУЛТĂР

Пĕр амаран виç ывăл
Тăрса юлнă çуралса.
Кĕçĕннин çеç пуç хăвăл,
Аслисен ăн-пуç таса.
Пурнаç кусем пчах расна,
Кашни ... пĕр прасна. [...]
Ашшĕ вилсенех кăсем
..........................................
Кайран .............вĕсем
...............кайса силленнĕ.
Паллă ĕнтĕ, силленсен
Чулпа перес кĕтесрен,
Е çĕçĕпе чикеççĕ,
Е чĕлхепе çиеççĕ.
Ун пек чухне ним те мар
Чее пултăр çын тени;
Ун пек пулсан, пӳртрех лар —
Хăйех пĕтет силленни.
Анчах ухмах пулсассăн,
Нумай ырă курайман.
Ик пиччĕшĕ Петруша
Пырса кĕнĕ хĕнеме:
— Эй, килте-и? Тух, кукша!
Кĕлту Турра, кĕт вилме!..
Тухать Петруш урама:
— Эккей ансат пурăнма!
Кăвак кашкăр тытрăм та
Аллă сурăх пĕр кунта
Илчĕ ячĕ яп-яка,
Çитнĕччĕ-ха карчăка
Пĕр-ик эрне айкашма
..............................................
— Мĕнле кашкăр вăл, Петруш?
Навернă, вăл пит хăруш?
— Эй, сурăха тивменни
Чĕрĕ çынна тивет-и?
Вăл вĕт кунта ӳсменни,
Питĕр панчи вăрманти...
— Ара, мĕнпе эс ăна
Тупса килтĕн? Е сана...
— Çук, çук! Ырă пиччесем,
Ăна хальччен кунтисем
Курман-халĕ. Тур папай
Килсе пачĕ кун пек пай.
— Ара, капла пулсассăн,
Мана парса яратна?
Шанман пулса тăрсассăн,
Ме, пĕр тенкĕ тытатна?
— Мĕскер укçи... кирлĕ мар.
..............................................
Асту, тулькка, эс ăна
Ниçта та мар, картана
Хупса хур, кăшт утă пар,
Ая улăм пăртак сар.
Пĕр картари сурăхна
Хупса хур эс витӳна.
............. вите алăкне
Уçă хăвар, атту-тăк
Куç курмасăр ун тĕлне
Тупаймĕ, ун — ăс катăк.
Калах кала....................
Çĕр каçаччен ал............
Хуллен çыврăр, шăп пулăр —
Атту хăрĕ тем кашкăр.
Хăранипе, çăм тесе,
Касĕ прахĕ сурăхна —
Выртĕ тепĕр кĕтессе.
Аслă пиччĕш кашкăра
..........................................
Ача-пчисем ун тавра
Чупса çӳрес ратланса.
Пырса çитет хай килне,
Чĕнсе илет маткине:
— Тин Тур пачĕ перекет,
Кайса ил-ха эрех, — тет.
Матки чупать. Кашкăрне

Ку кăкарать алкумне.
Каç та пулать. Кашкăра
Илсе каяç картине —
Пĕтĕм сурăх картара
Тепле хуçмаç ĕнсине.
Тĕпĕртетеç, çаврăнаç,
Хăркăш саспа маклатаç.
Ку сурăхне пĕтĕмпе
Аран-аран маткипе
Хуса хупать витене,
Пăртак уçать алăкне,
Пăхать вăрттăн кашкăра —
Шăп выртать леш картара.
Çын çуккине сисет те
Утать кашкăр витене.
Ку маткине тĕртет те:
— Асту, матка, ан кĕрле,
Ан тух тула эс çĕрле.
....................................
Сурăхсене пĕрне те.
— Юрать-çке, — тет арăмĕ.
Çывраç кăсем ыткăнса,
Йыт çури пек хутланса.
Сывлама та хăяймаç —
Ыратсан та — хускалмаç.
Кашкăр лере ирĕкре
Сурăх çăмне хыт илет;
Хăй ăшĕнче сӳс хӳре:
«Кунта мĕн ку?» — текелет.
Ирхинеччен пĕр купа
Купалать ку сурăха,
Тăрать-мĕн тул çутласпа:
«Чим-ха, кайса пăхам-ха!
Навернă, уш ман кашкăр
Пĕтернĕ пуль хăй ĕçне.
Эс ан тăр-ха, вырт, çывăр», —
Тесе витет маткине,
Хăй сулланать картана.
Пăхать хайхи купана —
Ик аллине шарт çапать:
— Ак сӳс хӳре мĕн тăвать!
Вăт шан эсĕ Петруша, —
Çука ертĕ вăл, кукша!
Ак мĕн тăвас — хуть те вил!
Кил-ха, матка, кил-ха, кил! —
Аçа çапнă пек матки
Сиксе пырать кун патне:
— Акă шуйттан мăйраки —
Аçа çаптăр кашкăрне!
Ара, ĕнтĕ мĕн курас?
Мĕскер çиес, мĕн тăхнас?
Пĕтерчĕ-çке ку Петруш,
Пĕтĕм пурнăç пĕтрĕ уш.
— Чим-ха, матка, халĕрех
Улăм ури айнерех
Чикер часрах. Вăл килсен,
Ним намăса кĕмĕпĕр,
«Лайăх илчĕ» тейĕпĕр. —
Сурăхсене çĕклесе
Улăм айне пытараç:
Унтан пӳртне питĕрсе
Каллах кĕрсе ыткăнаç,
Каллах çывраç юнашар.
Сурăх пĕтни шалккă мар —
Çын кулнинчен хăтласчĕ,
Çынна пăртак каласчĕ.
Кĕтӳ хуса ярсассăн,
.................... кун патне
Пырать. Ăна курсассăн,
Хирĕç тухать шăллĕне:
— Сыв-и, пичче? Мĕнле-ха:
Лайăх илчи сурăха?
— Калама та çук, шăллăм!
Тип-тикĕс те яп-яка.
Кĕтĕве уш яртартăм.
Ӳктĕр пирĕн пур шăрка.
— Тух-ха, пичче, апла тăк,
Ман та кантăр кăшт карчăк.
Кĕçĕрлĕхе кашкăра
Парса яр-ха эс мана.

Хам çыврнă вăхăтра
Ĕçлетĕр вăл пĕр кана.
Пиччĕш питĕ килĕшет
....................................
— Маткана та тухтармăп,
Вырăнтан та хускалмасть. —
Вăталăххи кашкăра
Хăй патнелле уттарать,
Пĕтĕм этем урамра
Кашкăр тавра кускалать.
Пырса çитет ку килне,
Кашкăр тусне алкумне
Шыв каткинчен кăкарать,
Хăй пӳртекне сулланать.
Ташла матка....................
Тухать ухмах маткипе,
Ташласа та илет ку.
Хайхи айван ăсĕпе
Ним те туймасть ват кăркку.
Каç пуласпа кашкăра
Илсе каяç картана.
Пĕтĕм сурăх ун тавра
Тĕпĕртетеç. Çатана
Тепле ватса тухаймаç,
Хаяр саспа маклатаç.
Аран-аран маткипе
Сурăхсене пĕтĕмпе
Хуса кӳртеç витене —
Тулькка хупмаç алăкне.
Хăйсем часрах çĕр пӳртне
Кĕрсе выртаç маткипе:
— Асту, матка, çĕр каçа
Тухса ан кур эс тула,
Уçса ан хур ик куçа,
Сывласса та чут сывла.
Атту кашкăр çилленет —
Илтеле эс мана, — тет.
Выртаç кăсем ыткăнса,
Чăх чĕппи пек сывласа,
Ӳсĕрме те хăяймаç,
Енчен енне çаврăнмаç.
Пĕр кашкăр çеç сывăрмасть.
(Вăл хăй ĕçне пит манмасть!)
Аван ăна çăм илме, —
Кансĕрлемеç юн ĕмме!
Ирхинеччен пĕр купа
Туса хурать хай кашкăр.
Тухаç лешсем çутласпа —
— Çĕлен сăхтăр, йыт çуртăр!
Аçа çаптăр кашкăрне!
Ан шан эсĕ Петруша!
Тем турĕ-çке вăл мана.
Ак ухмах, — тет, — ак кукша! —
Лайăх тул та çутăлман —
Пиччĕш патне сирпĕнет.
Пиччĕш тăнă-тăрайман:
— Пĕтерчĕ-çке мана, — тет. —
Мĕскер пулчĕ-ха санăн?
Ытла сехре хăпартрĕ!
Ара, пĕтĕм сурăха
Пĕтертĕмĕр-çке кĕçĕр!
Мĕн тăвас ку ухмаха?
Ĕнтĕ куллен йĕр те йĕр.
— Мĕскер йĕрес, манне те
Хăвармарĕ пĕрне те!
— Ăна эсĕ ĕнерех
Каламарăн. Аллăшпех
Сывă юлнă пулĕччĕç,
Паян кун та çӳрĕччĕç!
— Пĕр пек пултăр, терĕм-çке!
Пĕлен, çыннăн ăс кĕске!
Санăн юлтăр, ман пĕттĕр —
Вара çынсем мĕн калĕç?
Атя, пулнă тăк — ирттĕр,
Луччă çынсем хурламĕç. —
Каяç ĕнтĕ Петруша
Тӳпелеме-хĕнеме.
....................................
Тет турĕ-çке этемме.

Епле кăсем алăкран
Пырса кĕреç — сунтăхран
Петруш çĕçĕ илет те
Пĕррех чикет маткине.
Матки кайса ўкет те
Карса прахать çăварне.
— Ара, Петруш, мĕн тăван?
Вилсе кайрĕ вĕт матка?
— Шўт тăвать вăл, авă ман
Чĕнтен явнă чăпăркка!
Иккĕ-виççĕ сĕлтеп те —
Çиччас матка чĕрлет те! —
Илет те ку пушшине,
Пĕррех çапать маткине:
— Час тăр, матка, шыва кай!
Атту каллах тупан пай! —
Матки выртать халĕ кун,
Кăкăрĕнчен шĕлкет юн!
Петруш тата çĕнтет те —
Матки сиксе тăрать те,
Витрисене çĕклет те,
Шыва чупса каять те —
Шалт! тĕлĕнеç аслисем,
Ик пĕççине шалт! çапаç.
Çын вĕлерме килнисем
Пĕр сăмах та шарламаç.
— Ăçтан чиртен эс кăна
Тупса килтĕн, Петруш? — теç.
— Телей тăвнать-ха мана! —
Лешсем пушшех тĕлĕнеç.
— Чумантарах маткана
Чĕртекенни çак ĕнтĕ.
Илнĕччĕ-çке эп кăна
Ак мыскари! Ак ĕнтĕ!
Пĕр-ик куна хуть, Петруш,
Парса яран пуль-çке уш!
Чумантарах ман матка —
Илтелемест хăш чухне...
Чĕртмест хамăр чăпăркка,
Халь те сĕвет ун тирне,
Халь те лекет ирхине.
— Ара..., илсе кай.
Маткуна та Тур папай.
.........................................
Вĕçет пиччĕш килелле —
Çын чĕнсен те ним чĕнмест.
Ури çĕре тивеймест.
Пўртне чупса кĕрет те,
Вăрăм çĕçĕ илет те
Пĕррех чикет маткине.
Матки «ай-ай!» тет-мĕн те
Персе анать урайне.
Ку хуйхăрман нимĕн те.
Хайхи тăхлан вĕçлипе
Çурать анчах маткине!
Матки, пушшех вĕтнипе,
Чунне леçет леш енне.
— Тăмасна-ха, выртатна?
Парам сана, наяна! —
Хайхи вилнĕ маткине
Çавра-çавра ислетет:
— Нумай выртмăн, витрене
Халех илсе чупăн, — тет.
Чисти супать хĕнесе.
Çапах матки чĕрĕлсе
Шыва кайма уйламасть,
Вырăнтан та хускалмасть.
Пăхать кайран маткине —
Вилнĕ кайнă кун матки.
Хăй ĕненмест хăй куçне,
Кăштăрт! ўкет чăпăркки...
— Ак кукша пуç, ак Пет-
руш, —
Пĕтерчĕ-çке маткана!
Вăталăхĕ килнĕ уш,
Уçать хуллен хапхана.
Аран хайхи маткине
Тĕпсакайне антарать, —
Унтан часрах витрине
Вырăн çине пытарать.

Шăлнĕ кĕрет, сăх сăхать,
Пиччĕш çине пăхкалать:
— Ну, мĕн, пичче! Каласам,
Тури пушă хăй ĕçне?
— Калама та çук, ачам!
Вăнт! çех шурĕ шыв кутне!
.............................................
Кĕрĕп! ўкрĕ ман карчăк...
Шелкет вĕт юн!.. Ху куран...
Куран, урай вараланчăк.
Ярса туртрăм пушăпа,
Таккуй вирлĕ, вăйăмпа, —
Ăçта вилме! Тăчĕ те,
Часрах витре илчĕ те
Çил пек чупрĕ шыв кутне.
Сисмерĕм те тухнине.
— Пичче, апла пулсассăн,
Парсам пушша, тархасшăн.
Эпĕ чĕртем маткана,
Вут пек тăвам наяна!
— Ара,.... илсе кай!
Курма пырăп. Халь урай
Сĕрем-ха кăшт. Атту тăк
Вăрçса прахĕ тем карчăк.
Ку маткине çĕр айне
Варса хума ĕлкĕрмен —
Вăталăхĕ кун патне
Пырса кĕрет çенĕхрен.
— Ара, пичче, мĕн курас?
Ку кукшана мĕн тăвас?
Пĕтертĕм вĕт маткана...
Мĕн тăвам-ши кукшана?..
— А ма капла туллашан?
Мĕскер пулчĕ-ха сана?
— Ара, сан пек, хырăмран
Пĕррех чикрĕм маткана —
Кайса ўкрĕ ман матка.
Хĕрлĕ юнĕ алăка
Çити насус пек шелкет.
Çапрăм, çапрăм — тăрай-
масть, —
Вилнĕ кайнă, шеремет...
Халь те чĕре лăпланмасть.
— Ман та вилчĕ çав, братăм,
Сана пaçăр тыттартăм.
— Сан та, пичче, ăс кĕске!
Суян, аçа çапасшĕ!
— Пĕр пек пултăр терĕм-çке, —
Тесе хурать пиччĕшĕ. —
Ĕнтĕ кăсем Петруша
Вĕлермеллех каяççĕ.
— Лекен-халĕ, чим, кукша!
Лекен! — тесе пыраççĕ.
Петруш пĕлнĕ тахçанах
Инкĕшĕсем .................
Çапах та хăй пит часах
Шухăшламасть вилессе.
Вăл çĕр каçа маткипе,
Çывăрмасăр ĕçлесе
Шурăмпуçĕ килеспе
Çĕрпўрт лартнă уш витсе.
Землянкине çĕр каçа
Юман вутти хутнă ку,
Кăвар пулнă пĕр куча.
Хĕрхенмен вăл тунă вутта
Хĕрес лартнă ун тĕлне.
Пăхсан — масар темелле,
Иртсе çўрен калпакне
Сăхсăхма та илмелле.
Ирхинепе пăшатан
Илет те ку çĕр пўртне
Кĕрсе выртать. Чăн малтан
Шăтăк штарать пуç вĕçне.
Унтан пуçлать пшатана
Кăварĕ çинче хĕртме...
«Тĕвес теç пуль кукшана!
Ухмах мар вăл тўтерме!»
Çитеç лешсем кун тĕлне,
Шаккаç Петруш хапхине:
— Килте-и-ха, кукша пуç?

Час хапхуна тухса уç! —
Йĕре-йĕре ку кукши
Тухса уçать хапхине.
Уçах-халĕ калинкки —
Лешсем сисмен уçнине...
— Мĕскер улан, ухмах! — теç,
Çенĕкелле перĕнеç.
Ăçта кайнă кукша пуç?
Тĕп сакайне сикнĕ пуль?
Уçса пăхаç сакайне —
Леш сикмест те вырăнтан.

*(1906—1914)*

## УЙĂХ КУРНĂ ĔÇ

Хĕрарăмран тертленме
Этем хăçан чарнĕ-ши?
Мĕнле-мĕнле этеме
Вăл чĕрĕллех чикмест-ши?
Вĕсен ĕçне лайăхрах
Этем куçне кăтартма
Хамăн мĕскĕн ăсăмпа
Çак юмаха çырам-ха...
Матки çине тарăхса —
(Пĕлен матки мĕнлине)
Килне-çуртне хăварса
Пĕри Хусан хулине
Тарса кайса пурăннă.
Чĕри пĕрмай йӳçнĕрен
Эрех ĕçме пуçланă.
Пĕрмай эрех ĕçнĕрен
Уйăх укçи пухăнман.
Тĕрĕссипе каласан
Пухма та ун шут пулман:
Матки ача çуратман —
Камшăн укçа пуçтарас,
Кама пырса кăтартас?
Хăй маткине тесессĕн —
Матки ăна çын темен.
Чипер качча сиссессĕн,
Ăна чĕнме ӳркенмен.
Çапла çак çын виç çулччен
Ĕçе-ĕçе пурăннă.
Матки чипер пурниччен
Тата пушшех пăсăлнă.
Унăн килĕ патĕнчен
Кунĕ-çĕрĕ çын талман.
Тутар, чăваш-мĕн килсен,
Вăл кĕртмесĕр хăварман.
Ялти ăслă ватăсем
Ятласа та пăхнă-мĕн,
Анчах ырă сăмахсем
Ахаль сая кайнă-мĕн.
— Мĕншĕн эсĕ, Варвари,
Упăшкуна пăхмастăн?
Мĕншĕн хăвна «çырмари»
Илĕртнинчен чармастăн?
Упăшкупа пурăнсан
Сана çын та хисеплет.
Упăшкуна пăхăнсан
Кирек кам та илтелет, —
Тенĕ кăна ыр сунан.
Ак ку çапах чарăнман!
Пĕлен ĕнтĕ маткана:
Ăна сăмах каличчен
Çырт эс хăвăртрах шăлна.
Эсĕ сăмах хушиччен
Вунă сăмах калать вăл,
Сана ая тăвать вăл.

Пĕр çул, ик çул иртет кун,
Хуçи пĕртте çырмасть кун.
Ик çул иртсен Варвари
Пĕр хусаха чĕнет те:
— Иккĕн пĕрле пурнар-и?
Тен, вилчĕ пуль манăн, — тет!
Кус, Хусана кай та эс

Пĕр çĕр тенкĕ тупса кил.
Пĕччен-иккĕн мĕн çӳрес?
Килсен мана качча ил.
Иккĕн пĕрле пурнăпăр,
Пурнăç пĕрле тăвăпăр.
Вăл ухмаха килсен те
Эпĕ киле кĕртес çук!
Судпа-мĕнпе кĕрсен те,
Унпа пĕрле пурнас çук.
Е çакланап, е вилеп,
Элĕ хăйне пĕтереп! —
Тесе хурать çак матка,
Каччи тăрать: — Юрĕ, — тет, —
Питĕр халĕ алăка,
Юратнине кăтарт, — тет.
Туххăм алăк çакланать —
Тухать матки, салтăнать...
Тепĕр кунĕнче хусах
Хусаналла вĕçтерчĕ.
Çулталăкра ку чăнах
Пĕр çĕр тенкĕ пуçтарчĕ.
Хайхи каччă ратланса
Киле кайма тухрĕ тет.
Пырать-мĕн ку васкаса,
Тăрук пĕр çын тухрĕ тет:
— Ăçта каян? — терĕ тет.
Каччă шартах сикрĕ тет.
Лешĕ каллах: — Илтетне,
Ăçта каян? — терĕ тет.
Каччă хăйĕн укçине
Хыпаласа пăхрĕ тет.
Лешĕ кӳсек илет те
Ярать кăна пуçĕнчен.
Каччă персе анать те
Ăнсăр пулса выртать-мĕн.
Унтан, ăна кĕрсессĕн,
Куна çапла калать-мĕн:
— Эсĕ мана вĕлертĕн,
Кунта никам пулмарĕ,
Сана пĕр çын курмарĕ.
Сана ак çак çут уйăх
Курса çынна калатăр.
Ним каламан ку урăх,
Каллах пулнă-мĕн ăнсăр.
Лешĕ тепре çапать те —
Кун укçине илет-мĕн.
Унтах шăтăк чавать те
Йывăç айне чикет-мĕн.
Çын шаккани Варвари
Упăшкиех пулнă-мĕн.
Пуйрĕ-мĕн ку хайхи тин,
Ĕнтĕ киле каять-мĕн.
Хăйĕн матки тӳррине
Пĕлнĕ пекех вĕлерчĕ,
Ун вырăнне маткине
Халь хăй майлă çавăрчĕ.
Укçа пулсан ухмах та
Ăслă пулать, çын пулать.
Çакна пула матка та
Килĕштерет-юрать.
Чăваш çăва кĕрет те
Кĕлетĕнчех çу каçать.
Çак чăваш та: — Кĕлете
Сар-ха, матка, — тукалать.
Матки тухать, хатĕрлет:
— Кил, тух, Петĕр, сартăм, —
тет.
Выртаç кăсем, юмахлаç,
Малаллине шухăшлаç.
Выртсан-выртсан, уйăх та
Ялтăртатса тухрĕ тет.
Унăн çути хуть ăçта
Сарла-сарла кайрĕ тет.
Пирĕн чăваш хушшинче
Кĕлет алăк çумĕнче
Кушак кĕме шăтăк пур,
Вăл пĕр-икĕ вершук çур.
Уйăх чылай çĕкленет.
Унăн çути çурăкран
Çак кĕлете кĕчĕ тет.

Ăна курсан çак айван
Кулать ярать, ухмах пек.
Матки: — Ăмма кулан? — тет.
Ак ку, хырăм çурлас пек,
Тата пушшех лехлетет.
— Мĕскер пулчĕ çак сана,
Мĕскер кулан? — тет матки.
Тем тусан та, айвана
Чарайман-мĕн çак Варкки.
Уйăх çути çухалсан
Тин чарнать-мĕн çак айван.
Матки пушшах тĕпчет тет.
— Ăмма култăн? — Кала, — тет.
Кун упăшки сисрĕ тет:
— Ахалех-çке, матка, — тет.
— Апла тен эс, ухмах та
Ним сăлтавсăр кулмасть-çке!
Эсĕ пуйса кайнă та
Юмахласшăн та мар-çке!
Мĕн пăхан эс алăка? —
Тесе выртать хай матка.
Тем тесен те, маткана
Тĕпчес енчен хурлас çук.
Тем пек этем те ăна
Каламасăр чăтас çук.
Çак айван та маткине
Вăрманта мĕн тунине
Кала-кала кăтартать:
— Мĕнле йывăç тĕллине
Чикрĕн ăна эсĕ? — тет.
— Ăна таçтан пĕлмелле:
Ун хăвăлне тем кĕрет.
Çул хĕрринчен инçех мар.
Хăвăлне хуть кĕрсе лар.
Юмах пĕтет, куç хупнать.
Матки: — Çыврар ĕнтĕ, — тет.
Хăй урăхла шухăшлать:
«Чим-ха сана, лекĕн!» — тет.
Çĕр те иртет, тул çутлать,
Кун упăшки вăранать:
— Матка, матка, тăр-ха, — тет.
Матки тăрать: — Мĕскер? —
тет.
— Эпĕ ĕнер ӳсĕрччĕ,
Пуç ăнĕ те кайнăччĕ;
Ху та пĕлен: ӳсĕрлсен,
Çын аташма пултарать;
Ӳсĕр майпа эп те, тен,
Аташнă пуль — чун хăрать.
Кала, Варкки, ан вăтан:
Мĕскер тенĕ эп сана? —
Тет маткине хай айван.
Мĕн тăвас тен маткана —
Тĕк çеç ларать, ним чĕнмест.
А ку каллах тусеймест:
— Кала ĕнтĕ, мĕн тăран,
Ютшăнатăн-им манран?
Аташман-и? Кала, — тет.
Матки: — Хăвах асту, — тет.
Упăшки те сисрĕ тет,
Кун сăмахне туйрĕ тет:
— Укçа мĕнле тупнине
Каламан-и сана? — тет.
Каласан та çынсене
Ан шарла хур, матка, — тет.
— Калать тата ют çынна!
Ăна çын та ĕненмĕ!
Мĕн пĕлеп эп сан ĕçна... —
Терĕ тет кун арăмĕ.
— Апла пулсан, — кӳр ална,
Пĕрле пурнар малалла:
Эп те ним те каламан,
Эс те ним те ăнланман!
Калани те çухалтăр,
Мĕн илтни те ан пултăр! —
Унтах иккĕш ал тытаç,
Ыталаса чуптăваç.

Çаксем пăртак пурăнсан,
Ĕçке кайнă ют яла.

Кунӑн матки вырӑнтан
Тек кускалать тулалла.
А ку ларать, ним чӗнмест,
Кайран-кайран тӳсеймест:
— Матка, пӑртак лӑплан, — тет.
Матки ҫаплах чарӑнмасть,
Этемрен те вӑтанмасть:
Ахӑлтатать, кулкалать,
Темӗскерсем калаҫать;
Илемлӗрех ҫын кӗрсен
Вӑшт! ҫех шӑвать тӗпелтен.
Кайран-кайран упӑшки
Хытах калать-мӗн кӑна:
— Чарнатни ҫак эс, Варкки!
Халех лекет ак сана!
Асту, чарӑн, чарӑн! — тет.
Матки пушшех сиккелет.
Кайран-кайран упӑшки
Ҫупать кӑна питӗнчен.
Ҫил килнипе кун матки:
— Ҫапкала-ха, — тет питрен!
Ак пӗр сӑмах каласан,
Пит ҫапкалӑн эс мана!
Эс тек ан чар мана, — тет.
Хай упӑшки тухать те
Пӗр сӑмах та чӗнеймест.
Пӗр вырӑна ларать те,
Ним тусан та пӗр сикмест.

Унтан ҫынсем саланаҫ,
Хай маткипе ҫак ҫын та
Киле кайма пуҫтарнаҫ.
Ку чӗнмест пӗр сӑмах та.
Киле пырса ҫитсессӗн,
Ку чӑпӑркка илет-мӗн.
Унтан пуҫлать маткине
Чӑпӑрккапа ӑс пама!
Матки пӗтӗм вӑйӗпе
Тавай пуҫлать кӑшкӑрма.
Пӗлен ӗнтӗ этеме:
Ун пек чухне вӑл темме
Ҫав тӗлелле пуҫтарнать,
Тем курман пек тем пӑхать.
Кун патне те ҫавӑн пек
Хуллен-хуллен халӑх тек
Пур енчен те пухӑнать.
Матки пушшех кӑшкӑрать:
— Кил-ха кунта, староста!
Ку пӗр ҫынна вӗлернӗ —
Тен, вӗлерӗ мана та.
.............................................
— Кала, кама вӗлерчӗ,
Кам таврашне пӗтерчӗ?
Кала-кала кӑтартать
Старостӑна кун матки.
Тӑрать мӗскӗн упӑшки...
Пӗтӗм этем пӑлханать.
Вара пурте кӗрлесе
Вӑрманалла утрӗҫ тет,
Ҫулҫӑсене катерсе
Хайхи качча тупрӗҫ тет.
Хайхи каччӑ калани
Чӑнах ларать вырӑна.
Уйӑх ҫути култарни
Пуҫне ҫирӗ ку ҫынна...
Матки юлчӗ кӗҫенме,
Куна пулчӗ-мӗн ... тӗрме!

*(1906—1914)*

## ĂС УКÇАНА ÇĔНТЕРЕТ

Паллă ĕнтĕ пуянни
Мулне шанса пурăнать;
Çăкăр çитни-çитменни
Чеелĕхпе ĕç тăвать.

Пуян: «Хамран пиçмесен,
Маншăн укçа тăвать», — тет.
Çукки: «Чипер май килсен,
Эпех çеле* тухăп», — тет.

Чылай чухне, чăнах та,
Пуян çынсем мулпах та
Самай хăртаç этеме:
Хĕн вĕсене çĕнтерме!

Ну, тепĕр чух май тупаç
Хăшсем те çук çынсенчен:
Чавса таран лăп та лартаç
(Умран мар, хуть — хыçĕнчен)!

Сăмах çине пĕр юмах
Чĕлхе вĕçне килчĕ ман.
Пуçлама çеç пит хăйсах
Каяймастăп-ха малтан.

Унта усаллиех те
Пулман пек те нимех те,
Анчах этем ĕçĕнчен
Ытла хăрать ятĕнчен.

Кашни пĕлет çав ĕçе;
Тен, хăй туни темиçе,
Çапах ăна асăнсан,
Тăрса тараç сан пантан.

Е ним пĕлмен пек пулса
Вăл сăмаха илтсенех,
Чипер тăнă çĕртенех
Яраç пурте ахăрса!..

Унтан ытла шутлăрах
Сăмах-юмах çук вара;
Вăйран ўкиччен çапах
Караç вара çăвара.

Ун вырăнне çын курман
Çĕрте е хĕр, е ача
Иккĕн пĕрле тĕл пулсан,
Çавраç вара хултăрча.

Вара унтан тутлăрах
Юмах та çук вĕсене.
Ик кун иртсен те, çапах
«Çитет!» темеç пĕр-пĕрне.

Хăвăр куратăр ĕнтĕ:
Ку ĕç çинчен эрттелте
Пĕр-ик сăмах хушасран
Кашни хăрать ют çынтан;

Вăрттăн çĕрте ун çинчен
Кашни хавас юмахлать;
Хĕрпе матка вăл енчен —
Арçынна та хăварать.

Çырас тенĕ юмахран
Ытла та пит вăтансан,
Вăрттăн çĕрте вулаччăр;
Çын-мĕн кĕрсен — пытарччăр.

I

Пурăннă тет пĕр ялта
Пуян çынпа ун матки.
Укçи те пур путвалта,
Хырăмĕ те тем тачки.

* Çиеле.

Тăват ывăл, виçĕ кин
Пурнать-мĕн ку кил хуçин.
Тата ӳсет пĕртен-пĕр
Марье ятлă яштак хĕр.

Кĕçĕн ачин, Петрин те,
Мăшăр тупма çул çитет.
Кирлĕ пулин, Марйин те
Пĕвĕ-сийĕ çитĕнет.

Петри те хĕр пăхкалать,
Ку та качча пуçтарнать.
Пуян çынтан инçех мар
Пурнать мĕскĕн Митрапхан.

Кил-çурт та ун пит начар,
Укçи те ун çуралман.
Тин Питĕрте шаккаç тет,
Яма хутаç шыраç тет.

Пурнать мĕскĕн Митрапхан —
Паранк хыпать, шыв сыпать.
Хĕлле, ĕçрен аптрасан,
Кĕрĕк арки йăвалать.

Ачисем те ун çук мар:
Ывăл ӳсет, хĕр çитнет.
Ачи, Сахар, пит хастар:
Пур кил-çурта хăй питрет.

Матиçĕ пек чипер хĕр
Пулман унти ялсенче.
Ĕçлет кана пĕлмесĕр,
Пăхан — шав ĕç аллинче.

Пуян ачи çак хĕре
Хăйне пĕлми юрататъ,
Така пусса эрнере
Матка тума шухăшлать.

Сахар сисет Матиçе
Пуян илес тенине.
Пит ратлансах ку ĕçе
Хумарĕ вăл чĕрине.

Вăл, хăй пуян Марьене
Качча илес тенĕрен,
Петĕрпе хăй йăмăкне
Чут çеç тытса хĕнемен.

Анчах хăйĕн çиллине
Шăла çыртса пусарса,
Пуян пичче ачине
Çĕнес тенĕ мел тупса.

Вăхăт иртет, кун шăвать.
Петри ĕнтĕ Матиçе
Вăрлас тесе шухăшлать, —
Вăрттăн тăвас тет ĕçе.

Пĕр каçпарах тĕл пулса:
— Пыр хай тĕле паян! — тет.
А хăй киле таврăнса
Лаша тавраш хатĕрлет.

Унтан ăйăр кӳлет те
Шартлаттарать вăрмана.
Унта пырса çитет те
Кӳртсе лартать катана.

Кĕтет, кĕтет Матиçе —
Матиç сасси илтĕнмест.
Сукмак çине темиçе
Тухса пăхать — çук, килмест!

Матиçĕ çав вăхăтра
Сахарĕпе канашлать;
Хăй шухăшне Сахара
Кала-кала кăтартать...

— Ак мĕн, Матиç: вăрмана
Ху ан кай эс, мана яр;

Матка тесе, арçынна
Пĕрер «хĕве хуптарар».
Палласси çук вăл мана...
Атя, хĕрле тăхăнтар. —

Матиç, чăнах, пиччĕшне
Шӳт çеç тăвас пек сунса,
Пур хĕр ипраç таврашне
Арчисенчен кăларса

Тумлантарать Сахара.
Пĕр вунтăват минутра
Хĕрле пулать ку Сахар:
Матиç тейĕн, — паллă мар.

Тутисем те Матиçĕн, —
Кăшт урăхла кулиçĕн.
Утни-юртни пĕтĕмпех —
Каснă лартнă Матиçех.

Хайхи Сахар хутаçпа
Матиç мулне çĕклет те,
Хăй ăшĕнче хаваспа
Йăл-йăл кулса илет те:

— Ĕнтĕ, Матиç, сыв пул! — тет.
Хăй вăрмана вĕçтерет...
Петĕр, кĕтсе ырнăран,
Чут çеç киле каяйман.

Сахар пынине курсан,
Тин чун кĕрет ку ачан.
— Эс-и, ача? Килтĕн-и? —
— Килтĕм! — Эй! — тет
лашине...

II

Пуян çын ачи хĕрпе
Кĕлете кĕрсе хупнать;
Авалхисен йăлипе,
Авланма тытса выртать.

Эх, пуçларĕ хайхи хĕр
Макăрма, ĕсĕклеме!
Шалалла уш ан та кĕр —
Салтас çук йĕм кантрине.

Тем чирпе пĕркеннĕ те —
Яхăнне те пыртармасть.
Ĕне пек кĕлернĕ те —
Хайăрсан та тапранмасть.

Хĕр пĕрмай йĕрет, улать.
Эх, каччи тапаланать!
Аптăрарĕ ним тума,
Тытăнчĕ ку йăпатма:

— Мĕншĕн эс йĕрен, ача?
Чун туртмасăрах качча
Тухса килтĕнем мана?
Мĕн çитмест тата сана?

— Çук, сана пĕтĕм чунтан
Юрататăп... Ан тыт! Яр!..
Ырринчен пуçне санран
Ним курман... Çук, уншăн мар.

— Урăх темшĕн йĕмелле?..
Пуç урлах пĕркенмелле?
— Ах, аттесен килĕнче
Тулашать ĕнтĕ пичче:

Эпĕ урлă кайнăран
Пĕтерет ĕнтĕ курсан.
— Уншăн пĕртте ан шиклен.
Хăй валли пуян çĕртен

Хĕр тупса йăпатăпăр
Е укçа-мĕн парăпăр.
— Хуть пичче каçарĕ те —
Мĕнле хамăн ку килте

Ĕçлеме пĕлес, тӳсес,
Кил-йышпа килĕштерес?
Кун пек пысăк кил-çуртра
Çаврăнаймĕ ал-ура!

— Уншăн та эс ан кулян,
Вĕренĕн-ха сыв пулсан.
Чар, ача, куççульлуна.
Яр-ха луччă аллуна...

Ку сăмахсене илтсен,
Хĕр пушшех пуçлать йĕме.
Пушшă, ку тĕрткелесен,
Хĕстерет кĕпе-йĕме.

— Мĕн чир пулнă çак сана? —
Пымалла мар яхăна.
Хальччен ыр çеç ыткăнса
Чуп туса выртаттăмăр;

Пур тĕлтен те ашкăнса
Пĕр-пĕрне тытаттăмăр.
Мĕншĕн эсĕ ун чухне
Хĕстерместĕн кĕпене?

— Эсĕ ху та ун чухне
Кун пек ашкăнмастăнччĕ,
Паянхи пек ман çине
Улăхса выртмастăнччĕ.

— Ун чухне вăл юраман,
Халь юрать: матка пулан.
Çавăнпа сана калап...
— Ах, ача, ытла хăрап!

— Ан хăра: хуллен тăвап.
— Ах, ача, ытла хăрап.
— Хуллен çеç... мĕскер хăран?
— Çук, ача, халь мар, кайран...

Мĕн тăвас тен, аптраса
Кайрĕ ку çумран тăрса.
Амăшне кĕрсе калать:
— Тем чир пулнă — хĕр макрать.

— Кус-ха, аслă кин, йăпат
Çав ухмах хĕре кайса.
Мĕн ӳкрет-ши, хăямат!
Тупнă эс те шыраса...

Пычĕ инкĕш кĕлете,
Леш ӳкрет-ха тĕпелте.
Выртрĕ инкĕш юнашар
(«Ку юрать-ха», — тет Сахар):

— Ан йĕрсем, ача, лăплан.
Мĕн ухмах пек улашан?
Пурăнма çитет кунта:
Кĕмĕл те пур, ылтăн та.

Тутарла, юрла-юрла,
Эс кунта пурăнмалла.
Тепĕр тĕрли тĕлĕкре
Тупас çук ку Петĕре.

— Ах, инке, арçын пырсан,
Пĕтĕм чун картах тăвать;
Аллипе кутран тытсан,
Çамкаран сĕрĕм тухать.

Эп нихçан та арçынпа
Айкашман апа-капа*.

* Апла-капла.

— Эй, ухмах, эс çавăншăн
Макăрса выртатна-ха?
Пĕç хушши ыратнăшăн
Петĕртен пăрнатна-ха? [...]

Çил пек утăнса тухать
Аслă кинĕ алăкран.[...]

— Çук, апи, йăпанаймас
Тем тусан та чарăнмас.
Хам та унпала пĕрле
Чараймарăм куççуле.

— Ватăлан пуль эс те, кин.
Эс кайса йăпат эппин! —
Терĕ карчăк тепĕрне,
Мĕн çитместь çăва хĕрне...

Кĕчĕ ку та йăпатма,
Выртрĕ ку та «кăтартма».[...]

— Çук, пулмарĕ йăпатса,
Хам та йĕтĕм хурланса, —
Терĕ те хунямăшне,
Шурĕ кăмака хысне.

Аслă кинĕпе иккĕш
Тăк! тĕртеççĕ пĕр-пĕрне:
«Ан тив, лектĕр виççĕмĕш...
Пĕр пек пултăр кашнине».

— Кус, вăталăх кин, кайсам, —
Тет хунямăшĕ, — чарсам!..
Кайрĕ ку ӳкĕтлеме.
Выртрĕ ку та вĕрентме...

Виççĕмĕш те пай илсе
Тухрĕ çил пек сирпĕнсе.
Вăл та картана кĕрсе
Тухрĕ тутăр тӳрлетсе.

Ячĕ карчăк кĕçнине,
Çамрăк, чиперскер кинне.
Ку та «нишлĕ» Сахара
Йăпатма пырса выртать.[...]

— Çук, апи, манран пулмас:
Тем тусан та чарăнмас.
— Йытах çуртăрах сире!
Виç-тăваттăн пĕр хĕре

Йăпатма пултараймаç.
Хăйсем макăрса тухаç!..
Чуп, Марье, кайса йăпат.
Чарăнми çав, хăямат...

Кайрĕ хĕрĕ йăпатма
(Хăй валли те пай тупма):
— Мĕн унтан хăрамалла?
Çын кăларнă япала!..

Авлансан — пур çын тăвать... —
Текелет ку (йăпатать!). —

Эпĕ хам та инкене
Пиччепе чылай курап.
(Çыварнă теç йăмăкне...
Эп çыврап-и? Йăшт пăхап!)

Кăтартсах парам сана.
Эс пичче пул, эп — матки.
Ак ку пысăк арчана
Тăвăпăр кутник сакки.

Эп çывратăп, эс пыран.
Тăк! тĕртен мана кутран.
Эп сисеп те вăранап,
Месерле сиксе выртап.[...]

Тахçанах çакна Сахар
Выртнă-ха кĕтсе паян.[...]

— Арçынпа хĕре пĕлмеç!
Терт анчах инкесенчен, —
Терĕ ку, пӳрте кĕрсен.
Леш те кайрĕ хыçĕнчен.

— Хуть вĕлерĕр Сахара:
Арăм турăм хĕрĕра! —

Терĕ ку амăшсене.
Амăш пăхрĕ хĕр çине,
Хĕр кăтартрĕ кун çине, —
Пехиллерĕç иккĕшне!

*[1906–1914]*

## ХĔРАРĂМ ÇИНЧЕН

Астăватăр пуль — эрех
Нумай пулнă ĕлĕкрех.
Хăш те пĕри хупахран
Эрнипе те тухайман.
Нумайăшĕ кил-çуртне
Ĕçсе янă ун чухне.
Пĕрер черкке хыпмасан
Ниçта канăç тупайман.
Çав вăхăтра: «Сут чунна,
Ме аллă пус!» — те ăна, —
Чăнах, сана ӳсĕрле
Чунне сутĕ эрехле!
Укçи пĕтнĕ вăхăтра
Пĕри çапла хупахра:
— Пĕр стаканла хам чуна
Сутăттăмчĕ шуйттана,
Çурлать пусăм, — терĕ тет.
Шуйттан кăшăрт! кĕчĕ тет.
— Эсĕ чăнах калатни?
Ме пĕр стакан! Сутатни? —
Терĕ тет. Ку: — Сутап, ил!
Çулталăкран илме кил, —
Терĕ тет. Леш: — Ну, асту:
Каланине ан ман, ту, —
Тет те куçран çухалать.
Пăхать хай çын — штоф
лартать.
Мăн кун çитрĕ ку çынна!
Сухалне çеç шăлкалать!
Ан пыр ютти яхăна —
Хăй пĕччен пĕр туй тăвать.
Кашни кун ку хупахра,
Кашни кун ун — штоф умра!
Сисмерĕ те — срок çитет:
Ыран-паян леш килет.
«Питех хĕн-çке ху чунна
Парса яма шуйттана!
Мĕнле хăтлас, мĕн тăвас?
Чуна мĕнле хăтарас?
Ах тур, ах тур! — тет хайхи. —
Мĕн турĕ ун эреххи?!.»
Матки ыйтать-мĕн кунран:
— Мĕн эс питĕ кулянан?
Мĕн ахлатан пĕрмай? — тет.
Тин маткине пĕлтерет
Мĕнле-мĕнле пулнине,
Чунне епле сутнине.
Матки калать (шалккă-çке
Халĕ ăна, старике!):
— Юрать, лăплан, ан кулян:
Чунна çăлăп шуйттанран!
Анчах ĕçме пăрах! — тет.
— Ĕçме тетни? Юрать, — тет.
Хăй вăхчипе шӳреки
Пырса çитет кун патне.
Хăранипе старикки
Латăр! ярать йĕм тĕпне.
Матки калать шуйттана:

— Чим-ха, малтан эс мана
Виç задача туса пар.
Тусан, старик — манăн мар.
Илях вара ун чунне,
Эрех панă вырăнне.
Анчах тăва пĕлмесен —
Ху ман алла капленен!
Татăк хӳре пулăн-и,
Мăйракасăр юлăн-и! —
Тет. Хай шуйттан тĕлĕнсе
Куçне чарса пăрахать,
Хăй, хӳрине пĕтĕрсе,
Пĕç хушшине пытарать.
Çапах та хăй: — Ну, кала,
Мĕн вăл, мĕнле япала?
Çĕнеетĕн-и мана? — тет.
(Старикĕн те чун кĕрет).
Кĕпи-йĕмне хывать те,
Кутне çӳле тăвать те:
— Тыт! — тет матка шуйттана.
Çарт! тутарать. (Тыт ăна!)
Халь те хытă йĕкĕрлерĕ,
Çук, çапах та лекеймерĕ!
Унтан çăмне çăлчĕ те
(Пуçри çăмне мар ĕнте!):
— Ме, тăс! — терĕ шуйттана: —
Тăсса хутăн — чун сана.
Тăсать шуйттан — тăсăлать,
Хурать — каллех хутланать!
Каллех тăсать — тăсăлать,
Хурать — каллех хутланать!
Миçе тĕрлĕ тăсмарĕ —
Ниепле тӳр пулмарĕ!
«Ну, ту ĕнтĕ тепĕрне!
Вара илех ун чунне».
Выртрĕ матка урайне,
Карса хучĕ çăварне,
(Паллă ĕнтĕ, çӳлти мар).
— Ак ме, — терĕ, — хуплаттар!
Хуплать шуйттан çӳл пуçне —
Аял вĕçĕ ейĕлет!
Хуплаштарать аялтан —
Çӳлти карлать, тытмантан.
Пĕрет икĕ вĕçĕнчен —
Карнать каять варĕнчен!..
Хашкать анчах шӳреки —
Пĕрлешмеç вит ик айкки!
Шăк та тухать ку маткан.
«Чим-ха, тухса кĕрем», — тет.
Кăна шанмас вит шуйттан:
«Эс тем тăвăн, пĕрле»...тет.
Тухаç тула иккĕш те.
Шăнă чухне пăхрĕ те,
«Эйй-й! сан унта: пĕрре мар —
Ик шăтăк та пур пулас?!» —
Терĕ тет: «Çук! Кирлĕ мар!
Тарам чун та! Кай — пулмас»...
Тухах тарчĕ тет шуйттан.
(Шуйттан хăрать — маткаран!)

*1916, чӳкĕн 21—22-мĕшĕсем*

## АШШĔ ПИЛĔ

Вилес чухне ывăлне
Ашшĕ çапла пилленĕ:
— Асту, ачам, çаксене,
Авал сăмах çӳренĕ:
Çула кайма тухсассăн,
Хăвăнтан туя ан хăвар;
Çын япала ыйтсассăн,
Нихçан та ан шанса пар;
Хусăр пуçне маткуна
Шанса ан яр ниçта та.
Итле, ачам, аçуна!
Тухăн-çӳрĕн таçта та,
Нумай çынна япала
Пама лекĕ тен сана,

Тен, маткуна ют яла
Яма лекĕ хăнана —
Асту, Сантăр, асăрхан:
Хăвăн чысна ан пĕтер.

Пилне парсан, выртайман —
Вилнĕ вара, ватăскер.

Ĕçлемелĕх çĕр пуртан
Сантăр чухăн пурăнман:
Суха туртма, çӳреме
Кĕсри пулнă витере;
Выльăх-чĕрлĕх ӳстерме
Тырри пулнă пӳлмере.
Шыв хĕрринчех ларнăран
Хур-кăвакал татăлман.
Хурт пахчийĕ тытнăран
Сĕтел çинчен пыл кайман.
Ăна-кăна туянма
Укçи пулнă кĕсьере;
Уяв чухне юсанма
Тавраш пулнă çӳпçере.
Хăй те ĕнтĕ ĕçченрен,
Сăн-пуçĕ те чипертен
Матка хитре тупнă вăл,
Пит юратнă пĕр-пĕрне.
Ачи те пур — пĕр ывăл;
Ванюш теççĕ ывăлне.

Матки ача тăвиччен
Ашшĕ «сыхлан» тенĕрен
Сантăр туя илмесĕр
Ялтан тухса çӳремен;
«Чипер асту!» темесĕр
Япалине илтермен;
Çамрăк хитре маткана
Пĕччен яман хăнана.
Те пит асăрхаттарнăран,
Те Тур çырни тухмантан, —
Çул кайсан та, килсен те,
Çын япала илсен те, —
Ăна хальччен ним пулман.
Кӳршĕре те, килте те,
Ĕçкĕ ĕçнĕ тĕлте те
Маткаран та ним курман.
Кайран Сантăр та манса,
Те этеме пит шанса,
Каяс-пăхас çĕрте тек
Туман ашшĕ хушнă пек.

Пĕрре Сантăр юсанса,
Çĕнĕ кĕрĕк тăхăнса
Тухса утнă пасара.
Туйи пулман алăра.
Аякка та каяйман —
Сикнĕ тухнă çырмаран
Кĕрт йыттисем уласа —
Пĕтереççĕ тулласа!
Мĕскер тăвас? Ни тарма,
Ни патакпа хăмсарма!
Пĕри силлет кăкăртан,
Тепри кăшлать çурăмран.
Çанăран та çулласçĕ,
Ураран та туртаççĕ!..
Юрать çынсем пыраççĕ,
Йытта хуса яраççĕ!
Вĕсем пырса тухас мар —
Унтах пулатчĕ масар!
Ак çитрĕ те пиллени —
«Алла туя илменни».

Хайхи Сантăр шухăшлать:
«Атя ĕнтĕ, мĕн пулать —
Пĕр пуçланă япала,
Сăнам, курам малалла».
Вăхăт шăвать. Кĕркунне
Сантăр пиччĕш кӳлĕрен
Кантăр кайса тиеме
Лаша ыйтать шăллĕнчен.
(Кĕсрен çавă вăхăтра

Тихи пур-мĕн хырăмра.)
Сантăр парса ярать те
Çил пек вĕçет кӳл хĕрне,
Ката хыçне выртать те
Вăрттăн сăнать піччĕшне.
Пиччĕш пĕтĕ кĕсрене
Хĕрхенессе пĕлмерĕ:
Шывран тухнă кантăрне
Тӳрех çăка тиерĕ.
Çăкĕ пулчĕ тем купи —
Темле тӳсет урапи!
Çыхсан-тусан — хăвалать.
Лаши туртмасть, ку — çапать...
Тăвайккинчен тухас чух
Хăм пăрахрĕ хай кĕсре.
«Ак çынăнне илсе тух!
Мĕн турĕ ку, чĕмере!» —
Тесе тăрать хай пиччĕш.
Пулчĕ те ак иккĕмĕш!
Пиччĕш çапах ăс тупать:
Хăмне кайса чикет те
Кĕсре хыçне тасатать.
Чăпăрккапа сĕлтет те
Ним пулман пек уттарать.
Ак «пичче» те! Мĕн тăвать!..
Пиччĕш куçран çухалсан,
Тухать Сантăр катаран.
Тиха тирне сĕвет те
Утать хуллен килелле;
Кĕлетелле кĕрет те
Çакать тире пĕр тĕле.

Кун иртет те çĕр иртет,
Акă тепĕр çу çитет.
Хунĕ, каннă вăхăтра,
Ĕçке чĕнет Сантăра.
Матки чупса çеç çӳрет:
— Каяр, Сантăр, каяр, — тет.
Сантăр сăхман пĕркенсе
Чире перет, кĕлерет.
— Çук, пулмасть пуль çӳресе,
Каях пĕччен, — текелет.
(Ĕнтĕ сăнать: юлашки
Мĕн кăтартĕ, тет, матки.)
Матки пушшех хĕпĕртет.
(Асту, саншăн пит йĕрет!)
Çĕклет те хай ачана,
Тухса чупать хăнана.
Сантăр сиксе тăрать те
Матки хыççăн вĕçтерет;
Хунĕ патне пырать те
Пĕр кĕтессе тĕршĕнет.

Матки, пĕччен пынăран,
Хăйне ирĕк тыткалать.
Пыл-сăрана алтăртан
Арçын пекех антарать.
Этем ĕçсен шухланать,
Типтер пĕтет, чыс каять...
Пăхать Сантăр: маткипе
Пĕр сар каччă тухаççĕ,
Урапасем тĕллипе
Картаналла утаççĕ.
Матки хăйĕн ачине
Карта умне лартать те,
Хăйсах кайман каччине
Пĕр аллинчен тытать те
Илсе кĕрет шалалла.
— Пулать ĕнтĕ япала! —
Сантăр вăрттăн ачине
Чупса пырса илет те,
Темле кӳршĕ маткине
Пăхма леçсе килет те:
«Чим, малалла мĕн пулать?» —
Тесе каллах пытанать.
Пӳртрисем ним пĕлмеççĕ,
Ташла-ташла ĕçеççĕ...
Пăхать матка ачине —
Ача таçта-çăвара!
Мĕскер калас çынсене?

Мĕнле суяс Сантăра?
— Атя çурта çунтарар,
Çунчĕ тесе улталар!
Каччи çурта вут тĕртет...
Сантăр хăй та шарт сикет.
Çынсем хăйне хушасран
Тухса шăвать хыçалтан...
Этем вĕркет, çухрашать,
Вĕтти-шакки улашать...
Вут хĕрринче кун матки
Улать никам чарайми!
Тепле шăтмасть карланки,
Тепле юхмасть пуç мими?
— Аслăк айне лартайтăм,
Хам шалалла каяйтăм...
Усал-тĕсел тиврĕ-ши,
Çын ылханĕ çитрĕ-ши?
Ай, мăнтарăн ачана —
Мĕн хускатнă-ши ăна?
Шалах шуса кĕнĕ пуль,
Самай вуттах лекнĕ пуль?.. —
Пĕтĕм халăх ĕненет;
Хунĕ: — Ачине пит шел, —
тет...
Килет матка каç пулсан
Макра-макра хăнаран.
Ачи çунса кайнине
Кала-кала кăтартать.
— Кĕрес мар-мĕн картине, —
Тен, çунмĕччĕ, — тет, суять...
Выртать Сантăр, пĕр сикмест.
Ним курман вăл, ним пĕлмест.
— Ан йĕр ĕнтĕ, юрĕ, — тет, —
Тата урăх пулĕ, — тет.

Кил-çурт сая пулнăран
Сантăр хунĕ кулянман;
Ик-виç эрне хушшинчех
Ĕлĕкхинчен хитререх,
Хăма витсе, сăрласа
Лартать çуртне çаварса.
Каллах пухать тантăшне
Сăра ĕçме хăй патне.
Сантăр чире пемерĕ,
«Каях пĕччен» темерĕ;
Лаша кӳлсе лартрĕ те:
— Юсан! — терĕ маткине.
Хăй тем çыххи салтрĕ те
Тем чир хучĕ кут айне.
— Лар! — терĕ те маткана,
Тухса кайрĕç хăнана.
Курса ытармалла мар —
Ларса пыраç юнашар.
Лаша — вут пек алăра!
Ачи çеç çук аркăра!

Хитре ĕçет кун хуни![*]
Эрех, сăра, пыл хывни
Кая пĕлмест аларан,
Туртса çеç лар алтăртан!
Ĕçнĕçемĕн хăнасен
Чĕлхе-çăвар усăлать;
Пуçа лекнĕ маткасен
Юрă-сăвă тупăнать.
Тĕрлĕ шӳтсем тупаççĕ,
Юмах-халап яраççĕ.
Ĕçкĕсенче халиччен
Никам Ванюш ашшĕнчен
Лайăх юмах ярайман,
Е шӳт-кулă тупайман.
Пĕтĕм çынни çавăнпа
Кун çумнелле пухăнать;
Хĕрарăм та юрăпа
Хăлха çурма чарăнать.
— Яр-ха, ача, пĕр кана
Юмах, — теççĕ-мĕн кăна.
Сантăр чĕнмест, тилмĕртет.
Ӳсĕр этем тилмĕрет.

[*] Хуньăшĕ.

— Юрĕ, эппин, ну, итлĕр!
Юмах суя ан тейĕр.
«Ĕлĕк ашшĕ ывăлне, —
Терĕ Сантăр, — аллине...
(Туя илме хушнине
Калас тетчĕ çынсене.)
— Пысăк кӳсек тыттарчи?
Е кин яла чупасран —
Тимĕр тĕплĕ йĕм пачи? —
Терĕ пĕри хыçалтан:
«Юмах-и вăл? Пĕтрĕ те!»
Те пит шӳтлĕ туйăнчĕ —
Нумай кулă тупăнчĕ.
Сантăр: — Чим-ха, — терĕ те
Ячĕ малтан кĕрĕкне
Йытсем мĕнле çурнине.
Унтан пуçлать кусене
Хăй пиччĕшне кĕсрене
Кантăр кайса кăларма
Пани çинчен калама;
Хăм тухасран хăраса,
Пиччĕш çанă тавăрса
Хăма кутăн, хырăма
Тĕртни çинчен сăтăрма.
Çын курасран васкаса,
Куçа-пуçа чалăртса
Вăл тихана пытарма
Чупни çинчен кастарма;
Шĕлепкине тавăрса,
Хӳре айне тасатма
Пиччĕш мĕнле хашкаса
Шыв кӳнине çаптарма.
Пĕтĕм халăх хăнара
Вилет çаплах ахăрса!
Хăшĕ-пĕри ун тавра
Çĕре ўкнĕ антăхса.
«Мĕскер шăмасть теп кĕсре?
Пăхап — алшиш-мĕн лере!
Ак шӳт!» — тесе пĕтерет
Сантăр хăйĕн юмахне.
Пушшех урай кисренет,
Пурте тытнă хырăмне.
Сике-сике кулаççĕ,
Пиччĕш çине пăхаççĕ.
Тăрать пиччĕш, ним чĕнмест,
Ни кулаймасть, ни йĕмест.
— Тата пур та каласси —
Çитрĕ киле каясси.
Ĕнтĕ пурте хăнана
Пырса курăр ман патна.
Хыпар тусан — ан юлăр;
Ну, пурсăр та сыв пулăр!
Эй, чир! Пĕртте астуман:
Парне пурччĕ-халĕ ман.
Укçа илес çук эсир, —
Ме-ха сана тиха тир! —
Этем кулса пӳрт çурлать,
Хунĕ пĕççе шарт! çапать.

Иртрĕ ĕçкĕ пит тӳлек.
Ĕнтĕ Сантăр, чĕннĕ пек,
Хурăнташне-тăванне
Ĕçке йыхрать хăй патне.
Матки чупать, кускалать,
Пӳртне-çуртне пуçтарать,
Апат-çимĕç хатĕрлет,
Сăнне-пуçне типтерлет.
Епле чупса çӳрес мар!
Паян кунта — Пихампар! —
Тӳрри килет хăнана.
Тен, май килсен — картана!..
Килет хăна кĕрлесе,
Яла тусан вĕçтерсе.
Килет ватă хунĕ те,
Ват карчăкне каплатса.
Кĕсре кумми пулни те
Çитет ĕçке мăшлатса.
Ялти пĕлĕш-паллакан,
Пур хурăнташ, пур тăван
Çитсе тулать кун пӳртне.

Хăшĕ сăра ĕçесшĕн,
Хăш те пĕри ун шӳтне
Çынпа пĕрле илтесшĕн.
Савса пынă хăнине
Сантăр шукăль ĕçтерет,
Урай тулли çыннине
Сисмесĕрех ӳсĕртет.
Каллах çынсем йĕр-тавра
Турткалаççĕ Сантăра:
Пурте: «Юмах яр!» — теççĕ, —
Е шӳт туса пар, — теççĕ.
Сантăр «тусĕ» юмаха
Кĕтсех ларнă-мĕн те-ха —
Сăлтав пулман тапратма.
Тин май килчĕ пуçлама.
Мĕскĕн матка ним сисмест,
Кулса чупса çеç çӳрет,
Тӳрри çинчен куç илмест.
Ай, çамрăк пуç, шеремет!
Тăчĕ Сантăр вырăнтан,
Тухса пăхрĕ алăкран;
Пĕр карчăка пăлтăртан
Тем kаларĕ хăлхаран.
Унтан пӳрте кĕчĕ те
Ячĕ юмах пуçласа:
— Ĕлĕк хуньăм пӳрчĕ те
Ларатчĕ çав çутăлса.
Малашне, тен, хуньăм та
Килсе кĕмĕ ман çурта.
— Ак аташни! Ак юмах!
Ӳсĕр пулĕ эс, чăнах!
— Çук, тантăшсем, ӳсĕр мар,
Аташма та — чирлĕ мар.
Çук, хуньăмпа эп паян
Юлашки хут ĕçетĕп,
Тен, ыранах эп унтан
Ĕмĕрлĕхе писетĕп!
Ĕненетĕн-и, хуньăм,
Санăн хĕрӳ — ман чунăм
Сире вутта янине,
Ванюш çунчĕ тенине?..
— Хуллен, кĕрӳ, ан аташ!
Ун пек тăви хурăнташ?
Шӳт тăватсăн — шӳт ту эс, —
Кун пек сăмах килĕшмест.
— Шӳт тăвать вăл, шӳт тăвать!
Ахаль перет: ав кулать!
— Ну, шӳт пулсан — шӳт
пултăр,
Суйи кайран курăнтăр.
Итлĕр эппин пĕр юмах! —
Халăх чарнать шăпăртах.
Унтан пуçлать кусене
«Пĕр çын» çинчен калама;
Матки мĕншĕн сарайне
Кĕни çинчен çаптарма;
Хăй ачине кам патне
Леçни çинчен кастарма;
Матки мĕншĕн ашшĕне
Тĕртни çинчен сăтăрма —
Пĕтĕм халăх шарт! сикет:
— Суя пуль ку, Сантăр, — тет.
— Ак суйине-чăннине
Халех курăр! — Шик! шăхрать.
Хайхи карчăк ачине
Пӳрте кӳртсе тăрататъ.
— Акă пăхăр Ванюша!
Суйни ĕнтĕ ман матка
(Тăрать матки, апăрша!)
Е тĕрĕсне калани?
(Тӳрри тĕртрĕ алăка.)
Вутта хăй-и, çын яни
Ĕнтĕ мĕскĕн хуньăма?
Халăхăн ним калама.
— Сире ĕнтĕ, ыр хăна,
Юлашки хут шӳт тăвам:
Чыс пĕтерне маткана
Хăйне тивĕç чыс парам.
Хыв çи-пуçна, кĕççе пит!
Пĕвӳ пур сан вунă шит,

Пĕр хăлаç пек çӳçӳ пур, —
Пуçра ăс çук! Кун пек хур
Этеме мар, йытта та
Тумĕччĕ тен, шуйттан та!
Кĕпе-йĕмсĕр маткине
Сантăр çĕрте вырттарать.
Ик аллине, урине
Тăват çынна тыттарать.
Мăнтăр çемçе ӳт çине
Урпа-сĕлĕ купалать.
Вара пĕтĕм кайăкне
Пӳрте кĕртсе тултарать.
Какăлтатса, нартлатса,
Пĕр-пĕринчен ăмăртса
Сăхать кайăк урпана.
Чунне илеç маткана!
Пĕçĕрен те сăхаççĕ,
Кăкăртан та туртаççĕ.
Пĕрчĕ хыпса çав тĕлтен
Татса илеç ӳчĕпех.
Вăлта хыпнă пулă пек
Авкаланать кун матки.
Чăнах тискер ку инкек
Ан пултăрах ун пекки!
Кăвакартса, шыçтарса,
Чăрмаласа, шăйăрса,
Пĕсехине тултарса
Кайрĕ кайăк тапранса.
— Тăхăн, йытă, кĕпӳне! —
Терĕ Сантăр маткана.
Çӳçрен ярса илчĕ те
Пĕрех тапрĕ кутĕнчен.
Матки якăлт! сикрĕ те
Тухса ӳкрĕ пӳртĕнчен.

— Ăçта-ха çав «пуçана»? —
Терĕ Сантăр каччăна.
Пăхкалаççĕ йĕр-тавра —
Çук та лешĕ хăнара.
Сисмен хутран, ерипен
Тухса вĕçнĕ читлĕхрен.
— Шунă пулас вăл кунтан, —
Терĕ пĕри хыçалтан.
— Шутăр!.. Мĕншĕн тесессĕн,
«Кĕсри кĕçенмесессĕн
Ăйри пымасть ун патне», —
Тетчĕ ĕлĕк ман анне, —
Терĕ шур çӳç чĕререн
Кĕтмен хутран кĕтесрен.
Сантăр пуçа чикрĕ те
Чĕнеймерĕ нимĕн те...

Кайрĕ хăни саланса,
Кĕтмен çĕртен «шӳт» курса.
Хăшĕ-пĕри кулаççĕ,
Хăшĕ-пĕри вăрçаççĕ;
Упăшкисем маткине
Йĕкĕлтесе пыраççĕ;
Лешсем тăснă тутине —
Кашкăрла çеç пăхаççĕ.

Хитре матка, чипер кин,
Хăть амăшне курăнин!
Таçта кайса çухалнă...
Сантăр тепĕр авланнă.
Ун пек, кун пек тек пулман,
Тӳлек тытнă кун-çулне;
Ашшĕ пек те пил паман
Вилес чухне ывăлне.

*1919*

## АСӐРХАТТАРУСЕМ

Гаврил Кореньков ҫырнисем уйрӑм кӗнекен малтанхи хут тухнине кура унӑн ал ҫырӑвӗсен шӑпи ҫинчен, вӗсем ӑҫта упранни ҫинчен пӗтӗмлетсе тӗплӗн каласа хӑварни кирлӗ. Ҫыравҫӑ еткерӗ, тӗпрен илсен, халиччен алҫырусем хальлӗн упраннӑ. 1970 ҫулччен унӑн хайлавӗсем питӗ сахал пичетленнӗ. 1906—1907 ҫулсенче «Хыпар» хаҫатра «Ӗҫлеме чӗнни» тата «Хальхи пурнӑҫ» («Тӑлӑх арӑм») сӑввисемпе И.А. Крыловӑн чӑвашла куҫарнӑ пилӗк юптарӑвӗ тухнӑ. Совет саманиччен вӑл урӑх пичетленни паллӑ мар (прозӑпа ҫырнӑ статья-хыпар таврашӗ вырӑсла хаҫатсенче пичетленни ҫинчен, сӑмахран, пӗрре те асӑнман). 1919 ҫулта Кореньков «Ашшӗ пилӗ» тата «Матка пулнӑ упӑшка» сӑвӑлла пысӑк хайлавсене иккӗшне уйрӑм кӗнекен пичетлеме хатӗрлесе парать, анчах Хусан кӗпӗрнин Чӑваш пайӗ вӗсене Мускава илсе кайнӑ чухне пуйӑс ҫинче ытти чылай алҫырусемпе пӗрле ҫак алҫырусене те вӑрласа каяҫҫӗ. Сӑвӑҫӑн уйрӑм кӗнеке кӑларас тенӗ ӗмӗчӗ ҫапла телейсӗр вӗҫленет. Автор ку ӗҫе иккӗмӗш хут тытӑнни паллӑ мар. Кун хыҫҫӑн Кореньков хӑй куҫарнӑ юптарусене пичете сӗнме тытӑнать. Акӑ 1920 ҫулта «Шурӑмпуҫ» И. Крыловӑн вӑл куҫарнӑ вунӑ юптарӑвне пичетлет (6—8, 9—12 №), 1924 ҫулта «Ӗҫлекенсен сасси» журналта (4—5 №) вунултӑ юптару кӑларать (ку йыша малтан асӑннӑ журналта тухнисене те кӗртнӗ). Кӗҫех хӑш-пӗр юптарӑвӗсем вӗренӳ кӗнекисемпе тӗрлӗрен хрестоматисенче ҫапӑнаҫҫӗ. 1944 ҫулта И. Крыловӑн «Баҫнӗсем» кӗнеки чӑвашла тухать, унта Кореньков куҫарнисенчен саккӑрӑшӗ кӗнӗ. 1926 ҫулта сӑвӑҫ паллӑ мар вырӑс поэчӗн (е поэчӗсен) икӗ сӑввине тата вӗрентӳ кӗнекинчи вак-тӗвек статьясене «Ҫутталла» кӗнеке валли куҫарса парать (1926, 1928 ҫулхи кӑларӑмсенче чылайӑшӗ тепӗр

хут пичетленсе тухаççĕ). Каярах вăл куçарнă тепĕр сăвă кăна тĕл пулать (Джамбулăн «Сталин» сăвви «Илемлĕ литература» альманахра 1944 çулта тухать. Хăй çырнă сăввисенчен поэт пурăннă вăхăтра «Ĕçлеме чĕнни», «Хальхи пурнăç» шкул кĕнекисемпе тĕрлĕрен антологисенче темиçе хут та пичетленеççĕ. Ытти сăввисенчен пĕри кăна «Чей çырли») «Канаш» хаçатра çапăнса тухать (1921, акан 27-мĕшĕ). Сăвăланă юмахсемпе поэмисем ку тапхăрта пĕри те пичете лекеймен. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче тăван поэзире нумай ĕçленĕ сăвăç-куçаруçăн поэзи еткерĕ 1970—1990 çулсенче тин вулакан патне анлăн çитме тытăнать, ку яхăнта вăл çырнисем хаçат-журналта, Тĕпчев институчĕн кĕнекисенче чылайăшĕ малтанхи хут кун çути кураççĕ (ăçта-ăçта мĕн-мĕн тухнине кĕнекере хушса панă ятарлă библиографире вуласа пĕлме пулать).

«Çырнисен пуххине» хатĕрленĕ чухне çакăн пек алçырусемпе усă курнă:

«Коренкке Кавĕрлин сăввисем» алçыру. — ЧПГĂИ ĂА, I, 687, 110—121 л. Вĕçĕнче çапла кăтартнă: «Копия с рукописи 1906 г., декабрь). Переписал И.Д. Никитин». Кунта çакăн пек хайлавсем кĕреççĕ: «Вăрă арăм юрри», «Тăлăх арăм — хальхи пурнăç», «Авăн çапса пĕтертĕм», «Авăн пăтти», «Эпир тунă çылăха», «Эх, Турăçăм, Турăçăм...», «Ку таранччен ман куççем...» сăвăсемпе вĕçленмен ятсăр поэма пуçламăшĕ тата сăвăсем хушшине çырса хунă ик йĕрке: «Çыраканни Кавĕрле, Тольк[к]ă çырни темĕнле». Поэма пуçламăшĕнче унăн тĕп геройĕ Ăслă Иван Петĕрĕ пуласси лайăх палăрать, çавăнпа хайлава «Ăслă Иван Петĕрĕ» тесе ят пама юрать (автор ун çинчен калани, поэма ятне асăнни ниçта та тĕл пулман-ха). И.Д. Никитин (Юркки) Кореньков çырнă сăвăсемпе поэма пуçламăшĕн тексчĕсене нимĕн улăштармасăр çырса илнĕ.

2. «Хĕре уйăх илни», «Эсрелĕ», «Чăвашпа тутар». — ЧПГĂИ ĂА, III, 6, 416—419, 429—443, 443—454 с. Ку алçырусене Михаил Шевле (Васильев) урăх тетрадь çине куçарса çырнă, хăйĕн ытти материалĕсемпе пĕрле Н.И. Ашмарина ярса панă. Текстсене тĕплĕ те тирпейлĕ çырнă, вĕсене чӳк уйăхĕнче çырнине кăтартнă, малтанхи иккĕшне Тĕрлемесре, юлашкине хăй ĕçлекен Йопсарта çырса хунине пĕлтернĕ. Пĕрремĕшпе иккĕмĕшне Кореньковпа пĕрле, теприне Кореньков хăй пĕчченех çырни çинчен асăрхаттарнă.

3. «Г.А. Кореньков çырнисен пуххи» — ЧПГĂИ ĂА, V, 94, 405 инв. №. Пухса хатĕрлекенĕ — М.Г. Хури-Ильин. Кунта 9

сăвă, 6 юмах-поэма (асăннă вĕçленмен поэма пуçламăшĕ — «Ăслă Иван Петĕрĕ», «Ашшĕ пилĕ», «Матка пулнă упăшка», «Пĕр пек пултăр», «Уйăх курнă ĕç» (Уйăх свидетель пулни), «Хĕрарăм çинчен») тата чăвашла куçарнă 4 сăвă (А. Пушкин, И. Никитин тата паллă мар сăвăç сăввисем), И. Крыловăн 19 юптарăвĕ. Алçыру вĕçĕнче поэт библиографийĕпе асăрхаттарусен пайне хушса панă, унта алçырусене ăçтан тупнине, пичетленнĕ текстсене ăçтан илнине пĕлтернĕ, уйрăм улăштарусем çинчен ăнлантарнă. Алçырăва пĕтĕмпех машинкăпа çаптарнă. Вăл уйрăм кĕнекен пичетленсе тухайман. М. Хури хаçат-журналта тухнă текстсемпе, поэтăн килĕнчи халиччен çапăнман ал çырăвĕсемпе усă курнă, хăш-пĕр текстсене кăшт-кашт улăштарса кĕртнĕ.

М. Хури хăй хатĕрленĕ «Çырнисен пуххипе» пĕрле çак алçырусене пухса панă:

1) К.В. Иванов ячĕпе хисепленекен Литература музейĕпе Чăваш кĕнеке палатин ĕçченĕсем хăйсен фондĕнче Кореньков ал çырăвĕсем çукки çинчен пĕлтерекен справкăсем;

2) М. Хури Г.А. Кореньковăн «Çырнисен пуххине» епле пухса йĕркелени çинчен ăнлантарни;

3) Г. Кореньков 1936 çулта çырнă «Автобиографин» сыпăкĕсем, вĕсене автор хăй çырнă. Ăна поэтăн килĕнчи архивран илнĕ пулас (ун пирки ним те шарламан);

4) Г. Кореньковăн 1916—1917 çулсенче вăрттăн чĕлхепе çырнă текста М. Хури «хамăр вулакан сăмахсем туса çырнă» алçыру;

5) Г. Кореньковăн «Ашшĕ пилĕ» сăвăлла юмахĕн ал çырăвĕ. Ăна автор 1919 çулта çырнă, 1906 çулхи «Авалхи çын сăмахĕ» юмахне тĕпрен çĕнетсе йĕркеленĕ. Ăна пăхса тухма пĕр-пĕр комитета панă пулас, юлашки страницăра çапла хакласа çырнă: «Сказка глубоко народная, но также глубоко вульгарная. Секр[етарь] Ком [итета] АЗ». Алă пусаканĕ Аркадий Золотов пулма пултарнă. Алçыру Данилов аллине епле лекни паллă мар.

4. 1968 çулччен Кореньковăн илемлĕ сăмах еткерĕн пысăк пайĕ Г.И. Комиссаров (Вантер) аллинче упраннă. Ун хыççăн вĕсем Н.Г. Краснов аллинче пулнă, кайран пурне те Чăваш гуманитари институчĕн ăслăлăх архивне панă (V, 395). Ку алçырусене тăвата ушкăна пайланă: икĕ тетрадьре — сăвăсем, виççĕмĕшĕнче — «Иванпа Хĕветле» поэма, тăваттăмĕш ушкăнра — сăвăсем, куçарусем (А. Пушкинăн «Пулăçăпа пулă юмаххи», И. Крылов юптарăвĕпе И. Никитин сăвви). Юлашки ушкăнрисене малтан çĕлесе хуман пулнă, халĕ вĕсемпе пĕрле Н. Краснов

аллине Тĕрлемесре лекнĕ тепĕр сăввăн копийĕ те («Ах тур, епле пăрахса...») çĕлесе хунă. Çак алçырусенче ытти çĕрте çук хайлавсем нумай. Пĕтĕмпе кунта поэт хăй çырнă 104 сăвă. Вĕсене хăçан çырнине, унта мĕн-мĕн çинчен каланине Комиссаров ятарласа «Г.А. Кореньков как поэт» статьяра тĕплĕн пăхса тухнă, унтах сăвăç пултарулăхĕн уйрăмлăхĕсене те тишкернĕ. Ку статья «Çырнисен пуххинче» пичетленнĕ май асăннă алçырусене кунта кĕскенрех хакласа каланă.

5. Г. Кореньковăн тăван килĕнче упраннă алçырусем. — ЧПГĂИ ĂА, V, 799. Вĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

1) «Предания и сказки» ятпа тăракан ушкăнра «Матка пулнă упăшка», «Пĕр пек пултăр», «Чăвашпа тутар», «Уйăх свидетель пулни» юмахсемпе халапсем (автор новелла йышши халапсем тăрăх сăвăласа çырнă поэмăсене «халапсемех» тенĕ). М. Хури 1959 çулта ку хайлавсене пурне те хăй хатĕрленĕ «Çырнисен пуххине» кĕртнĕ. Автор çырнă тетрадьрен çак асăннă юмахсене чăвашла лайăх ăнланман çын урăх хут çине куçарса çырнă, тĕрĕс мар çырнăран ăнланма йывăр е сиктерсе хăварнă вырăнсем тĕл пулаççĕ. Ку алçырăва 1917 çул тĕлĕнче хатĕрленĕ пулас: хайлавсене хăçан çырнине кăтартса пыман, çавăнпа ăна вĕсен урăх çĕрти тексчĕсемпе е вĕсем çинчен асăннисемпе усă курса палăртма, пичетлеме тивет. М. Хури çавăнпа хăй «редакцилесе» йĕркеленĕ пулнă.

2) Иккĕмĕш пайне «Переводы» тесе кăтартнă. Унта И. Крыловăн сакăр юптарăвĕ, А. Пушкинран «Уйăх», И. Никитинран «Ыйткалакансем», И. Паульсон хрестоматийĕнчен «Тĕлĕнмелле эмелçĕ», паллă мар автортан е авторсенчен «Пулас ял», «Хĕрлĕ çу уйăхĕ» ятсемпе куçарса хунă текстсем кĕреççĕ, вĕсем хушшинчех поэт хăй çырнă ултă сăвăпа халăхран çырса илнĕ юрăсем пур.

3) Г. Кореньковăн 1916—1931 çулсенче çыркаласа пынă кун кĕнеки. Илемлĕ хайлавсенчен унта «Хĕрарăм çинчен» текен сăвăланă юмах тата Л. Толстойран куçарнă кĕске текст («Пĕр йыш хĕрарăм» — ăçтан илнине тĕплĕн кăтартман).

Ку кĕнекене хатĕрленĕ чухне пичетре тухнă текстсемпе те усă курнă (хăш-пĕр хайлавăн ал çырăвĕ пачах упранса юлман). 1944 çулта И. Крыловăн «Баçньăсем» ятлă кĕнеки чăвашла тухнă, унта Кореньков куçарнă 8 юптару пичетленнĕ. Çав кĕнекене пичете хатĕрленĕ чух вĕсен текстне нумай улăштарнă.

Кореньков çырнисене пурне те пухса çитермен-ха, ку енĕпе шырав ĕçне малалла тăсмалла. Поэт Марфа Трубинана чылай

алçыру панӑ имӗш, анчах вӗсен шӑпи ним те паллӑ мар, автор вӗсене каялла тавӑрса паманшӑн питӗ пӑшӑрханнӑ-мӗн. Яков Ухсай тата ялти çынсем каланӑ тӑрӑх (сӑмахран, Пелагея Андреевна Сорокина), Кореньков пьесӑсем те çыркаланӑ, вӗсене ялти сцена çинче лартса панӑ. Вӑл Мария Ухсайпа пьесӑсем çыркаланӑ пек те тухать. Тӗрлемесри Н.А. Беловпа Г.В. Сахалкин пӗлтернӗ тӑрӑх, сӑвӑç вырӑсларан пӗчӗк пьесӑсем куçарканӑ. А. Иванов 1929 çулта «Канаш» хаçатра çырнӑ тӑрӑх, Кореньковӑн калавсемпе юмахсем те пулнӑ. Юмахсем шутне сӑвӑланӑ юмахсемех кӗме пултараççӗ, анчах калавӗсем мӗнлескерсем иккенӗ паллах мар. 1926 çулта букварь хыççӑн вуламалли иккӗмӗш кӗнекере пӗчӗк статьясем («Авӑн уйӑхӗнчи çанталӑк», «Ял Канашӗ», «Йывӑç-курӑк пурнӑçне сӑнани» т.ыт.те) пичетленнӗ («Çутталла» кӗнеке), вӗсем 1928 çулхи кӑларӑма та кӗнӗ. Калавсем тени çавсене пӗтереççӗ-и тен. Поэтӑн тӑван ялӗнчи А.О. Кудрявцев 1950 çулсенче Кореньковӑн пултарулӑх еткерӗпе çыравçӑ çинчен калакан асаилӳсем пухнӑ, халӗ вӗсен шӑпи паллӑ мар. Тӗрлемесри ытти çынсен аллинче Кореньковӑн темӗнле сӑввисем пурри çинчен сӑмах çӳретчӗ, халӗ вӗсен те шӑпи паллӑ мар. И.И. Одюкова поэтӑн пӗр сывӑх тӑванӗ тахçанах темӗнле алçырусем тата Улатӑрта тухнӑ текен темӗнле кӗнеке тупса панӑ. Паллӑ фольклорист хӑй сывӑ чухне вӗсене тӗпчевçӗсене леçсе параймарӗ те, вӗсем мӗнлескерсем иккенӗ çинчен урӑх нимех те калама çук. В.Я. Канюков та хайхи Улатӑрта тухнӑ кӗнеке çинчен асӑнкалатчӗ. Кӗнеке палатин картотекинче унашкал кӗнеке çинчен хыпар çук. 1927 çулхи пуш ӑн 1-мӗшӗнче «Канаш» хаçатра чӑнах та Степановпа Кореньков «Турра ӗненмен Укçини» кӗнеке кӑларнӑ текен хыпар тухнӑ. Анчах ку ятлӑ калава Степной Н. тата Казакевич çырнӑ-мӗн, ӑна чӑвашла П. Михайлов куçарнӑ, вӑл 1926 çулта уйрӑм кӗнекен Шупашкарта тухнӑ. «Канаш» хаçатри пӗлтерӳ йӑнӑш пулнӑ-тӑр. Ку ятпа урӑх кӗнеке тухни паллӑ пулмарӗ. Малашне Кореньков çырнисем татах та тупӑнма тивӗç.

Кореньков хӑш-пӗр хайлава хӑйне е сывӑх юлташӗсем валли тесе кӑна çырнӑ. Ун пеккисенче натурализмла, тирпейсӗр ӳкерчӗксем, сӑнарсем, пӗр енлӗ виçесӗр тиркевлӗ шухӑшсем тӗл пулаççӗ. Кун пек вырӑнсем сӑвӑсенче кӑна мар, юмах-халапра та пур. «Суйласа илнисем» хатӗрленӗ чухне пысӑк калӑплӑ тӗслӗхсенчен вӗсене кӑларса пӑрахнӑ, ун йышшисем уйрӑм сӑвӑсенче те пур (хӑш-пӗр вырӑнсене автор хӑйех кӗскетсе пичетлеме

паллă туса хăварнă). Асăннă сăлтавпа хăш-пĕр хайлава пачах та кĕртмен.

Библиографи хатĕрленĕ чухне Чăваш кĕнеке палатин картотекипе чылай усă курнă. Кореньков çырнисем ăçта-ăçта пичетленнине пĕтĕмпех тупса палăртнă теме çук-ха: сăмахран, вăл вĕрентӳпе ăспару ыйтăвĕсене хускатса çырнă статьясене хальлĕхе çителĕксĕр шута илнĕ. Ку вăл хăш-пĕр чухне кирлĕ хаçат-журнал е кĕнеке упранса юлайманран та килет. Поэтăн çырăвĕсем те хальлĕхе сахал тупăнчĕç.

Г.Кореньковăн пултарулăхĕнче сăвăлла çырнă хайлавсем тĕп вырăн йышăнаççĕ.Кĕнекене çавна шута илсе хатĕрленĕ. Поэтăн прозăлла çырнисем питĕ сахал. Вăл шутра унăн «Хурăн» ятлă сăвви. Кун кĕнекине çырусем, автобиографи тата ашшĕ вилĕмĕ çинчен каласа пани кĕреççĕ. «Хурăн» сăвă икĕ томлă «Революцичченхи чăваш литератури» кĕнекере пичетленнĕ. Асăннă ытти сăввисене «Сăмах» сборникра кăларма палăртнă. Г. Кореньков вырăсларан куçарнă хайлавсенчен чылайăшĕ асăннă икĕтомлăхра çапăннă. Çак сăлтавсене кура «Суйласа илнисем» тома çыравçăн прозăлла хайлавĕсемпе куçарăвĕсене кĕртмесĕр хăварнă.

Кĕнекепе усă курнă чухне акă мĕн-мĕн асра тытмалла. Г. Кореньков хăй çырнисене ятарласа пичете хатĕрленĕ алçыру çук. Упраннă хутсене хронологие пăхăнса вырнаçтарман, сайрахутра çырса е якатса пĕтермен вырăнсем тĕл пулаççĕ. Пичете панă текстсене ыттисенчен уйăрса хуман, тема тĕлĕшĕнчен пĕрпеклетмен. Малтанхи тапхăрта вăл хăй вăхăтĕнчи литература чĕлхине те пăхăнман, диалектизмсемпе виçесĕр усă курнă. Алçырусене пичете хатĕрленĕ чухне çаксене шута илме тиврĕ: сăмахран, «кăçан», «çих», «у» тенисене «хăçан», «çех», «вăл» тесе тӳрлетнĕ. Поэт хăй те вĕсене кайран тӳрлетсе çапла çырнă. Кĕнекере вăл çырса тултарман сăвă йĕркисене пăнчăсем лартса кăтартнă. Пичетре туллин усă курман сăмахсен пуçламăш саспаллине çеç пичетленĕ, ытти саспаллисем вырăнне пăнчăсем лартса кайнă. М.Хури 1958 çулта «Уйăх свидетель пулни» поэма ятне «Уйăх курнă ĕç» тесе каланă. Кĕнекере çав ятпа усă курни вырăнлăрах терĕмĕр.

Сăвăçăн йышлă вулакан валли çырман хайлавĕсене ку кăларăма кĕртмен. Çав шута вунна яхăн сăвă тата «Иванпа Хĕветле» поэма кĕреççĕ. Асăннă поэма хăй вăхăтĕнче «Аван-и?» хаçатра пичетленнĕ. Кĕнекене кĕртнĕ хайлавĕсенчи ытла сăпайсăр

каланă вырăнсене тăваткăл хăлăпкасем хушшине илсе 3 пăнчă лартса кăтартнă.

Г. Кореньковăн поэзи еткерне пĕтĕмпех пухса çитернĕ теме çук. М.Трубинана панă тетрадь, сăмахран, халĕ те тупăнмарĕ. Ăна поэт питĕ хакласа асилкеленĕ имĕш. Сăвăçăн тăван ялта хăш-пĕр çынсене паллă мар алçырусем упранни çинчен калакан хыпарсем те пур. Вулакансенчен çавăн йышши çĕнĕ алçырусене Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивне ярса пама ыйтатпăр. Хăй вăхăтĕнче интереслĕ те пуян материалсем пухса панăшăн Н.Г.Краснов профессора, кĕнекене пичете хатĕрлеме пулăшнăшăн В.А. Ендерова чунтан тав тăватпăр.

### Пулас ял

Малтанхи хут букварь хыççăн вуламалли «Çутталла» кĕнекен 1926 тата 1928 çулсенчи кăларăмĕсенче тухнă (75 с.).

Алçыру тăрăх пичетленет. — ЧПГĂИ ĂА, V, 799, 39 л. Ячĕ умĕн çапла çырса хунă: «Переводы для II книги «Çутталла». Ăçта тата хăçан çырнине çапла кăтартнă: «Чебоксары, 10/VI—26 г.». Вырăсла сăвви камăн пулнине кăтартман.

### Хĕрлĕ çу уйăхĕ

Алçыру тăрăх, малтанхи хут пичетленет. – ЧПГĂИ ĂА, V, 799, 39 л. Ăçта тата хăçан çырнине çапла кăтартнă: «Чебоксары, 2/VII—26 г.». Вырăсла сăвви камăн пулнине кăтартман. «Пулас ял» сăвă ал çырăвĕпе пĕрле тăрать, вĕсем умĕн çапла çырса хунă: «Переводы для II книги «Çутталла». Икĕ сăвви те пĕр авторăннах пулма та пултарать.

# БИБЛИОГРАФИ

## Г.А. Кореньков çинчен пичетленнĕ литература


Юман М. (Д.П. Петров). 1905-мĕш çул (Чăвашсен хушшинче пулнă ĕçсене асăнни) // Шупашкар, 1925. С. 117.

Иванов А. Ĕç паттăрĕ // Канаш. 1928, мартăн 25-мĕшĕ.

Г.А. Кореньков // Чăваш календарĕ — 1936, Шупашкар, 1935. Августăн 19-мĕш кунĕ.

[Денисов П.В.] Г.А. Кореньков // Чăваш календарĕ — 58. Шупашкар, 1957. С. 50—51.

Г.А. Кореньков // Чăваш календарĕ — 59. Шупашкар, 1958. С. 40.

Г.А. Кореньков // Чăваш календарĕ — 64. Шупашкар, 1963. С. 49.

Хури М. Паллă учитель // Коммунизм ялавĕ. 1959, мартăн 24-мĕшĕ.

Юрьев М. Гаврил Кореньков // Юрьев М. Чăваш писатĕлĕсем. Шупашкар, 1968. С. 163—164.

Юмарт Г. Гаврил Кореньков // Тăван Атăл. 1974. 3 №. С. 78—79.

Юмарт Г. Революцичченхи чăваш поэчĕ. Ялав (Куславкка районĕ). 1974, мартăн 23-мĕшĕ.

Юмарт Г. Поэзи шурăмпуçĕн шăпчăкĕсем (Турхан Яккăвĕпе Гаврил Кореньков çинчен) // Пионер сасси. 1974, мартăн 26-мĕшĕ.

Артемьев Ю. Гаврил Кореньков // Ялав. 1977. №. С. 31—32.

Иванов П. Паллă янташ ячĕпе // Ялав (Куславкка районĕ). 1979, мартăн 31-мĕшĕ.

Семенов П.И. «Хыпар» хаçат корреспонденчĕ // Ялав (Куславкка районĕ). 1979, апрелĕн 5-мĕшĕ.

Владимиров Е.В. И.А. Крылов и чувашская басня // Владимиров Е.В. Обретение традиций. Чебоксары, 1982. С. 70—71.

Ялгир П. Поэт-демократ // Коммунизм çути (Ульяновск обл., Чăнлă районхаçачĕ). 1984, мартăн 24-мĕшĕ; Ялав (Куславкка райхаçачĕ). 1984, апрелĕн 3-мĕшĕ; Пионер сасси. 1984, апрелĕн 7-мĕшĕ.

Полякова Ф. Торжественный вечер // Знамя (Козловка), 1984, 29 марта.

Юмарт Г. Гаврил Кореньков // Коммунизм ялавĕ, 1984, апрелĕн 5-мĕшĕ.

Салам Г. В честь юбилея поэта // Советская Чувашия. 1984, 13 апреля.

Федоров Г. Паллă учителе чысласа // Коммунизм ялавĕ. 1984, апрелĕн 20-мĕшĕ.

Сахалкин Г. Вăл мана вĕрентнĕ // Ялав (Куславкка райхаçачĕ). 1987, мартăн 28-мĕшĕ.

Юмарт Г. Малтанхи пичетленмен сăвăлла юмах-халап // Литература еткерĕ: 1991. Шупашкар, 1991. С. 82—86.

Юмарт Г. Гаврил Кореньков çырнисен пуххине хатĕрлеççĕ // Ялав (Куславкка райхаçачĕ). 1994, нарăсăн 26-мĕшĕ.

Юмарт Г. Çутă çурталлă сăвăç // Хыпар. 1994, акан 12-мĕшĕ.

Юмарт Г. «Йывăртарах та — утмалла!» // Илем. 1994, акан 22-мĕшĕ.

Абрамов В. «Çыраканни Кавĕрле, анчах çырни темлелле...» // Тантăш, 1994, акан 23-мĕшĕ.

Юмарт Г. Малти ретри сăвăç // Чăваш Наци Академийĕн ăслăлăх хыпарĕсем. 1994. 2 №. С. 171—176.

Абрамов В. Каринкке Кавĕрлин савăшу поэзийĕ // Тăван Атăл. 1994. 4 №. С. 69—72.

Абрамов В. Поэт — тĕлĕнтермĕш // Çилçунат. 1994. 6 №. С. 12—13.

### Г.А. Кореньков вĕрентӳ ыйтăвĕсемпе çырнă статьясем

Эпир ачасемпе «Чăвашсен автономиллĕ Социализмпа Канаш Республикĕ» ятлă комплекса вĕренсе тухни // Халăха вĕрентес ĕç. 1927. 4—5 №. С. 89—93.

Чăваш Статистика Управленийĕ 1927 çулта çаптарса кăларнă кĕнекесемпе тăват çул вĕренмелли шкулсенче усă курасси çинчен // Халăха вĕрентес ĕç. 1927. 7 №. С. 27—31.

«СССР мĕнле пулса кайни» ятпа IV группăра II триместрта вĕренмелли комплексăн планĕ // Халăха вĕрентес ĕç. 1928. 8 №. С. 10—11.

Пĕр сыпăклă шкулра иккĕмĕш группăсенче март—апрель—май уйăхĕсенче вырăс чĕлхипе вĕрентсе пырасси çинчен // Халăха вĕрентес ĕç. 1928. 9 №. С. 46—50.

Пĕр сыпăклă шкулсенче икĕ группăпа пĕр учитель ĕçлесси // Халăха вĕрентес ĕç. 1928. 10 №. С. 18—21.

Санитарипе гигиенăна ытти предметсемпе мĕнле çыхăнтарса пымалла // Халăха вĕрентес ĕç. 1932. 3—5 №. С. 20—22.

Арифметика учебникĕсем çинчен // Чăваш коммуни. 1938, ноябрĕн 15-мĕшĕ (Н.С. Попова учебникĕсенчен куçарса çырнă кĕнекесен — пайĕсем çинчен çырнă рецензи).

### Г.А. Кореньков çырнă тата куçарнă вĕрентӳ кĕнекисем

Санитарипе гигиена навыкĕсем. 1-мĕш сыпăкри шкулсем валли çырнă методика çырăвĕ. Шупашкар, 1929.

1-мĕш сыпăкри шкулсенче IV группăра математикăна вĕренмелли ĕç кĕнеки. Шупашкар, 1931 (хупл. çинче — 1932).

Березанская Е.С. Арифметика задачисемпе хăнăхтарусем. Вăтам шкул валли. 5-мĕш вĕренӳ çулĕ. Шупашкар, 1933. Г.А. Кореньков куçарнă.

Физкультура в школе I ступени. 1936 çулччен çырнă, пичетленсе тухман.

Учебник русского языка. Для 3-го класса чувашской начальной школы. Чебоксары, 1939—1947 çулсенчеултă кăларăмпа тухнă, 1947 çулта ăна çĕнетсе кăларнă.

### Ӳкерчĕксен ячĕсем

1. Гаврил Кореньков. 1904 ç.

2. Г.А. Кореньков хăйĕн ашшĕпе А.И. Кореньковпа пĕрле. 1894 ç. Шупашкар.

3. Г. Кореньковăн килти библиотекинчи кĕнеке титулĕ.

4. Г. Кореньковăн «чăваш» сăввин алçырăвĕ. 1907 çулхи сăвва 1914 çулта куçарса çырнă.

5. Тĕрлемесри икĕ класлă шкул çурчĕн планĕ. Г.А. Кореньков хатĕрленĕ. 1910 ç.

6. Тĕрлемесри икĕ класлă шкул çурчĕ. Поэт ашшĕ А.И. Кореньков ларттарнă.

7. А. Пушкинăн Г. Кореньков 1903 ç. куçарнă «Пулăçăпа пулă юмаххи» ал çырăвĕ. 1914 ç.

8. «Çутталла» кĕнеке хуплашки. Ăна хатĕрлеме Г. Кореньков та хутшăннă.

9. Г. Кореньков çырнă «Санитарипе гигиена навыкĕсем» кĕнеке титулĕ.

10. Г.А. Кореньков çырнă «Математикăна вĕренмелли ĕç кĕнеки» титулĕ.

11. Е.С. Березовский çырнă «Арифметикă задачисемпе хăнăхтарусем» кĕнеке титулĕ. Кĕнекене Г.А. Кореньков куçарнă.

12. Г.А. Кореньков. 1934 ç.

13. Поэт ашшĕ А.И. Кореньков ватлăхра. 1930 ç. тĕлĕ.

14. Г.А. Кореньковăн кил-йышĕ. 1935 ç.

15. Г. Кореньковăн автобиографи сыпăкĕ. 1936 ç.

16. Г. Кореньков Тĕрлемесри вăтам шкулта вĕренекенсем хушшинче. 1937 ç.

17. Г.А. Кореньков çырнă «Учебник русского языка» кĕнеке титулĕ. 1939 ç.

18. Г.А. Кореньков Тĕрлемесри вăтам шкулта вĕрентекенсем хушшинче. 1940 ç.

19. И.А. Крыловăн чăвашла тухнă «Баснĕсем» кĕнеки, 1944 ç. Унта Г. Кореньков куçарнă юптарусем пичетленнĕ.

20. Г.А. Кореньков тупăкра. 1949 ç.

22. Поэт пурăннă çурт. Тĕрлемес.

23. Поэтăн ывăлĕ Борис Гаврилович Кореньков.

# ТУПМАЛЛИ

Редактортан.......................................................................7
Г. Юмарт. Малти ретри сăвăç.................................................9
П о э з и
С ă в ă с е м
Пирĕн ял...........................................................................36
«Вăрман кайса курам-ха...».................................................37
Сантăр киле кайсан............................................................37
Çуркунне...........................................................................38
Çуркуннехи çĕр .................................................................39
Хăрушла çумăр...................................................................40
«Нумай усă тăван эс...».......................................................40
Ўпке..................................................................................41
«Усал саспа çил шăхрать...»................................................41
«Санăн таса куçусем...».......................................................42
«Пĕлĕт çинчи çăлтăрсем...»..................................................42
«Мана эсĕ пуринчен...»........................................................44
«Ытла нумай сар чечек...»....................................................44
«Карт суннине ĕненсен...»....................................................45
Çĕрлехи кĕлĕрен.................................................................46
«Эпир сана ку таран...».......................................................46
«Ку тĕнчере никам та...»......................................................47
«Халĕ эпир пĕр-пĕрне...»......................................................48
Ĕçлеме чĕнни.....................................................................49
«Эпĕ сана пăхап та...».........................................................49
Çумăр................................................................................50
«Санăн сăнна пăхсассăн...»...................................................51
«Хам аллăмпа хама хам...»....................................................52
Чей çырли..........................................................................53
Юлташа.............................................................................54
«Пур енчен те эс аван...».....................................................54
«Эпĕ сана ку таран...».........................................................55
«Эп сан патна нихçан та...»...................................................56
«Эпир тунă çылăха...»..........................................................56
Тăлăх арăм.........................................................................57
Вăрă арăм юрри...................................................................58
«Эх, Турăçăм, Турăçăм!..».....................................................60

Авăн пăтти...61
«Ку таранччен ман куçсем...»...62
«Ялан сана астуса...»...62
«Ăмма эсĕ вăл тери...»...63
«Ангел сăнлă №-е...»...64
«Винават эп, ан çиллен...»...65
«Ача-пчана пĕр сăмах...»...66
«Ку яхăнта темшĕн ман...»...67
«Пули-пулми этемпе...»...67
«Тем пек лайăх юлташах...»...68
«Мĕншĕн эсĕ ман çине...»...69
«Пурна киле эс те, тен...»...70
«Çыннăн пĕтĕм пурнăçĕ...»...70
«Шалккă сана, №-нĕ!..»...71
«Ĕлĕк сире эпĕ те...»...72
«Пуçра шухăш нумай та...» /I/...73
«Вун ик апостол хушшинчен...»...73
«Пуçра шухăш нумай та» /II/...74
«Каçхи пĕлĕт тап-таса...»...75
Чăваш пурăнăçĕ...75
Чăваш...77
«Мĕншĕн пирĕн маларах...»...79
Çĕрĕ...80
«Тин çеç кайăк вăрмантан...»...81
«Асту, ача, пахчуна...»...82
«Мĕншĕн эсĕ ман куçран...»...82
[Çинçе Салтак Палванне]...83
[Ваккатланса çӳрекене]...85
«Мĕн тăвас ман ют çынпа»...86
«Нумай çĕмĕрт пахчара...»...87
«Манман-и-ха, №-е...»... 88
«Мĕншĕн эсĕ вăл тери...»...89
«Пите мĕнпе çĕлесе...»...90
«Çапах эпир пĕр-пĕрне...»...91
«Самай лайăх вырăнта...»...92
«Мĕншĕн эсĕ, Кĕркури...»...94
«Ларар халĕ юрласа...»...94
«Пĕтĕм лайăх кайăк та...»...95
«Нумайранпа эп сана...»...95
[Мĕн пур тăван-тантăша]...96
«Çук, пулмасть пуль ман тупса...»...98
Юман юрри...98
«Мĕншĕн хăран эс манран...»...101
Вĕрентекен пурнăçĕ...102
«Мĕне сиссе кашни кун...»...103
Пурăнăç...103
«Сана курсан эп татах...»...104
«Сан пуçунти шухăшна...»...105
«Ай-яй, эпир ĕлĕкрех...»...106
«Кашни сана ачашлать...»...107

«Май çук аван пурнан эс...» 107
Çěнě çул 109
«Хěрарăмăн вăрçасси...» 110
«Каллах ěнтě пěр-пěччен...» 110
«Чăнах та-мěн Тěрлемес...» 111
«Иртет ěмěр пěр-пěччен...» 111
«Эс çеç мана йăпатса...» 112
«Манăн Сире мухтама...» 112
[Плешйăрана] 113
«Хăш чух пěлěт хушшинчен...» 116
«Сана чунтан савнăран...» 118
«Ěмěр сана манас çук...» 119
«Ах тур, епле пăрахса...» 123
Кěлě 124
Чўрече (А. Пушкин майлă) 125
Юлташсене (А. Пушкин майлă) 126
«Манни, ача?..» 127
«Ěлěк мана та чунтан юрататтăн...» 127
«Çилленсе мар, вăрçса мар...» 128
Хусах 129
«Савнă тусăм, эсě халь...» 131
Юрă 131
«Эпě сана ку таран...» 132
«Ан выля!» 132
«Киккирикик сар автан...» 133
Пулас ял 135
Хěрлě çу уйăхě 137

Ю м а х с е м п е п о э м ă с е м
Чăвашпа тутар 138
(Ăслă Иван Петěрě) 141
Хěре уйăх илни 143
Эсрелě 144
Матка пулнă упăшка 148
Пěр пек пултăр 152
Уйăх курнă ěç 157
Ăс укçана çěнтерет 161
Хěрарăм çинчен 166
Ашшě пилě 167

Асăрхаттарусем 174
Библиографи 181
Ўкерчěксен ячěсем 183

Чувашский государственный институт
гуманитарных наук

**Гаврил КОРЕНЬКОВ**

# ÇЫРНИСЕН ПУХХИ

# ИЗБРАННОЕ

На чувашском языке

Составитель, автор предисловия
и комментариев *Г.Ф. Юмарт*

Художественный редактор *А.А. Трофимов*
Корректор *Г.И. Алимасова*
Компьютерная верстка *Н.И. Никифоровой*

Подписано к печати 31.05.2010. Формат 60x90 1/16
Гарнитура типа Times. Печать оперативная. Физ.печ.л. 11,75.
Тираж 150 экз. Заказ №24.

Отпечатано в типографии Чувашского государственного
института гуманитарных наук
428015, Чебоксары, Московский пр., 29/I

120.06